ЛКЗ К 84.09(=ЧУВ)
Д64
Ч-43239

В. Долгов

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПОЭЧĔ К. В. ИВАНОВ

Национальная библиотека ЧР
4-043239



ЛК3 К83.39(=чув)6-8
Д64

В. Долгов

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПОЭЧĔ
К. В. ИВАНОВ

иккемеш каларăм

А. Е. Алгана
ырă сунса, хисепле
парятăп.
Автор В. Долгов.
10.XI.61

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1961

...СТВЕН... ЭКЗ.
Ходорченко В.А.
И-43239
Национ... ...КА

К. В. ИВАНОВ ПУЛТАРУЛĂХĔН ХĂШПĔР ЫЙТĂВĔСЕМ ТАВРА

Пĕррремĕш кăларăм умсăмахĕ

Çак кĕнекене пухса кĕртнĕ статьясене автор тĕрлĕ вăхăтра çырнă. Хăшпĕр статьисене 1940 çулта, К. В. Иванов çуралнăранпа аллă çул тултарнине уявланă кунсенче çырса, чăваш хаçачĕсемпе журналĕсенче пичетлесе кăларнă. Теприсене 1948—1950 çулсенче çырнă.

«Чăваш халăх поэчĕ» кĕнекери статьясенче пĕр ыйтăва ответ пама тăрăшнă: мĕншĕн пирĕн халăх К. В. Иванова ырă кăмăлпа асăнать, чунтан юратать, унăн ятне хăйĕн чĕринче усрать?

Кĕнекери статьясенче кашнинче тенĕ пекех пĕр шухăша палăртса çырнă: çакă вăл — К. В. Иванов халăх поэчĕ пулни çинчен калакан ыйту. К. В. Иванов произведенийĕсем пурте тенĕ пекех халăх пултарулăхĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Анчах вĕсенче кашнинчех авторăн хăйĕн творчествăллă сăнĕ палăрать. Вĕсем пĕр вăхăтрах халăх произведенийĕсем пек те, поэт произведенийĕсем пек те. Мĕншĕн тесен Иванов вĕсене халăх шухăш-кăмăлне, интересĕсене витĕр курса, лайăх пĕлсе, вĕсене яланах асра тытса, ним уйрăлми пĕтĕçтерсе çырнă.

Хăш чухне çапла каланине илтме пулать: «К. В. Ивановăн, халăх юррисен виçипе çырнăскерĕн, произведенийĕсем пирĕн кăмăла кайса çитмеççĕ. Вĕсен форми — примитивлă, ансат форма» теççĕ.

Ку шухăш пачах тĕрĕс мар.

«Нарспие» унăн «форми» классикла произведени пулма пĕрре те кансĕрлемест, тарăн шухăшсем калама автора чармасть,— К. В. Иванов, ун чухнехи прогрессивлă идейăсене

тытса пырса, халăх пултарулăхĕн формипе усă курса, хăватлă произведенисем çырнă. Çапла ĕнтĕ, пысăк та тарăн шухăшлă произведенисем, вĕсене «ансат» виçепе çырнă пулин те, халăх пурнăçне тĕрĕс кăтартнине пула, хăйсен вăйлă сăнлăхĕсене пула паян кун та лайăх янăраççĕ, хăйсен хакне çухатмаççĕ.

К. В. Иванов произведенийĕсен форми çинчен калас пулсан, вĕсен форми «примитивлă та ансат» теме çук. Иванов произведенийĕсем çав тери «çăмăл», «ансат» произведенисем пулсан, мĕншĕн-ха литература тĕпчевçисем, критиксем, историксем Иванов творчествинчи хăшпĕр ыйтусем пирки çаплах тавлашаççĕ? Мĕншĕн-ха калаçса татăлаймаççĕ? К. В. Иванов «Нарспие» е тепĕр произведение «çăмăл формăпа» çырнă тени вăл произведенин формипе унăн сăввин виçине пăтраштарнине кăтартать. Форма — вăл илемлĕ произведение пултармалли майсемпе мелсен пĕтĕмлĕхĕ (совокупность) пулсан, вăл — илемлĕ произведенин шалти йĕрки, тытăмĕ, организацийĕ, структури пулсан, унăн содержанине усракан, пурăнтаракан тулашри палăрăм, тулашри сăнлăх пулсан,— Иванов произведенийĕсен форми «примитивлă» та мар, «ансат» та мар. Вĕсен содержанийĕ те, форми те вăйлă, чаплă. Произведенин форми пулмасан, содержанийĕ те пулмасть, тепĕр майлă та: содержанисĕр форма пулмасть. Вĕсем пĕр-пĕринпе ним уйрăлми çыхăнса, пĕрлешсе тăраççĕ. Кун пирки В. Г. Белинский питĕ аван каланă: «Форма содержание палăртаканни пулсан, вăл содержанипе çав тери тачă çыхăнса тăрать, ăна содержаниран уйăрас тени содержанине пĕтернине пĕлтерет; тата çапла та: формăна содержаниран уйăрас тени формăна пĕтернине пĕлтерет»[1].

Чăн та, К. В. Иванов сăввисен виçи — ансат виçе, çичĕ сыпăкран тăракан виçе, силлабика. Анчах унăн произведенийĕсен форми пĕрре те «ансат» мар. Иванов произведенийĕсен содержанийĕнче, вĕсен формипе содержанийĕнче,

---

[1] В. Г. Белинский, Собрание сочинений в трех томах, т. 3, стр. 138.

Формăпа содержани пирки тавлашакансем çинчен вырăссен паллă скульпторĕ М. М. Антокольский çакăн пек каланă: «Когда спорят: что лучше в искусстве —содержание или форма —для меня это все равно, как если бы спросили: «Что лучше: левый глаз или же правая нога?» И то и другое нехорошо, когда недостает у иного организма. Форма без содержания и содержание без формы одинаково не хороши; превосходно, когда они оба вместе».

унӑн произведенийӗсен формипе содержанийӗн пӗрлӗхӗнче тӗлӗнмелле илемлӗх, ӑсталӑх, талант курӑнса тӑрать.

К. В. Иванов произведенийӗсем — чӑннипех те вилӗмсӗр произведенисем. Вӗсене вуласа, эпир чӑваш халӑхӗн иртнӗ саманари пурнӑҫне, йӑлисене лайӑхрах пӗлетпӗр, вӗсем пире истори ыйтӑвӗсене тӗплӗрех ӑнланса илме те пулӑшаҫҫӗ. К. В. Иванов произведенийӗсенче эпир чӑваш халӑхӗн революцичченхи шухӑш-кӑмӑлне, ӑс-тӑнне, ӗмӗчӗсене куратпӑр. Халӑх кӑмӑлӗ — ырӑ кӑмӑл, халӑх ӗмӗчӗ — ҫутӑ ӗмӗт. Ҫак кӑмӑлпа ӗмӗт пирӗн поэтӑн творчествине вӑйхӑват панӑ, поэтӑн пархатарлӑ шухӑшӗсене хаяр саманара та сӳнме паман.

К. В. Иванов произведенийӗсене пирӗн вӑтам шкулсенче вӗренеҫҫӗ. Вӗсене вӗреннӗ чухне ҫак кӗнекери статьясем те учительсене, шкул ачисене хӑшпӗр таран пулӑшасса шанас килет.

1952

Иккӗмӗш кӑларӑм умсӑмахӗ

«Чӑваш халӑх поэчӗ» кӗнеке 1952 ҫулта, сахал теме ҫук, пилӗк пин экземпляр тухнӑччӗ. Унтанпа сакӑр ҫул иртсе кайрӗ. Пирӗн аслӑ поэтӑмӑр ҫинчен ҫыракансем тата та пулчӗҫ. Эпӗ те чӑваш культуринче ҫиҫсе тӑракан Иванов ятне пӗрмаях асра тытрӑм, унӑн пултарулӑхӗ пирки шухӑшларӑм. Кӗнеке халӑхра хӑвӑрт сарӑлни, вулакансен ҫырӑвӗсем—ҫаксем пурте мана хаваслантарсах ӗҫлеме пулӑшса пычӗҫ. Кӗнеке сутас пирки чунтан тӑрӑшса ӗҫлекенсем те мана К. В. Иванов ҫинчен ҫырнӑ статьясен пуххине тепӗр хут кӑларма сӗнсе каларӗҫ. Мана, кӗнеке авторне, ҫакӑ та савӑнтарчӗ: 1959 ҫулта чӑваш халӑх поэчӗ Яков Гаврилович Ухсай, Иванов пултарулӑхне тӗпчес тӗлӗшпе нумай ӗҫленӗ ҫын, районсенче ҫӳренӗ вӑхӑтра, издательствӑна ҫыру ҫырса янӑ, кӗнеке ялти вулакансене, ҫамрӑккисене те, ваттисене те, кӑмӑла кайни ҫинчен пӗлтернӗ май, кӗнекене тепӗр хут кӑлармa сӗннӗ. Константин Иванов хамӑр наци культуринче кӑна питӗрӗнсе тӑмасть, унӑн ячӗ пӗтӗм Совет Ҫӗршывӗнче тата социализм тӑвакан ытти ҫӗршывсенче те паллӑ. Аслӑ вырӑс халӑхӗн литературӑпа чӗлхе ӑстисем А. А. Фадеевпа А. Т. Твардовский пирӗн вилӗмсӗр поэтӑмӑра пысӑк хак пани мана пушшех те ҫунатлантарса ячӗ.

Кӗнекен иккӗмӗш каларӑмӗ «Ч ӑ в а ш х а л ӑ х п о э ч ӗ К. В. И в а н о в» ятпа тухать.

Пирӗн литература тӗпчевҫисем чӑвашсен революцичченхи литературине тӗпчесе вӗренес, уйрӑмах К. В. Ивановӑн пултарулӑхне тӗпчес, поэтӑн ӑсталӑхне, шухӑшӗсене ҫутатса парас тӗлӗшпе пысӑк утӑмсем турӗҫ. Анчах ҫакӑ вӑл ку вӑхӑтчен мӗн тунипе ҫырлахса лармаллине, чарӑнмаллине пӗлтермест: тӑван литература историне, уйрӑм писательсен пултарулӑхне малашне те тӗпчемелле, революцичченхи тапхӑра ҫеҫ мар, хальхи тапхӑра та тимлӗн тӗпчесе вӗренмелле.

К. В. Иванов пултарулӑхӗ, унӑн уйрӑм произведенийӗсем, пуринчен ытла «Нарспи» поэма, халӗ те литература тӗпчевҫисене интереслентерет. Ку ҫеҫ те мар-ха: литература тӗпчевҫисем хӑшпӗр ыйтусем тӑрӑх ҫаплах тавлашаҫҫӗ, ҫаплах калаҫса таталаймаҫҫӗ.

Паллах, эпир литературӑри тавлашусене хирӗҫ мар. Литературӑра, уйрӑмах литература критикипе литература тӗпчевӗнче, теорилле тавлашусем иртнӗ вӑхӑтра та пулнӑ, халӗ те пулаҫҫӗ, малашне те пулӗҫ. Ку вӑл литература сывӑ пурнӑҫпа пурӑнни ҫинчен, теорилле шухӑшсем ӗҫлени ҫинчен калать. Ҫапах та, тавлашура, дискуссире, калаҫса таталма пулать пулин те, ӗнер пӗр майлӑ, паян тепӗр майлӑ калакансем тӗл пулаҫҫӗ пулсан,— ку вара тӗлӗнтерет те, шухӑшлаттарать те. Ҫавӑнпа ирӗксӗрех: «Кун пекки мӗншӗн пулатьши?» тетӗн.

Хӗрӗхмӗш ҫулсенче К. В. Ивановӑн чӑваш литературинчи вырӑнӗпе ролӗ пирки ҫакӑн пек шухӑш ҫирӗпленнӗччӗ: Иванов поэзийӗ тата унӑн чӗлхи чӑвашсен илемлӗ литературипе литература чӗлхине аталантарас ӗҫре тӗп никӗсе вырнаҫса юлнӑ, ҫавӑнпа та эпир К. В. Иванова чӑвашсен илемлӗ литературипе литература чӗлхин никӗсне хываканӗ, вӗсене малалла аталантараканӗ тетпӗр.

Халӗ хӑшпӗр тӗпчевҫӗсемпе критиксем хӗрӗхмӗш ҫулсенче тӗпчесе ҫирӗплетнӗ, калаҫса таталнӑ шухӑша тӗрӗс мар, теҫҫӗ. Вӗсен шухӑшӗ ҫакӑн пек: чӑваш литературипе литература чӗлхи К. В. Иванов ӗҫлеме тытӑниччен пулнӑ; И. Я. Яковлев «Букварӗсенче» калавсемпе сӑвӑсем пичетленнӗ; вӗсене пурне те литература чӗлхипе ҫырнӑ; К. В. Ивановччен пурӑннӑ писательсем — И. Я. Яковлев ҫеҫ мар, ыттисем те (Игнатий Иванов, М. Ф. Федоров тата ыт. те)—«Нарспи» авторӗн чӗлхи пек чӗлхепе ҫырнӑ тата ыт. те. Ҫаксене асра тытса, вӗсем ҫапла калаҫҫӗ: чӑваш

литературипе литература чĕлхине И. Я. Яковлев пуçарса янă, теççĕ.

Пирĕн шутпа, çак шухăшпа килĕшме çук. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен Ивановчченхи писательсемпе сăвăçсем, вăл шутра И. Я. Яковлев хăй те, К. В. Иванов пек пĕтĕм халăх ăс-тăнне пуянлатакан, пĕтĕм халăх кăмăлне çĕклентерекен, чун хавалне савăнтаракан произведенисем çырайман-ха, вĕсем хăйсен произведенийĕсене пур çĕрти чăваш чĕлхипе, чăваш сăмахĕсемпе анлăн усă курса çырайман-ха. Ивановчченхи писательсем, тĕрĕссипе каласан, чăваш литературипе литература чĕлхи никĕсĕн малтанхи кирпĕчĕсене çеç хывнă, пулас писательсен ĕçĕсене хăшпĕр таран çăмăллатнă. И. Я. Яковлева илес пулсан, çакна калас пулать: вăл чăваш алфавитне туса хатĕрленĕ, çырулăхне йĕркелесе янă, хăйĕн «Букварĕсемпе» халăх патне çыру чĕлхине çитернĕ, халăха çыру чĕлхипе хăнăхтарнă, литературăн малтанхи тĕслĕхĕсене панă. Çапах та унăн произведенийĕсем чăваш литературин малтанхи тĕслĕхĕсем çеç пулнă-ха. Паллах, чăваш литературипе чĕлхине И. Я. Яковлев калавĕсем те, унăн «Сармантейĕ» те кирлĕ пулнă, анчах пирĕн литературăна, унăн чĕлхине чăннипех пуçарса яма «Сармантей» халапран ытларах Ивановăн «Нарспи» поэми, «Хыпар» хаçат кирлĕ пулнă, Н. В. Шупуççынни, Тайăр Тимкки, М. Ф. Акимов, Н. И. Полоруссов-Шелепи тата ыттисен произведенийĕсем кирлĕ пулнă. Çав ĕçе тума тата М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Л. Н. Толстой произведенийĕсене чăвашла куçарма тивнĕ. Çак тарăн процесра К. В. Иванов ĕçĕ, унăн вырăнĕпе ролĕ калама çук пысăк, калама çук чаплă.

К. В. Иванов чăваш литературишĕн, чăваш литератури чĕлхишĕн мĕн тери пысăк ĕç тунине уççăнрах кăтартса парас тесе, эпир кунта пĕр танлаштарупа усă курасшăн. Вăрçăра наступлени пуçарса ярас умĕн артиллерипе усă кураççĕ, çапла вара артиллери вучĕпе усă курса, наступлени тума çул уçаççĕ. К. В. Иванов пултарулăхĕ, унăн «Нарспийĕ», юмахĕсем, вырăсларан куçарнисем, танлаштарса калас-тăк, чăвашсен илемлĕ литературишĕн, чăваш литература чĕлхишĕн артиллери вырăнне пулнă теме юрать. К. В. Иванов чăваш чĕлхипе те чаплă та хăватлă произведенисем çырма май пуррине кăтартса панă, чăваш чĕлхин пуянлăхне уçса кăтартнă.

Вырăссем А. С. Пушкина вырăссен çĕнĕ литературине, литература чĕлхине пуçарса яраканĕ вырăнне хурса хаклаç-

çĕ. Эпир те К. В. Иванова чăвашсен реализмла литературине, илемлĕ литература чĕлхине пуçарса яраканĕ тесе хаклатпăр [1].

Çакăн пек каланине хирĕçлесе, хăшĕ-пĕрисем: «Иванов чăвашсен илемлĕ литератури чĕлхине пуçарса яраканĕ тесе калакансен шучĕпе Ивановчен чăваш чĕлхи пулман пек пулса тухать, чăвашсем унччен чĕлхесĕрех пурăнни мĕн», теççĕ. Паллах, пулнă, чăваш чĕлхи чăваш халăхĕ пуçланса кайнипе, аталаннипе пуçланса кайнă, аталаннă. Кайрантарахпа вара, халăх аталанăвĕ çӳлĕрех пусăма çитсен, вăл литература чĕлхи пулса тăнă.

А. С. Пушкин — аслă нацилле поэт. Унăн манăçа тухми произведнийĕсем этемлĕх культурине пуянлатнă, вырăс халăхĕн, этемлĕхĕн художествăпа илемлĕх тĕлĕшĕнчи аталанăвĕнче пысăк утăм пулса тăраççĕ. Пушкин пултарулăхĕнче аслă халăх таланчĕ, вăй-хăвачĕ, хавхаланăвĕ палăрнă.

«Пушкин ятне аса илсенех, вырăссен нацилле поэчĕ çинчен шухăшлама тытăнатăн,— тесе çырнă Н. В. Гоголь.— Чăнах та, пирĕн поэтсенчен нихăшĕ те унтан малта тăмаççĕ, наци поэчĕ ятне илтме пултараймаççĕ; ку тивĕç Пушкиншăн кăна вырăнлă. Унăн пултарулăхĕнче... пирĕн чĕлхен мĕнпур пуянлăхĕ, вăйĕпе меллĕхĕ пĕтĕçсе тăрать. Чĕлхе пултарулăхне вăл никамран та ытларах малалла сарса янă, унăн пĕтĕм анлăшне кăтартса панă. Пушкин — пысăкран та пысăк явлени, тен, вăл — вырăс ăс-хакăлĕн пĕртен-пĕр явленийĕ; вăл — аталанса пыракан вырăс çынни; ун пекки, тен, тепĕр икçĕр çултан çеç пулма пултарĕ. Пушкинра вырăс çĕршывĕ, вырăс чунĕ, вырăс чĕлхи, вырăс кăмăлĕ тап-тасан курăнса тăрать, оптика кĕленчин çаврашки çийĕн-

---

[1] Ку шухăш 1940 çултан тытăнса чăваш литературинче çеç мар, пĕтĕм вырăс литературинче те сарăлнă. Акă, сăмахран, А. А. Фадеев хăйĕн 1940 çулта çырнă пĕр çырăвĕнче çакăн пек каланă:

«До сего дня в чувашской печати существует вредная путаница в общественно-политической оценке первой чувашской школы в г. Симбирске, где в течение 50 лет работал над просвещением чувашей И. Я. Яковлев... и где учился и написал свои первые произведения основоположник и классик чувашской художественной литературы».

«Нарспи» поэмăн Борис Иринин куçарнă, А. Твардовский редакциленĕ кăларăмĕн умсăмахĕнче çакăн пек çырнă: «Поэзия К. В. Иванова и язык его произведений легли в основу развития чувашской литературы и чувашского литературного языка, а поэма «Нарспи» является важнейшей вехой в истории развития чувашской художественной литературы, которая сейчас расцветает в Чувашской автономной советской республике».

че куранакан çĕр пичĕ пек куранса тарать. Унăн пурнăçĕ те пĕтĕмпех вырăсла пурнăç..»[1].

Константин Иванов çинчен те Гоголь сăмахĕсем пек сăмахсемпе калас килет: вăл чăваш халăхĕшĕн Пушкин пек поэт пулнă, унăн ятне аса илсенех, чăвашсен малтанхи нацилле поэчĕ çинчен шухăшлама тытăнатăн!

* * *

Хăшĕсем халĕ те-ха К. В. Иванова буржуалла демократ е буржуалла либерал вырăнне хураççĕ. Çак тĕрĕс мар шухăша хăшпĕр критиксем 1935 çулта, К. В. Иванов çуралнăранпа 40 çул тултарнине палăртнă чухне, хăйсен доклачĕсемпе статьисенче каланăччĕ. Анчах çав халапа халĕ вĕсен авторĕсем мар, урăххисем сарма пăхаççĕ. Вĕсен шучĕпе, К. В. Иванова тăван халăх мар, 1905—1907 çулсенчи революци самани мар, Францире XVIII ĕмĕр вĕçĕнче пулса иртнĕ буржуалла революци çыннисем хавхалантарнă; «чаплă французсенчен юлнă «тăванлăх», «танлăх», «ирĕклĕх» унăн «чун хавалне çĕклентернĕ, ăс-пуçне çулăмпа хĕртнĕ» имĕш. Пирĕн шутпа, Иванов çинчен çавăн пек çырни историлле чăнлăхпа килĕшсе тăмасть, мĕншĕн тесен Ивановăн чун хавалĕ, ăс-пуçĕ Франціри буржуалла революци лозунгĕсемпе, идейисемпе чăмăртанса йĕркеленнĕ пулсан, вăл буржуалла либерал шайĕнче çеç тăма пултарнă. Анчах, тĕрĕссипе илсен, «Нарспи» авторĕн шухăшĕсем либералсен шухăшĕсене хирĕç пынă. Урăхла пулнă пулсан, вăл халăх поэчĕ пулма пултарайман пулĕччĕ, ăна хăйне те халăх йышăнман пулĕччĕ. Паллах, критик асăннă «тăванлăх», «танлăх», «ирĕклĕх» лозунгсем феодализма хирĕç кĕрешнĕ саманара, буржуалла революци задачисем пурнăçа кĕрсе пынă вăхăтра прогрессивлă ĕçсем тунă, анчах эпир çав лозунгсен Франціри буржуалла революци панă содержанине хапăл тумастпăр, эпир вĕсене, В. И. Ленин калашле, вĕсем ĕççыннисен, рабочи класăн интересĕсене тивĕçтернипе тивĕçтерменни енчен илсе пăхатпăр[2].

---

[1] Н. В. Гоголь. Несколько слов о Пушкине. Сборник «А. С. Пушкин в русской критике». Изд. 2-е. ГИХЛ, 1953, стр. 41.

[2] Ку ыйтăва эпир «К. В. Ивановпа «чаплă французсем» çинчен» ятлă статьяра хускатрăмăр. Паллах, «тăванлăх», «танлăх», «ирĕклĕх» лозунгсем К. В. Ивановăн пурнăçĕпе те, пултарулăхĕпе те тӳрремĕн çыхăнса тăмаççĕ. Анчах хăшпĕр «критикла шухăшлакан» юлташсем Ивановăн мировоззренине çав лозунгсемпе çыхăнтарма хăтланнă пирки эпир хамăрăн статьяна çак кĕнекене кĕртетпĕр (127—144 страницăсене пăхăр).

Теприсем, Иванова буржуалла либерал тума тăрăшакансен шухăшне тытса пырса, çакăн пек каласси патнех çитсе тăраççĕ: К. В. Иванов — пуян çын ывăлĕ, вăл пуянсен шухăш-кăмăлне палăртнă, кулаксен поэчĕ пулнă, теççĕ.

Анчах вĕсем темшĕн çакăн пирки шухăшласа пăхасшăн мар: Константин Иванов Михетерсемпе Тăхтамансен ирсĕр ĕçĕсене питленĕ, чухăн Сетнерĕн паттăрлăхне, Нарспин хăюлăхне, ăсне мухтанă, пуянсен, кулаксен пусмăрне, укçапала эрехрен тухса тăракан ирсĕрлĕхе чун-чĕререн курайман.

* * *

Юлашки вăхăтчен К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмипе юмахĕсем çинчен пĕрисем: автор вĕсене хăйĕн ятне кăтартмасăр пичетлесе кăларнă, тетчĕç; теприсем: вĕсене халăх хушшинче çырса илнĕ произведенисем тесе кăларнă, тетчĕç.

Пирĕн шутпа, куҫта пĕрремĕш шухăшĕ мар, иккĕмĕш шухăшĕ чăнлăхпа килĕшсе тăрать. 1908 çулти октябрĕн 28-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе — ноябрĕн 10-мĕшĕнче) пичетленсе тухнă «Чăваш халлапĕсем» кĕнеке умсăмахĕнче вĕсене: «К. Иванов Белебей уездĕнче пухса йĕркелесе çырнă» («Записаны в Белебейском уезде и изложены К. Ивановым»), тенĕ.

Кĕнеке умсăмахне И. Я. Яковлев çырнă. Вăл ăна К. Иванов произведенийĕсен пĕлтерĕшне пĕчĕклетес тесе мар, патша цензурине улталаса, чаплă произведенисене мĕнле те пулин çут тĕнчене кăларас, тăван халăх патне çитерес тесе çырнă. Кĕнекене «Чăваш халлапĕсем» тесе ят панă, анчах унта, чăннипе илсен, юмахсен картине шăнăçман произведенисем те пичетленнĕ. Кĕнекене кĕртнĕ произведенисем, вĕсене хăшпĕр таран халăх пултарулăхĕпе усă курса çырнă пулин те, оригиналлă произведенисем пулнă. Вĕсенче чăвашсен малтанхи чăн-чăн поэчĕсен (М. Ф. Федоровăн, К. В. Ивановăн, Н. В. Васильевăн) таланчĕ сисĕнсе тăрать, вĕсем çавăн чухне чăвашсен илемлĕ литератури пуçланса кайни, вăй илме тытăнни çинчен каласçĕ, чăваш халăхĕн таланчĕ литература енĕпе те аталанса пынине кăтартса параççĕ. Çав произведенисем хушшинче чи вăйли, чи илемли «Нарспи» пулнă. Çавăнпа ĕнтĕ вăл чăваш çыннисен ăс-пуçне уçас, эстетика туйăмĕсене йĕркелес тĕлĕшпе калама çук пысăк вырăн йышăннă. Çавăнпа ĕнтĕ унăн пĕлтерĕшĕ халĕ

те чакма пĕлмест: «Нарспи» социализм саманинче чăваш культури чиккисенчен тухса ытти халăхсем патне çитрĕ, халăхсен пĕтĕмĕшле культурине кĕрсе вырнаçрĕ.

* *
*

«Чăваш халăх поэчĕ К. В. Иванов» кĕнекери статьясене кĕнекен иккĕмĕш кăларăмне хатĕрленĕ чухне çĕнĕрен пăхса тухнă. Пĕрремĕш кăларăм пирки хаçат-журналсенче çырнă статьясемпе рецензисенче кăтартса панисене, сĕнӳсене шута илнĕ. Иккĕмĕш кăларăма çĕнĕрен икĕ статья («К. В. Иванован истори тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем пирки пĕр-ик сăмах», «К. В. Иванов шухăшĕсем пирки калаçнă май») кĕртнĕ. Кĕнеке авторĕ Я. Г. Ухсай, П. В. Денисов, И. Д. Кузнецов, Г. М. Титов юлташсене ырă канашсем панăшăн, литературăпа историн хăшпĕр ыйтăвĕсене лайăхрах ăнланса илме пулăшнăшăн чун-чĕререн тав тăвать.

Чăваш литератури, патша саманин тĕксĕм кунĕсенче пуçланса кайнăскер, Октябрьти Аслă социализмлă революци хăватне пула, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур литературăсемпе пĕрле анлă çул çине тухрĕ, пысăк та чаплă çитĕнӳсем турĕ.

Совет литературин малашлăхĕ — шанчăклă та çутă, чаплă та илемлĕ. Совет писателĕсем çав малашлăха курса, ĕненсе ĕçлеççĕ. Çакă вĕсен чĕрисене, таланчĕсене çĕнĕ çитĕнӳсем тума вăй парать, ĕçре хавхалантарать.

1960

К. В. ИВАНОВ ПУРНАҪĔПЕ ТВОРЧЕСТВИ [1]

(Поэт ҫуралнăранпа 50 ҫул тултарнă тĕле)

Чăваш халăхĕ Константин Иванов ятне ăшă кăмăлпа асăнать. Хăйĕн кĕске ĕмĕрĕ тăршшĕнче Иванов паха произведенисем ҫырнă, пирĕн халăх валли пуян парне хăварнă. Унăн произведенийĕсем историшĕн те, культурăшăн та пысăк пуянлăх пулса тăраҫҫĕ.

«Халăхсен тĕрми» шутланнă патша Российинче поэтăн пурнăҫĕ йывăр пулнă: хăйĕн творчествин ҫӳлĕ пусăмне ҫитмешкĕн ăна питех те тумхахлă ҫулпа утма тивнĕ. Ҫав саманара патша чиновникĕсем мĕнпур чĕрĕ вăйсене путарса, халăха хĕсĕрлесе пурăннă. Патша Российинчи нумай йышлă вырăс мар халăхсен нимле права та пулман, вĕсене тĕрлĕ майсемпе вĕҫĕмсĕр мăшкăлланă, кӳрентернĕ. Патша правительстви национальноҫсен чĕлхипе хаҫатсемпе кĕнекесем кăларма, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕренме чарнă. Патша правительстви наци культури кирек мĕнле палăрнине те пăчăхтарса лартма тăрăшнă, вырăс мар халăхсене вăйпах «вырăслатас» политикăна тытса пынă.

Иванова поэт пулса ĕҫлеме питĕ хĕн пулнă. Унăн произведенийĕсене халăх хушшинче ҫырса илнĕ произведенисем вырăнне хурса ҫеҫ пичетлесе кăларнă, вĕсене малалла татах пичетлесе кăларасси ҫинчен шухăшлама та пулман. Ҫитменнине, ҫав вăхăтра халăхăн пысăк пайĕ тĕттĕмлĕхре пăчăхса пурăннă. Ҫак сăлтавсем мĕн Октябрьти революци пули-

---

[1] Ку статьяна А. А. Эсхельпе пĕрле ҫырнă.—**В. Д.**

чченех К. В. Иванов поэзине, халăх хушшине анлăн сарăлма памасăр, тыткăнра тытса усранă.

Константин Иванов — халăх поэчĕ. Демократиллĕ писатель пулса тăракан Ивановăн мировоззренийĕ 1905—1907 çулсенчи революциллĕ событисем вăхăтĕнче, вырăссен классикăллă литературин прогрессивлă идейисен витĕмĕпе чăмăртанса çирĕпленнĕ.

Иванов поэзийĕ çуралса тухни, чăваш литератури хăй ураланни те, 1905—1907 çулсенчи революципе çыхăнса тăрать. Çав çулсенче чăваш чĕлхипе кĕнекесем пичетлесе кăларма ытларах майсем тупăнаççĕ. Вырăссен малтанхи революцийĕ поэта пурнăçри социаллă явленисем çине тĕрĕсрех пăхма вĕрентнĕ. К. В. Иванов чăваш ялĕ чухăнсемпе пуянсем çине пайланса тăнине тарăнрах ăнланма тытăнать. Унăн кăмăлĕ ялти чухăн халăх еннелле туртăнать, вăл пуянсене ытларах та ытларах курайми пулать. Чăн та, унăн пысăк произведенийĕсенче тӳрех революци тума чĕнни курăнмасть, анчах халăх майлă пулса, ăна ирĕке кăларас тенĕ шухăш пуриншĕн те паллă. Иванов поэзийĕнче эпир революциллĕ тапхăрăн сывлăшĕ варкăшса тăнине уççăнах куратпăр. Поэт, пĕтĕм чун хавалĕпе хĕрӳлленсе, киввине хирĕç пырать, этем тивĕçлĕхне пăсса тăракан «укçа тытăмне» хирĕç, халăха, пуринчен малтан хĕрарăмсене, чуралăхра тытса усракан йĕркесене хирĕç çĕкленет. Вăл пĕтĕм телее пуянлăхпа укçара çеç шыракан, çав укçашăн этемĕн тивĕçлĕхне сутса е таптаса тăкма хатĕр тăракан кулаксен — Михетерпе Тăхтаманăн — тискер сăн-сăпачĕсене уçса кăтартать.

Иванов поэзийĕ — вăл этем ирĕкне пусмăрланине хирĕç кĕрешме чĕнекен, çынсене ирĕке тухса хăйсен савăнăçне тупасси çинчен ĕмĕтлентерекен, этем çинчен хунă мухтав юррипе янăракан поэзи. Ку тĕлĕшпе Иванов поэзийĕ вырăс халăхĕн аслă поэчĕсен — Пушкин, Лермонтов, Некрасов тата ыттисен поэзийĕпе пĕр майлă янăрать. Константин Иванов поэт-гражданин, художник-реалист пулма çав поэтсенчен вĕренсе пынă.

Иванов поэзийĕ — хăйĕн ăшчикĕпе те, формипе те халăх поэзийĕ. Вăл поэзи ирĕклĕхшĕн çунакан халăхăн чи таса кăмăлне, хĕрарăма чуралăхран хăтарассишĕн çунакан ĕмĕтне, çынна çын пусмăрланине тĕп тăвассишĕн кĕрешекен халăхăн çутă шанчăкне палăртса тăрать.

Константин Иванов хăйĕн творчествине пуçласа янă вăхăтра чăвашсен писательсем питех те сахал пулнă. Вăл вăхăтра çырма тытăннисем пурте, К. Иванов пекех, малтанхи

утӑмсем кӑна тума тытӑннӑ. Иванов произведенийӗсем — пуринчен ытла «Нарспи» поэма — пичетленсе тухиччен чӑваш литературинче пурнӑҫа ҫав тери анлӑн та тарӑннӑн, пурнӑҫри явленисене ҫав тери тӗрӗс те хӑюллӑн кӑтартса паракан произведенисем пулман; фольклор произведенийӗсене ҫыркаласа илнисем пулкаланӑ тата ытти пӑч-пач уйрӑм сӑвӑсем пичетленкеленӗ. Иванов ҫырнӑ «Нарспи» поэма — художествӑллӑ пахалӑх енчен ҫӳлӗ вырӑнта тӑракан чи малтанхи произведени.

Иванов поэзийӗ тата унӑн чӗлхи чӑвашсен илемлӗ литературипе литература чӗлхине малалла аталантарас ӗҫре тӗп никӗсе вырнаҫса юлнӑ. Ҫавӑнпа та К. В. Иванов ҫинчен: вӑл чӑвашсен илемлӗ литературипе литература чӗлхин никӗсне хываканӗ пулса тӑрать, теҫҫӗ.

* *
*

Константин Васильевич Иванов 1890 ҫулта майӑн 15 (27)-мӗш кунӗнче Ӗпхӳ кӗпӗрнинчи (халӗ Пушкӑрт АССР) Белебей уездӗнче, Слакпуҫ ялӗнче ҫуралнӑ.

Унӑн ашшӗ-амӑшӗ пуян пулнӑ, хӑйсен аллинче нумай ҫӗр тытса тӑнӑ.

Поэтӑн аслашшӗ те, ашшӗ те хут вӗреннӗ ҫынсем пулнӑ. Константина та ашшӗ-амӑшӗ, хуҫалӑхра лайӑхрах ӗҫлеме пӗлекен ҫын пултӑр тесе, вӗрентме тӑрӑшнӑ. Вӗренессе, чӑн та, вӗреннӗ вӑл, анчах та ашшӗ-амӑшӗ йӗрӗпе кайман, пуянсене питлесе халӑха хӳтӗлекен ҫын пулса тӑнӑ.

1898 ҫултан пуҫласа 1901 ҫула ҫитиччен К. Иванов пуҫламӑш шкулта вӗренет. 1902 ҫулта вӑл Белебей хулинчи шкула вӗренме кайса кӗрет. Ку шкулта патша правительстви сарса пыракан нацилле хирӗҫӳ питӗ вӑйлӑ пулнӑ. Вӗри чӗреллӗ ҫамрӑк Константин, ҫак тискер йӗркесене чӑтса тӑраймасӑр, шкултан тухса каять те яла, ашшӗ-амӑш килне таврӑнать, вара тепӗр кӗркуннечченех ялта пурӑнать.

Чӑвашсен вӑл вӑхӑтра пӗртен-пӗр вӑтам шкулӗ Чӗмпӗрте пулнӑ. К. В. Иванов та 1903 ҫулта, кӗркунне, ҫак шкула пырса кӗрет. Малашне вара унӑн пӗтӗм кун-ҫулӗ (кӗске вӑхӑтлӑха хӑй унта-кунта кайса ҫӳренине шута илмесен) Чӗмпӗртех иртет.

1903 ҫултан пуҫласа 1905 ҫула ҫитиччен, икӗ ҫул хушши, К. В. Иванов аслӑрах классене кӗме хатӗрлекен класра вӗренет, 1905 ҫулта, кӗркунне, учительсем хатӗрлекен шкулӑн пӗрремӗш класне куҫать.

Малтанхи кунсенчен тытӑнсах К. В. Иванов питӗ тӑрӑшса вӗреннӗ. Пушӑрах вӑхӑтсенче вӑл илемлӗ литература вулама юратнӑ. Вырӑс литературин классикӗсен творчествипе: Пушкин, Лермонтов, Некрасов, Белинский, Толстой произведенийӗсемпе тӗплӗн паллашнӑ, Хӗвеланӑҫ Европӑри писательсем Шекспир, Гете, Гейне тата ыттисем ҫырнӑ кӗнекесене вуланӑ. Ҫав хушӑрах ун аллине чӑвашла чӗлхепе ҫырнӑ малтанхи произведенисем те лекнӗ: вӗсенчен пӗри — М. Ф. Федоров ҫырнӑ«Арҫури», тепри — Г. Т. Тимофеевӑн «Тӑхӑр ялӗ» пулнӑ. Ку произведенисене вуласа тухнӑ хыҫҫӑн пулас поэтӑн пӗтӗм чун-чӗри ҫӗкленсе каять, вӑл чӑваш чӗлхин пӗтӗм пуянлӑхне, тӑван чӗлхен кӑмӑла ҫӗклекен янравлӑхне тата ытларах туйса илет.

Константин Васильевич, мӗн пӗчӗкрен чӑваш юрри-сӑввисемпе юмахӗ-халапӗсене итлеме юратнӑскер, Чӗмпӗр шкулӗнче чӑваш чӗлхине пикенсе вӗренме тытӑнать, чӑваш сӑмахӗнчи чи паха тӗслӗхсене хӑйӗн пулас произведенийӗсем валли суйласа илет.

К. Иванов пурӑннӑ саманара ҫӗршывра ҫӗр улпучӗсемпе капиталистсем пуҫпулса тӑнӑ. Российӑри халӑх ӗнси ҫинче туллиех полицейскисемпе жандармсем ларнӑ. Вӗсем эксплуататорсене хӳтӗлесе пурӑннӑ.

Чӑваш халӑхӗ, Российӑри ытти вак халӑхсем пекех, пӗтсе ларас патне ҫитнӗ. Чӑваш халӑхне патша Российин чиновникӗсемпе улпучӗсем ҫеҫ мар, хӑйӗн кулакӗсем, купцисем, пупӗсем тата ытти харампырсем те пусмӑрланӑ.

1905—1907 ҫулсенче Российӑра пӗрремӗш революци пулса иртет. Революци Российӑри халӑхсен пурнӑҫне пысӑк улшӑнусем кӳрет. Революци обществӑн пур класӗсене те хускатса янӑ. Вӗсене ҫӗршывӑн политикӑллӑ пурнӑҫӗнче революци тунӑ ҫаврӑну нумай вӑхӑтчен ларнӑ кивӗ позицисенчен тапратса янӑ, вӗсене ҫӗнӗ лару-тӑру май урӑхла ушкӑнланса тӑма хушнӑ. Кашни класс, кашни парти хӑйӗн тактикине тума тӑрӑшнӑ, хӑйне хӑй тыткаламалли ҫул-йӗре, хӑй ытти классем ҫине мӗнле пӑхмаллине, правительство ҫине мӗнле пӑхмаллине палӑртса хума тӑрӑшнӑ.

Революциллӗ шухӑшсем Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекен ачасем хушшинче те уҫҫӑнах палӑра пуҫлаҫҫӗ. Ҫакна пула патша правительствин ирсӗр йыттисем 1906 ҫулхи кӗркуннех чӑваш шкулӗнче вӗренекен вунпилӗк ачана «политика тӗлӗшӗнчен шанчӑксӑррисен» шутне кӗртсе хураҫҫӗ. Ҫак событисем вӑхӑтӗнче К. В. Иванов хӑйсен шкулӗнчи пупсемпе чиновниксенчен тӑрӑхласа карикатурӑсем тӑвать,

сăвăсем çырать. 1907 çулта, февраль уйăхĕнче, вĕренекенсем шкул садĕнче митинг туса ирттереççĕ. Митингра политикăллă сăмахсем тухса калаççĕ, революциллĕ юрăсем юрлаççĕ. Çак ĕçшĕн вара 1907 çулти мартăн 7-мĕш кунĕнче пĕрремĕш класра вĕренекенсемпе пĕрле Иванова та шкултан кăларса яраççĕ.

1905—1907 çулсенче пулса иртнĕ революциллĕ событисем поэтăн кăмăлне хавхалантараççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл хăйсен шкулĕн пурнăçĕпе çеç мар, халăх пурнăçĕпе те, çĕршывăн политикăлла пурнăçĕпе те ытларах интересленме тытăнать. Ку событисем тата вырăссен прогрессивлă литературинчен вуласа пĕлнĕ шухăшсем поэтăн куçне тата та ытларах уçаççĕ: вăл патша Российинчи обществăллă пурнăçра мĕнле улшăнусем пулса иртнине уççăнрах курма пуçлать.

1905—1907 çç. революци хыççăн хаяр реакци çулĕсем пуçланса каяççĕ. Çĕршывра ирсĕр террор ашкăнать, ĕçхалăх çине вăрă-хурахла тапăнаççĕ. К. В. Ивановăн пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланать.

Вунултă çулхи Константинăн малалла вĕренес килет. Вăл çак ĕмĕтпе Бирск, Благовещенск хулисенчи семинарисене çитсе пăхать, анчах «бунтовщике» ниçта та вĕренме илмеççĕ.

1907 çулта, октябрь уйăхĕнче, Иванов каллех Чĕмпĕре таврăнать. Пурнăç условийĕсем йывăр пулнă пулин те, вăл революци çĕкленĕвĕ тапхăрĕнче хăй пуçĕнче ӳссе аталаннă пултарулăх планĕсене пурнăçа кĕртме тытăнать. Пуçламăш шкулсенче вĕренмелли чăвашла кĕнекесем кăларас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет, вырăсларан чăвашла куçарать. Чĕмпĕрти шкулта вăл «Первая книга после букваря» ятлă кĕнекене кăларас ĕçе хутшăнать, Л. Н. Толстойăн «Первая и вторая книга для чтения», Аксаковăн «Аленький цветочек», Андерсенăн «Дикие лебеди» ятлă кĕнекисене тата «Образцы мотивов чувашских песен» кĕнекесене чăваш чĕлхипе кăларнă çĕре хутшăнса ĕçлет.

Ку ĕç К. Иванова литературăра татах та пысăкрах, хăюллăрах утăмсем тума хăват парать. Хĕле кĕрсенех (1907—1908 çç.) вăл тахçантанпах ĕмĕтленсе тăнă ĕçе тытăнать — М. Ю. Лермонтовăн «Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова» ятлă поэмине пысăк ăсталăхпа чăвашла куçарать Лермонтовăн çак произведенийĕ, вырăс халăхĕн тивĕçлĕхне мухтаса юрлаканскер, Иванов чунне питех те çывăх тăнă, унăн пултаруллă шухăшĕсене хавхалантарнă, çавăнпа вăл

ăна пĕтĕм чĕререн тăрăшса куçарнă. Куçару ĕçĕнче хăйĕн вăйĕпе пултарулăхне тĕрĕслесе пăхнă хыççăн Иванов чăвашла произведенисем çырма пуçлать. Çак çулсенчех вăл виçĕ юмах («Тимĕр тылă», «Икĕ хĕр», «Тăлăх арăм») тата классикла поэма «Нарспи» çырса пĕтерет.

Унăн произведенийĕсем, пуринчен ытларах «Нарспи» поэми, пĕтĕм чăваш поэзийĕн тĕп никĕсне кĕрсе, илемлĕ литературăн малашнехи ӳсĕмĕшĕн паллă тапхăр пулса юлнă.

К. Иванов произведенийĕсем чи малтанхи хут 1908 çулта «Сказки и предания чуваш» («Чăваш халлапĕсем») ятлă кĕнекере пичетленсе тухнă. Вăл кĕнекене Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, унăн инспекторĕ И. Я. Яковлев тăрăшнипе, пичетлесе кăларнă. Унта Ивановăн ятне автор тесе мар, халăх халап-юмахне пуçтаракан тесе çеç кăтартнă.

Çакна та палăртмалла: Иванов Чĕмпĕр шкулĕнче пурăннă чухне ăна литература ĕçĕнче И. Я. Яковлев сахал мар пулăшнă.

Творчество енĕпе ĕçленĕ вăхăтрах Иванов хăй тĕллĕн живопись ĕçне тата йывăçран тĕрлĕ чĕнтĕрсем касса кăларма вĕренсе пырать.

1909 çулăн пуçламăшĕнче Иванов Чĕмпĕрти классически гимназире учитель ятне илме экстернпа экзамен парать. Вăл хăйĕн халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлесшĕн, учителе кĕме прошени хыççăн прошени çырса ярать, анчах пур çĕртен те ăна пĕртен-пĕр сăмахпа «отказать» тесе ответлеççĕ.

1909—1910 çулти хĕле поэт тăван ялĕнче — Слакпуçĕнче ирттерет. 1910 çулти кĕркунне вăл каллех Чĕмпĕре таврăнать те Чăваш шкулĕ çумĕнчи хĕрсен училищинче чистописанипе рисовани учителĕнче ĕçлеме тытăнать.

Поэтăн пуçĕнче çĕнĕрен çĕнĕ пултарулла шухăшсем çуралса пыраççĕ. Вăл хăй юратнă поэтсен: Лермонтовăн, Некрасовăн, Кольцовăн тата ыттисен произведенийĕсене чăвашла куçарма ĕмĕтленет. Анчах литература ĕçĕпе çеç пурăнма май çуккине лайăх курса тăрать вăл: патша правительстви чăваш поэтне те, ытти вырăс мар халăхсен поэчĕсем пекех, турăпа шуйттансăр пуçне урăх нимĕн çинчен те çырма ирĕк парас çукки уншăн паллах. Ку вăл хура реакци тапхăрĕ пулнă. Чăнах та, Иванова библи куçарма лартаççĕ[1].

---

[1] К. В. Иванов библин пĕр пĕчĕк пайне, «Юрăсен юррисем» ятлă сыпăкне куçарнă.

И. Я. Яковлев архивĕнчи материалсенче тĕн кĕнекисем куçарни çинчен çакăн пек калана вырăн пур: «Я перевел на чувашский язык

4-43239
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Вăл ырми-канми ĕçлет. Унăн ачаранах начар сывлăхĕ тата та ытларах япăхать.

1914 çулта, кĕркунне, поэт Слакпуçне таврăнать. Ӳпке чирĕпе вар чирĕ ăна парăнтарсах çитереççĕ.

1915 çулти мартăн 26-мĕш кунĕнче (çĕнĕ стильпе) поэтăн чĕри тапма чарăнать. Унăн тупăкне масар çине ăсатма пĕтĕм ял пырать. Поэтăн ӳтне нӳрĕ тăпрапа витсе хунă хыççăн халăха «Нарспи» поэма пичетленнĕ кĕнекене валеçсе параççĕ.

* * *

К. В. Ивановăн оригиналлă пултарулăхĕ чăваш юмахĕсене сăвăласа çырнинчен пуçланса кайнă. Вăл 1907—1908 çулсенче виçĕ юмах çырнă: «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă» тата «Тăлăх арăм».

Çамрăк поэт, 1905—1907 çç. революци тăвăлĕпе çирĕпленнĕскер, халăх юмахĕсен содержанине хăйне кирлĕ пек туса улăштарнă. Иванов çак юмахсенче ун чухнехи обществăри тискерлĕхе питлет, вулакансене ырăпа усала уйăрса илме вĕрентет, этеме юратма чĕнет.

Сăмахран, Иванов «Икĕ хĕр» ятлă халăх юмахĕн содержанине хăйне майлă улăштарнипе унăн тĕп шухăшне тата та ытларах тарăнлатса çивĕчлетнĕ. Вăл юмахăн кĕске содержанийĕ çакăн пек. Ашшĕ хăйĕн икĕ хĕрĕнчен ыйтать: çак çĕр çинче мĕн мăнтăр, мĕн тутлă, мĕн çемçе? — тет. Аслă хĕрĕ, мул тĕнчи моралĕн тыткăнĕнчен тухманскер, хăйне халлĕн ухмахланакан тăмсай ашшĕне юрас тесе, унăн пуянлăхне мухтать. Ашшĕне хирĕç вăл çапла тавăрса калать:

— Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
— Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.
— Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе,—

тет. Ашшĕ ăна çак сăмахсемшĕн ырласа тем те пĕр парса парнелет. Тăмсай старик шухăшĕпе тĕрĕслĕх — унăн мулне ырланинче иккен.

Псалтирь. Она много раз мною же переделывалась. При этом мне оказывали помощь Федор Данилов (чуваш...) и Константин Иванов (чуваш, поэт. Он учился в Симбирской чувашской школе, но не кончил в ней курса). Последняя редакция Псалтири была выработана мною хорошо, с помощью Иванова».

Пачах урăхла тавăрса калать старикĕн кĕçĕн хĕрĕ. Вăл пурнăç чăнлăхĕ çине тĕрĕс куçпа пăхать. Акă унăн отвечĕсем:

— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
— Ыйхă тутлă, тĕнчере
Унтан тутли нимĕн те çук.
— Алă çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи нимĕн те çук.

Хыткукар старик кĕçĕн хĕрне çак тĕрĕс сăмахшăн килĕнчен хăваласа кăларса ярать.

Халăх юмахĕсем хушшинче кун пек сюжетсем пайтах тĕл пулаççĕ. Анчах Иванов юмахĕнче, халăх юмахĕнчи пек мар, ашшĕ хăйĕн кĕçĕн хĕрне тĕрĕс каланăшăн килтен хăваласа ярать. Поэт ăна капитализмлă обществăн тискер сăнсăпатне ĕнентерӳллĕрех кăтартса парас тесе çапла тунă. Капитализм тĕнчи тĕрĕслĕхе яланах путарса пурăнать.

«Тимĕр тылă» ятлă юмахра К. Иванов çемьери хĕрарăм аслисене чуралла пăхăнса тăнине, ăна ĕмĕртенхи тĕшмĕшсем тыткăнра хĕстерсе усранине кăтартса панă. Ĕмĕртен тытăнса тăракан чуралăх йĕркисене пăсас текен çынна вилĕм кĕтнĕ. Иванов ку юмахăн содержанине те хăйне кирлĕ пек улăштарнă. Халăх юмахĕнче тимĕр тылă кинĕн пуçне анчах çиет. Иванов юмахĕнче çав тимĕр тылă кинне çеç мар, тухатмăш карчăка та тĕп тăвать. Иванов кунта вулакана çак шухăш патне илсе пырать: тĕнчере тĕшмĕшпе суя ĕненӳрен те ытларах усал вăй пур, мĕнпур тĕшмĕшсем çав вăйран тухса тăраççĕ, юмахри кин хăй те, унăн амăшĕ (пăянамăшĕ) те çав усал вăй чурисем кăна.

«Тăлăх арăм» ятлă юмахра К. В. Иванов салтак арăмĕ çинчен, вăрçăра вилнĕ упăшкинчен тăлăха тăрса юлнăскер çинчен, ăна пĕтĕм чĕререн хĕрхенсе çырать. Поэт сăвăланă юмахра кăтартнă çĕр çинче нимĕне хĕрхенмесĕр çĕмĕрсеватса пыракан вăрçăн хăрушă мĕлки выртать. Ку юмах, ыттисемпе танлаштарсан, реалистларах произведени. Кунта çакна каласа хăвармалла: патша правительствишĕн ăнăçсăр вĕçленнĕ яппун вăрçи пысăк сисĕмлĕ çамрăк поэтăн чĕрине хускатмасăр иртме пултарайман. Вăрçăра вилсе пĕтнĕ çынсен тăлăха тăрса юлнă тăванĕсем асапра нушаланса пурăнни, вăрçă хыççăнхи тертлĕ те юхăнчăклă пурнăç — çаксем пурте Иванов юмахĕнче тĕкĕр çинчи пек куранса тăраççĕ.

Чăваш юмахĕсене сăвăласа çырнипе пĕр вăхăтрах Иванов пусĕнче классикла поэмăн, чăваш литературине ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлнă «Нарспин» тĕп шухăшĕсемпе сăнлăхĕсем чăмăртанса пынă. Поэт ку поэмăра этем прависене пуянсем тивĕççĕрлетнине, этемĕн хисепне таптаса тăкнине хирĕç, тискер традицисемпе чуралла морале хирĕç вирлĕн тухать.

Иванов «Нарспи» поэмăра авалхи чăваш ялĕн пурнăçĕпе йăлисене сăнласа кăтартнă. Поэмăра ял уççăнах икĕ пая уйрăлса тăрать: пĕр енче кулаксем, тепĕр енче чухăнсем. Силпи ялĕ тулашĕнчен пăхма кăна патриархалла ял пек курăнать, унăн шалти пурнăçĕнче çав тери çивчĕ социалла хирĕçӳсем пулса иртеççĕ. Революци поэта çав хирĕçӳсене курса тĕрĕс ăнланма пулăшнă. Вăл хирĕçӳсене илемлĕх меслечĕпе уçса пани çинче никĕсленсе тăрать те ĕнтĕ Иванов поэми.

«Нарспи» поэмăра мĕн пурĕ 14 сыпăк. Поэма яла ырă çуркунне çитнине кăтартса панинчен пуçланать. Çуркунне. Йĕри-тавра илем, пур çĕрте те савăнăç, пурнăç чĕрĕлет. Пуринчен ытларах этем илемлĕ: вăл вăйлă та, хăватлă та.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать,—

тесе савăнăçлăн пĕлтерет поэт. Анчах та çав вăйлă этеме эксплуатаци никĕсĕ çинче тытăнса тăракан тискер пурнăçăн законĕсем тыткăнра тытса усраççĕ.

Аякран пăхсан, Силпи ялĕнче пурнăç лайăххăн та канăçлăн иртнĕ пек туйăнать. Пурăна-киле çав «лăпкă» ялта калама çук пысăк трагеди пуçланса каять. Аста художник Иванов вулакана малалла пулас событисем çинчен пĕлме питĕ астуса, майĕпен хатĕрлесе пырать: «Силпи ялĕ — пуян ял». Поэма пуçламăшĕнчех çав пуян ял çине выçă кĕтӳçĕ тĕмсĕлсе пăхать. «Этем вăйлă». Анчах поэт çийĕнчех астутарса хăварать:

Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать,—

тет вăл. Çакăн хыççăн вара поэт таса чĕреллĕ этем укçа тытăмне хирĕç, пурнăçăн тĕрĕсмарлăхĕсене хирĕç кĕрешнине сăнласа кăтартать. Поэмăн иккĕмĕш сыпăкĕнче вулакансем умне виçĕ сăнар тухса тăрать: Нарспи, Сетнер, Михетер. Нарспипе Сетнер пĕр-пĕрне пĕтĕм чунтан савса юра-

таççĕ, анчах Нарспи ашшĕ Михетер хăйĕн хĕрне чухăн Сетнере качча памасть. Хăйĕн хĕрĕ валли кĕрӳ тупса та хунă,— вата Тăхтамана качча парать вăл Нарспие. Акă Çимĕк уявĕ çитрĕ. Çимĕк умĕн Нарспи туйĕ пуçланать. Тепĕр кунтан Тăхтаман та килсе çитмелле. Чун юратман çынран хăтăлас тесе, Нарспи Сетнерпе вăрмана тарать. Анчах вĕсене çийĕнчех тытса килеççĕ. Вата Тăхтаман çитет, Нарспие, ашшĕ-амăшĕ пилленипе, ирĕксĕрех хăй патне илсе каять. Нарспин хурлăхлă кунсем пуçланаççĕ. Вăл çак мăшкăлпа ниепле те килĕшме пултараймасть. Хăйне хăтарма Сетнер килессе кĕтет вăл. Чăнах та, Сетнер хăй те Нарспие усал упăшка тыткăнĕнчен хăтарма шут тытать. Анчах Нарспи хăйĕн ĕçне Сетнер килсе ĕлкĕричченех туса хурать: вăл Тăхтамана наркăмăш парса вĕлерет те Сетнер патне пырать.

Çак ĕç çинчен пĕлсен, Нарспи ашшĕпе амăшĕ Сетнер килне пырса кĕреççĕ. Вĕсем Нарспие хăйсем патне таврăнма ӳкĕтлеççĕ. Малалла Михетерпе Нарспи хушшинче диалог пуçланса каять. Ку вырăнта поэт вулакана Михетерĕн чăн-чăн кулакла сăн-питне, унăн çаткăнлăхне уçса парать. Михетер, Нарспие Сетнер аллинчен вăйпах туртса илсе, вăл хăйĕн «хакне» пуçĕпех çухатма ĕлкĕреймен чух, ăна укçашăн тепĕр хут сутса яма та хатĕр.

Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шăтăк ку пӳртрен.
Тепрер каччă тупăпăр
Яту çĕрсех кайиччен...—

тет вăл Нарспие.

Ӳт-пӳ тĕлĕшпе те, ăс-тăнĕпе те вăйлă çын — Сетнер — Михетершĕн нимĕн те мар, мĕншĕн тесен Сетнерĕн мулĕ çук. Михетер мула ытларах ĕненет. Вăл хăйĕн тăван хĕрне те сутса яма пултарать: вăл ăна çуратнă, ӳстернĕ, мĕн ӳссе хĕр çулне çитиччен епле те пулин пуян çынна пама ĕмĕтленсе пурăннă. Михетершĕн пĕтĕм телей — укçара, пуянлăхра. Нарспи, укçан тискер вăйне хăй ĕнси çинче чăтса курнăскер, мулшăн хыпăнса çӳрекен ашшĕн пĕр сăмахне те йышăнмасть. Уншăн пурнăç пуянлăхра мар.

Пуянлăхра анчах мар,
Ыр курасси—çыннинче...—

тет вăл ашшĕне хирĕç татăклăн.

Нарспи пуян ашшĕне хирĕç ытларах та ытларах тăма тытăнать. Вăл ашшĕне пĕр шеллемесĕр питлет, ашшĕн тис-

керлӗхне уҫса кӑтартать. Вӑл ашшӗне хаяр та тӗрӗс сӑмахсем калать:

Анчах эсир хӗрӗре
Ӳстерессе ӳстертӗр,
Ӳстертӗр те укҫашӑн
Сутса ярса пӗтертӗр...

. . . . . .

Мӗншӗн ҫапла ху хӗрне
Парса ятӑн кашкӑра?
Саншӑн ҫав пур ырӑлӑх
Мӗн пурӗ те укҫара...

Нарспин ашшӗпе амӑшӗ, хӑйсен тӑван хӗрне ылханса, Сетнер килӗнчен тухса каяҫҫӗ. Ҫав ирсӗр, вараланчӑк ылханран:

Намӑсланса, хӗрелсе
Хӗвел анчӗ, пытанчӗ,—

тесе ҫырать поэт. Сетнерпе Нарспи иккӗшӗ пӗрле юлаҫҫӗ. Анчах та хуйхӑ пӗтменнине, малашне тата та ытларах инкек-синкек кӗтсе тӑнине туйса, Сетнер амӑшӗ йыврӑн сывласа хуйхӑрать.

Юратнӑ чӗресем пӗрлешрӗҫ, анчах телей ҫук. Укҫа тытӑмӗ ҫинче никӗсленсе тӑракан пурнӑҫ йӗрки тӗп пулмасӑр ӗҫхалӑхӗн телей пулма пултарайманнине Иванов лайӑх чухланӑ. Этем телейӗн тискер тӑшманӗ — Тӑхтаман пӗтет, кайран Михетере те вӗлереҫҫӗ, анчах тӑхтамансемпе михетерсен ирсӗр тӗнчи ҫаплипех тӑрса юлать. Сетнер амӑшӗ ассӑн сывланипе вӗҫленекен 13-мӗш сыпӑка вуласа тухнӑ хыҫҫӑн вулакан ҫакна туйса илет: Нарспипе Сетнерӗн ҫӗнтерӗвӗпе телейӗ кӗске вӑхӑтлӑха кӑна, вӗсем пурпӗрех капитализм пусмӑрӗнче пӗтмелле. Чуралӑхӑн тискер тӗнчине хирӗҫ Нарспипе Сетнер хӑйсем халлӗн кӑна кӗрешеҫҫӗ. Силпи ялӗн ҫыннисем, вӗсене хӗрхенеҫҫӗ пулин те, тӑшмансене хирӗҫ кӗрешме пулӑшаймаҫҫӗ. Сетнерпе Нарспи пӗтеҫҫӗ. Ҫаксенче пуринче те эпир каллех Иванов пурӑннӑ вӑхӑтри саманан сӑн-сӑпачӗ хӑшпӗр таран тӗрленсе юлнине куратпӑр.

1907—1908 ҫулсенче, революцие патша йӗрки путарса лартсан, урнӑ реакци тапхӑрӗ пуҫланса каять. Ирӗклӗхшӗн кӗрешекен халӑхӑн чи лайӑх ывӑлӗ-хӗрӗсене тӗрмесене хупса хураҫҫӗ. Ирӗклӗхе таптаса тӑкаҫҫӗ, ирӗклӗхӗн сассине хупласа хураҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл поэт творчествинче хӑйӗн йӗрне

хăвармасăр иртме пултарайман. Юлашки çичĕ çул хушшинче поэт хăйĕн юратнă ĕçĕпе — творчество ĕçĕпе ĕçлеме пачах та май тупаймасть.

Анчах та К. В. Иванов хăйĕн поэминче татса парайманнине историйĕн малашнехи аталанăвĕ татса пачĕ.

Чăваш халăхĕ «Нарспи» поэмăна юратнă, юратать те. Вăл ăна хăйĕн чĕлхин мĕнпур пуянлăхĕсемпе, художествăллă вăйĕпе малтанхи хут ун тăрăх паллашнăшăн çеç мар юратать. Халăх «Нарспи» поэмăра пысăк художествăллă асталăхпа сăнласа панă хăйĕн октябрьчченхи йывăр пурнăçĕн чылай енĕсене те курса тăнă.

Михетерпе Тăхтаман сăнарĕсем çине пăхса халăх хăйĕн ĕмĕртенхи тăшманĕсене палласа илнĕ; Сетнерпе Нарспи сăнарĕсене курсан, хăйĕн тӳрĕ кăмăллă ывăлĕ-хĕрĕсене палланă.

Ĕççынни, «Нарспи» поэмăна вуласан, Михетерпе Тăхтамана чĕререн курайми пулать, Нарспипе Сетнере тата Сетнерĕн амăшне пĕтĕм кăмăлтан юратать. Нарспипе Сетнерĕн тата унăн ватă амăшĕн сăнарĕсене калама çук ăшшăн сăнласа панă. Вулакан Нарспипе Сетнер трагедине поэтпа пĕрлех чăтса ирттерет.

«Нарспи» поэмăн вăйĕ, чи малтан,— вăл чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕн пысăк та кăткăс явленийĕсене ĕнентерӳллĕн те витĕмлĕн кăтартса панинче. Пуянсем чухăнсене пусмăрласа пурăнни, ăраскалсăрлăха хăварнă халăх асапланни, вĕсем çутă та телейлĕ пурнăç тума ĕмĕтленсе тата пурнăç ӳлĕмрен чăнах та улшăнасса шанса, хăйсен пусмăрçисене хирĕç хăюллăн та паттăррăн кĕрешни — çаксем пурте чăн-чăн халăх пурнăçĕнчен илсе, художествăлла пысăк талантпа сăнласа хăварнă картинăсем. Çаксемшĕн юратать те халăх «Нарспи» поэмăна.

К. В. Иванов çырнă произведенисен тĕп сăнарĕ — хĕрарăм («Тимĕр тылă», «Икĕ хĕр», «Тăлăх арăм», «Нарспи»). Хĕрарăм çинчен:

Кун-çулăн пулнă виçĕ йывăр шăпа:
Пĕрремĕш — чурана качча тухасси;
Иккĕмĕш—чура ывăлĕн амăшĕ пуласси;
Виççĕмĕш—чурана тупăкчен пăхăнасси.

Вырăс çĕрĕн хĕрарăмĕ çине
Йывăррăн ӳкнĕ çак виçĕ шăпа,—

тесе çырнă вырăс поэчĕ Н. А. Некрасов.

Çак йывăр та хаяр шăпа чăваш хĕрарăмĕ çине, вырăс мар ытти национальноçсен хĕрарăмĕсем çине, икĕ хут та ытларах тиеннĕ. Чăваш хĕрарăмĕ, социалла-экономикăлла тата çемьери пусмăра тӳснисĕр пуçне, нацилле пусмăра та тӳссе пурăннă.

К. Иванов, хăйĕн произведенийĕсенче чăваш хĕрарăмĕн асаплă пурнăçне кăтартса парса, чăваш халăхĕн пурнăçĕнчи социалла-политикăлла явленисене уçса пама, общество пурнăçĕнчи тискерлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем мĕнле сăлтавсенчен тухса тăнине тĕпчесе пĕлме тăрăшнă.

К. Ивановăн художествăлла пысăк ăсталăхĕ икĕ никĕс çинче: чăваш фольклорĕпе вырăссен классикла литератури вăйĕн витĕмĕпе ӳссе аталаннă. Унăн произведенийĕсенче вырăс классикĕсен произведенийĕсен шухăшĕсем палăраççĕ. Анчах та Иванов произведенийĕсен тĕп никĕсĕ — вăл чăваш халăхĕн творчестви. Иванов поэзийĕн чĕлхи — халăхăн чĕрĕ чĕлхи. Поэт халăх чĕлхи пуянлăхĕнчен мĕнпур илемлĕ, паха, чĕрĕ сăмахсене суйласа илсе, литература чĕлхине нумай çĕрти чăваш сăмахĕсемпе пуянлатнă. Хальхи чăваш литератури чĕлхин никĕсне Иванов чĕлхи нумай тĕреклетнĕ.

Чăваш литературин аталанăвĕнче К. В. Иванов витĕмĕ (влиянийĕ) çав тери пысăк. Чăваш писателĕсемпе поэчĕсем Ивановран поэзин пысăк ăсталăхне, литература чĕлхин çепĕçлĕхне вĕренсе пынă, халĕ те вĕренсе пыраççĕ. Хальхи чăваш писателĕсен произведенийĕсенче — поэзире çеç мар, прозăпа драматургире те нумайăшĕсенче Иванов поэзийĕн вăйĕ палăрать.

Хальхи чăваш илемлĕ литератури, революцичченхи саманара пуçланса кайнăскер, хăйĕн аталанăвĕнче пысăк ӳсĕм турĕ, малалла кайрĕ. Иванов поэзийĕ вырăссен прогрессивлă литературин витĕмĕпе ăнăçлăн ӳссе аталаннă пекех, пирĕн чăваш совет литератури аслă вырăс халăхĕн революцилле литератури витĕмĕпе ӳссе аталанать. Чăваш совет литератури çĕнĕ идейăллă содержанипе, çĕнĕ формăсемпе пуянланчĕ. Пирĕн хальхи литература — социализм тапхăрĕнчи литература.

Питех те пуянланчĕ чăваш халăхĕн чĕлхи. Революциччен унăн ирĕклĕн аталанса пуянланас майĕсем хĕсĕнсе пынă пулсан, халĕ вăл обществăлла-политикăллă чĕлхе, государство чĕлхи пулса тăчĕ. Халĕ çак чĕлхепе Чăваш АССР Конституцине çырнă: чăваш чĕлхине марксизм-ленинизм классикĕсен аслă произведенийĕсене, вырăс тата пĕтĕм тĕн-

че литератури классикĕсен произведенийĕсене куçарнă. Вĕсене чăваш халăхĕ чун-чĕререн юратса вулать.

Чăвашсен художествăллă литературипе чĕлхи çĕнĕрен çĕнĕ ӳсĕмсем тăвать. Вăл ӳсĕмсем мĕн чухлĕ ытларах, çавăн чухлĕ халăх та хăйĕн поэтне хака хурать, пирĕн реализмла литературăна пуçласа яракан, литература чĕлхин никĕсне хуракан чаплă поэта кирек хăçан та чĕререн сума-суса асăнать.

* *
*

Октябрьти революципе Совет влаçĕ пирĕн халăха, хамăр çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе пĕр танах, экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен ӳсмешкĕн калама çук анлă çулсем уçса пачĕ. Коммунистсен партин ленинла наци политики тăван çĕршыври нумай нациллĕ халăхсен хăватлă пултарулăхне пурнăç вăйĕ парса çунатлантарчĕ. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тата аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса тăнипе пирĕн чăваш халăхĕ формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культурине аталантарса пырать, ăна çĕнĕрен çĕнĕ пусăма хăпартать.

Чăваш халăхĕн хăйĕн шкулсем пур, вăл хуçалăхпа культура строительствин пур отраслисенче те ĕçлеме кадрсем хатĕрлерĕ, унăн хăйĕн литератури, искусстви пур. Тăван чĕлхепе темиçе пиншер экземпляр тиражлă кĕнеке, хаçат-журнал тухса халăх хушшине сарăлать.

Чăваш халăхĕ К. В. Ивановăн литературăри пуянлăхне пархатарлăн йышăнчĕ, ăна пĕтĕм халăх тивĕçлĕхĕ туса хучĕ.

Патша саманинче поэтăн çулĕ хĕсĕк пулнă, вăл хăйĕн чаплă произведенийĕсемпе ĕçхалăхĕн сарлака массисем патне çитме май тупайман. Октябрьти революципе Совет влаçĕ кăна Иванов поэзине халăх патне çитме анлă çул уçса пачĕ. Иванов произведенийĕсем халăх хушшинче йышлăн сарăлаççĕ.

К. Иванов поэзийĕпе чăваш вулаканĕсем çеç мар, ытти тăванла халăхсем те интересленеççĕ. «Нарспи» поэмăна вырăсла тăвата хутчен куçарнă, темиçе изданипе пичетлесе кăларнă; поэмăна удмурт, тутар, мари, мордва, пушкăрт чĕлхисем çине куçарнă. Ку ĕнтĕ К. Иванов поэзийĕ чăнчăнах та халăхăн ĕмĕртенхи ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене палăртнине, вăл ытти халăхсен поэзийĕпе те пĕр тăванлине çирĕплетсе парать.

Константин Иванов халăха чуралăх пусмăрĕнчен хăтарасси çинчен тата унăн пултаруллă вăйĕсене çĕклентересси çинчен ĕмĕтленнĕ. Ивановăн çак çутă ĕмĕчĕсем пирĕн ĕмĕрте пурнăçа кĕчĕç. Ирĕклĕ совет çынни хăйĕн ирĕклĕ çĕрĕ çинче коммунизмлă обществăн çутă çуртне тăвать.

Чăваш халăхĕ хăйĕн чи малтанхи поэчĕн Константин Васильевич Ивановăн ятне ĕмĕр асра тытать. Совет Конституцийĕн ăшă хĕвелĕ айĕнче вăл литературăпа искусство тата культура фрончĕ валли çĕнĕрен çĕнĕ талантсем пăхса çитĕнтерет.

1940

КОНСТАНТИН ИВАНОВ ЮМАХĔСЕМ

1908 çулта пирĕн паллă поэт, чăваш поэзин классикĕ К. В. Иванов юмах кĕнеки çырма тытăннă. Малтан палăртса хунă план тăрăх унăн çак кĕнекере пилĕк юмах пулмалла пулнă: «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр», «Хур кайăксем» тата «Ватă вăрман шухăшĕ». Асăннă юмахсен кĕнеки çакăн пек сăвăласа çырнă пĕчĕк умсăмахĕпе уçăлмалла пулнă:

Кукашшĕне итлесе,
Ларать ача сак çинче.
Хăйă çунать ташласа,
Хура пӳрте çутатса.
Ватти тăвать сăпата,
Хăй юмахне çаптарса.
Юмах юпа тăрринче,
Халап хапха тăрринче.

К. В. Иванов виçĕ юмах çеç («Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр») çырса пĕтернĕ. Çак виçĕ юмах тата «Нарспи» поэма «Чăваш халлапĕсем» ятлă кĕнекере 1908 çулти октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнă юбилей вăхăтне, пичетленсе тухнă.

Константин Иванов юмахĕсем — ахаль юмахсем мар. Вĕсем — поэт шухăшĕсене пăхăнтарса çырнă произведенисем. Халăх творчествинчен илнĕ юмахсен содержанине К. Иванов хăй майлă улăштарать, социаллă шухăшсем кĕртсе çивĕчлетет.

Пăхса тухар-ха вĕсене кĕскен.

«Тимĕр тылă» юмахра автор класлă обществăри тĕшмĕш (тĕрлĕ тухатмăшсемпе юмăçсем) халăха мĕнле ултала-

са, хăратса, тĕттĕмлĕхре тытса тăнине каласа парать. Вăл унта, тĕрлĕ тухатмăшсем темĕнле хăтлансан та, çутă çĕнтересси çинчен, вăл çĕнтермех кирли çинчен калать. Çакăнта ĕнтĕ вăл юмахăн оптимизмĕ, реалистла характерĕ.

Юмах юптарнă тăрăх, тимĕр тылă ăшĕнче шурă шуйттан ларать имĕш, тимĕр тылла тытсанах вăл шăлĕсемпе шаккать, тет. Кантăр тылланă чухне, кантăр çӳппи куçа кĕрсен, çын тухатмăш пулать, тет.

Çав тухатмăш хушнипе
Тимĕр тылă çĕрĕпе
Урам тăрăх, хир тăрăх
Шăлтăртатса çӳрет, тет.
Тылă сиксе пынă чух,
Çулĕ çинче çын пулсан,
Ăна хĕссе вĕлерсе,
Юнне ĕçсе каять, тет...

Тухатмăш, асар-писер суккăр карчăк, хăйĕн хăнана кайнă кинĕн пуçне тылăпа касса татасшăн. «Çав кин пуçне çи, тыллăм» тесе ĕскĕртет вăл тыллине. Çул çинчи кинне, Чĕкеç ятлăскерне, унăн йăмăкĕсем те, пиччĕшĕ те хăйсем патне кĕртмеççĕ: «Çĕрле çӳрес хăнам çук, каях хăвăн çулупа», теççĕ. Вăл вара аслăк çине хăпарать те улăм ăшне кĕрсе пытанать. Анчах тимĕр тылă ăна тупать, çакăн хыççăн вара карчăк кинĕ хăраса вилсе каять... Юлашкинчен тимĕр тылă карчăка хăйне те пĕтерет,— унăн пуçне татса пăрахать, карчăк пырĕнчен хура юн юхса тухать.

Халăх хушшинчен илнĕ юмаха сăвăласа панă хыççăн К. В. Иванов акă мĕнле шухăш каласа хурать:

Иртрĕ-кайрĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен-хуллен сирĕлчĕ.
Сикрĕ-тухрĕ çутă кун,
Çут çанталăк çутăлчĕ.
Акăр ялĕ вăраннă,
Йывăр ыйхă татăлнă.

Кун пек шухăша поэт «Тăлăх арăм» юмахра та çырса парать; унта та вăл çутă çĕнтерни çинчен калать:

Çут хĕвелпе çут тĕнче
Вăй паччăр çак кунсенче.

Тĕшмĕшсенчен вăйлăраххи — çутă кун, ăс-хакăл, тесе каласшăн поэт. Тухатмăш пĕтсен, унăн улталамалли, хăратмалли хатĕрĕ те («тимĕр тылă» та) пĕтет:

Карчăк выртать, хускалмасть,
Таврашĕнче хура юн.
Пĕвĕ выртать пĕр çĕрте,
Пуçĕ выртать пĕр енче.
Тылă ларать, шалтлатмасть.
Мачча çинче сасă çук...

Çапла усал ĕç тăвакан тухатмăш хăйĕн ĕçĕпе хăйнех пĕтерет,— тĕттĕм çĕр иртсен, çутă кун килет. Çакăнтан поэт хăйĕн халăхне çутта кăларассишĕн, тĕшмĕшсен ирсĕр тыткăнĕнчен хăтарассишĕн тăни питех те лайăх курăнать.

К. Иванов, ирсĕр карчăка питленĕ хыççăн, тепĕр ирсĕр этеме ярса илет. Çакă вăл — арман хуçи. Поэт, арман хуçинчен кулса, ăна тăрăхласа, акă мĕнле çырать:

Авă пырать пĕр этем,
Арман хуçи урампа,
Шурă сухалĕ ик хăлаç,
Курпунĕ те икĕ пăт.
Туйи çине таяннă,
Хăй кăвакал пек утать.
Пысăк лавкка умĕнче
Хăшăлтатса чарăнать,
Хăй çăнăхлă тумтирне
Çапкаласа мăрлатать...

Юмахри ĕçсем пурте тĕттĕм каç пулса иртеççĕ: тухатмăш карчăк хăйĕн кинне пĕтерет; тухатмăш карчăкăн пуçне тимĕр тылă касса татать. Çакăн чухнех «курпунĕ икĕ пăт старикĕн» арман пĕвине «усал-тĕселсем» татса яраççĕ.

К. Иванов кăмăлĕ Чĕкеç енче. Вăл тухатмăш карчăкăн сăн-питне кăтартса парас умĕн унăн кинĕсем çинчен çакăн пек йĕркесем çырать:

Пурччĕ тата карчăкăн
Икĕ тăлăх кинĕсем:
Икĕ кин те лайăх кин,
Иккĕшĕ те сарă кин.
. . . .
Кĕçĕн кинин, каласан,
Ячĕ унăн Чĕкеçчĕ,
Хăй те чĕкеç пекехчĕ,
Ытарма çук аванччĕ,
Алли çăмăл ĕç тума,
Тути çÿхе чуптума.
... Куçĕ-пуçĕ пит йăваш.
Çын савăнса тăмалла,—
Çапах карчăк юратмасть,
Ухмах тесех шухăшлăн.

Анчах вулакан Чĕкеç çинчен пĕрре те вăл ухмах, тесе шухăшламасть. Вулакан, поэт пекех, хăйĕн пĕтĕм кăмăлĕпе

«çăмăл алăллă», «йăваш куç-пуçлă» сарă киншĕн, Чĕкеçшĕн тăрать; çав вăхăтрах вăл тухатмăш карчăка, арман хуçине пĕтĕм чун-чĕререн кураймасть.

«Тăлăх арăм» ятлă юмахра К. Иванов вăрçă хăрушлăхĕ çинчен çырса кăтартнă. Çак юмаха çыриччен, ик-виç çул малтан, вăрçă пулса иртнĕ. Ку вăл — Японипе Россия хушшинче 1904—1905 çулсенче пулнă вăрçă. Çак пирĕншĕн ăнăçсăр вăрçăра вилнисен, аманнисен, тыткăна лекнисен хисепĕ 120 пин çынна çитнĕ. Вĕсен шутĕнче чăваш салтакĕсем те сахал мар пулнă.

Вунпилĕк çулхи Константин Иванова вăрçă картинисем питех те шухăшлаттарнă. Вăрçă халăха епле тарăхтарни çинчен поэт хайĕн «Тăлăх арăм» ятлă юмахĕнче каласа пама тăрăшнă.

«Тăлăх арăм» чăннипех те вăрçăн тискер сăнне кăтартса парать.

Çичĕ пĕр тăван — вăрçăра. Вĕсен арăмĕсем уйра тырă выраççĕ. Хунямăшĕ каласа панă тăрăх, кĕçĕн кинĕн упăшки вăрçăра вилнĕ. Хăйĕн упăшкине шыраса, çак кинĕ вăрçа каять. Вăрçăра вăл мĕн курнине поэт çакăн пек сăнласа кăтартать.

Ту тăрринче пўрт ларать,
Чăваш хытă çывăрать.
Кун килет те кун иртет,—
Чăваш хытă çывăрать.
Шăппăн выртать, хускалмасть,
Ун арăмĕ хурланать.
Йĕре-йĕре хуйхăрать,
Упăшкине ыталать.
Анчах арăмĕ йĕнине
Вăл сисес çук чĕрипе.
Ĕмĕр-ĕмĕр йĕрсен те,
Чĕрĕлес çук куççулĕпе.

Юратнă упăшкине вăрçăра çухатнă арăм, ним тăвайман пирки, тăваттăмĕш кунне хăй упăшкин виçĕ ылтăн пĕрчĕ çўçĕпе çакăнса вилет...

К. В. Иванов, вăрçăн тискер хăрушлăхĕсене кăтартса парса, тăшмансене хирĕç тăрать, вăрçă пирки тăлăха юлнисем майлă пулать. Вилнĕ упăшкипе унăн арăмĕ хутне кĕрсе, поэт-патриот хăйĕн юмахне акă мĕнле вĕçлет:

Эпĕ те вара хурланса,
Икĕ чуна асăнса,
Урхамаха вырттартăм,
Чўклерĕм те хăвартăм.

Ку юмахра К. Иванов 1904—1905 çулхи вăрçăн халăха хирĕçле характерне кăтартса пама тăрăшнă. Паллах, ăна вăл тӳрех, уççăнрах кăтартса парайман, çапах та патша пуçласа янă вăрçăра çынсене ăссăр, киревсĕр пĕтернине лайăхах каласа панă.

«Икĕ хĕр» халапра К. В. Иванов пĕр пуянăн хĕрĕсем çинчен çырнă. Аслă хĕрĕ, пуян ашшĕ çулĕпе кайса, ашшĕнчен ырă ят илтес тесе, унăн пурлăхне мухтать, пуянлăх умĕнче йăпăлтатать; кĕçĕн хĕрĕ, çак йăлана пăхăнмасăр, тĕрĕслĕхшĕн тăрать, вăл ашшĕ мулне мухтамасть. Поэт кунта вулакансене акă мĕнле шухăш патне илсе пырать: мул çинче тытăнса тăракан тĕнчере суйса, йăпăлтатса пурăнакансем çеç «мухтава тивĕçлĕ»; кам тĕрĕслĕхшĕн, чăнлăхшăн тӳрĕ кăмăлпа тăнă, кам тĕрĕслĕхе пăхăнса, пуянсем умĕнче пуç тайман,— вĕсене картман, кун паман...

«Икĕ хĕр» халапра кăтартса панă пуяна аслă хĕрĕн отвечĕсем килĕшеççĕ, мĕншĕн тесен вăл ашшĕне унăн пуянлăхĕшĕн «хисеп тăвать», çавăнпа хĕрне вăл çур мулне парать.

Анчах çамрăк хĕрĕ ашшĕ мулне мухтаса ашшĕне хисеп тумасть. Вăл каланă тăрăх çут тĕнчере ашшĕ килĕнчи кăвак лаша мар,— çĕр мăнтăр; ашшĕ килĕнчи вĕллери пыл мар,— ыйхă тутлă; ашшĕ килĕнчи тӳшек-минтер мар,— алă çемçе.

Çак пуян ашшĕне çамрăк хĕрĕн чăрсăр отвечĕсем тарăхтарса яраççĕ, хĕрне вăл «санра пархатар сахал», тесе хăваласа ярать.

Çакна каланă май кунта ятарласах пĕр деталь çинче чарăнса тăма кирлĕ. Аслă хĕрĕн отвечĕ, «тӳшек-минтер пит çемçе» тени, ашшĕне килĕшет, мĕншĕн тесен вăл унăн пуян килĕнчи ăпăр-тапăрĕ çинчен каланине пĕлтерет. Кĕçĕн хĕрĕн отвечĕ, «алă çемçе» тени ăна килĕшмест çеç те мар, вăл ăна тарăхтарса çын йĕркинчен кăларать. Мĕншĕн тесен кĕçĕн хĕрĕн отвечĕ чухăн çын килĕнчи обстановкăна аса илтерет. Чухăн çын тӳшек-минтер çинче мар, йывăр ĕç хыççăн хытă çĕрте, пуçĕ айне аллине хурса çывăрать. Унăн алли вара гĕнчере темрен те çемçе пек туйăнать.

Ку тĕслĕхре, «алă çемçе» тенинче,— пирĕн шутпа,— пысăк социаллă тупсăм пур. «Икĕ хĕр» юмах çине çав тупсăм енчен пырса пăхсан, эпир хăйĕн хĕрĕсене ыйтусем паракан пуянăн ĕмĕчĕсене, унăн ăнланăвĕсене лайăхах пĕлсе çитетпĕр: ăна пуянлăх çеç интереслентерет, вăл мул çинчен çеç шухăшлама юрататъ.

Çавнашкал ĕнтĕ укçа çинче, суялăх çинче, этемĕн ирĕк-

лĕхĕпе чысне чăрсăррăн путарни çинче тытăнса тăракан тĕнчен законĕ.

Ку ыйту пирки К. Иванов пĕр çак произведенире çеç мар чарăнса тăрать. «Нарспи» поэмăра та «укçапала эрех» çынна ăсран кăларни çинчен калать. Асăннă юмахсенчен малтантарах çырма пуçăннă тепĕр произведенире — «Шуйттан чури» ятлă романтизмлăрах трагедире те вăл мул тĕнчинче укçа-тенкĕ çынсен пуçĕсене мĕнле çавăрнине, вĕсене ăçталла хĕтĕртнине кăтартма ĕмĕтленнĕ.

Çав трагедин упранса юлса пирĕн вăхăта çитнĕ сыпăкĕсен содержанийĕ çакăн пек.

Икĕ пĕр тăван, пиччĕшĕпе шăллĕ, мул пухас тесе, амăшĕпе арăмĕсен сăмахĕсене итлемесĕр, вĕсен куççульне пăхмасăр, вăрçă хирне вилесене тустарма, мул пухма каяççĕ. Унта вĕсем вилнисен тумĕсене хываççĕ, аманнисен кĕсйисене ухтараççĕ, укçисене кăларса илеççĕ. Ытларах пуяс шутпа асли шуйттанпа паллашать, чунне сутса шуйттан чури пулса тăрать. Шуйттан ăна, мул пекех, хĕтĕртет,— вара пиччĕшĕ хăйĕн шăллĕне вĕлерсе ун укçине илет.

Çакăн хыççăн пиччĕшĕ мухтанать:

Мана мĕн пит кирлĕччĕ?
Укçа, укçа,— акă вăл!
Укçа пулсан, мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?
Ылтăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл!

К. Иванов хăйĕн творчествин пĕтĕм вăйне мул тĕнчин тĕрĕсмарлăхне уçса кăтартас çĕре янă. Анчах ырă курасси, телей, ирĕклĕх укçара мар,— акă унăн творчестви витĕр тухакан тепĕр йĕр, тĕп шухăш. Этем — вăл чи вăйли, чи таси; анчах капитализмăн кашкăрла законĕсем этеме темĕн тĕрлĕ ирсĕрлĕхсемпе вараласа хураççĕ, çыхлантарса лартаççĕ, ăсран кăларма хăтланаççĕ, çыннăн тивĕçлĕхĕпе вăйне çухаттарасшăн.

К. Ивановăн юмахĕсене, трагеди сыпăкĕсене, пуринчен ытла «Нарспи» поэмине вуласа, эпир иртнĕ саманана тата та лайăхрах куратпăр, тарăнрах ăнланатпăр, хальхи пурнăçпа танлаштаратпăр та, поэтăн çутă ĕмĕчĕсем пирĕн çĕршывра, социализм çĕршывĕнче, пурнăçа кĕнине куçкĕретĕнех куратпăр. Халĕ этем хăйне кирлĕ тивĕç таранах çĕкленчĕ, хăйĕн чаплă вырăнне мăнаçлăн йышăнса тăрать.

Социализм тăвакан çынсем — çĕнĕ йышши çынсем. Вĕ-

сем укҫашӑн та эрехшӗн пурӑнмаҫҫӗ, вӗсем социализмлӑ обществӑна усӑ парас тесе, пӗтӗм вӑй-халне хурса тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсен ӗмӗчӗ — чи ҫутӑ ӗмӗт — коммунизм тӑвасси.

* *
*

Константин Иванов хӑйӗн юмахӗсемпе халапӗсене ҫырнӑ чухне А. С. Пушкин пек ӗҫленӗ. Вырӑссен аслӑ поэчӗ халӑх чӗлхинчен лайӑх сӑмахсене, паха сӑмах ҫаврӑнӑшӗсене суйласа илме пӗлнӗ. К. Иванов та ҫавах: вӑл чӑваш чӗлхине юратса, унӑн вӑйне чӗрепе туйса ӗҫленӗ, литературӑна кирлӗ сӑмахсене халӑх чӗлхинчен пӗрчӗн-пӗрчӗн суйласа илнӗ.

Ҫаксене шутра тытса, эпир: пирӗн литературӑн классикӗ, чӑваш поэзине хӑватлӑ аталантараканӗ, илемлӗ литература чӗлхин никӗсне хываканӗ, тетпӗр.

К. Иванов ҫырнӑ юмахсем, ҫав вӑхӑтрах, ҫак поэтӑн реализмӗ ҫинчен, унӑн творчествин халӑхлӑхӗ ҫинчен каласа параҫҫӗ. Халӑхлӑх вӑл пӗр паллӑ халӑхӑн индивидуаллӑхӗпе характерлӗхӗ, шухӑш-кӑмӑлӗсемпе туйӑмӗсен йӗрки; ҫак халӑхӑн йӑлисем те ҫакӑнтах кӗреҫҫӗ. Анчах Иванов «чӑваш халӑхлӑхӗпе» ҫырлахса ларман: ӑна А. С. Пушкин поэзинчи, М. Ю. Лермонтов поэзинчи халӑхлӑх та вӑйлӑ интереслентернӗ.

К. Иванов «Тимӗр тылӑ», «Тӑлӑх арӑм» тата «Икӗ хӗр» юмахӗсене ҫырнӑ май хӑйӗн талантне ҫӗнӗ произведенисем ҫырма хатӗрленӗ. Поэт вара часах «Нарспи» ҫырса хӑйӗн хӑватлӑ талантне тата та сарлакарах кӑтартнӑ.

К. Иванов чӑваш халӑх юмахӗсене хӑйӗн таланчӗн ҫуттипе хитрелетнӗ, вӗсен тупсӑмне ҫивӗчлетнӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем чӑваш литератури историне кӗрсе тивӗҫлӗ вырӑн йышӑннӑ.

1947

КИВЕЛЕ ПĔЛМИ ПРОИЗВЕДЕНИ

(«Нарспи» поэма пичетленсе тухнăранпа 40 çул çитнĕ май)

Каждое произведение искусства непременно должно рассматриваться в отношении к эпохе, к исторической современности и в отношениях художника к обществу...

В. Г. Белинский.

1

Константин Васильевич Иванов çырнă «Нарспи» поэмăн никам манмалла мар историйĕ пур. Вăл истори пирĕн революцичченхи илемлĕ литература мĕнле аталанни çинчен, пирĕн ун чухнехи писательсем мĕнле йывăр условисенче ĕçлесе пурăнни çинчен, анчах вĕсем, çав йывăрлăха пăхмасăрах, тăван литературăшăн мĕнле тăрăшса ĕçлени çинчен каласа парать. Вĕсем тăван литературăшăн хăйсен пурнăçне те хĕрхенмен.

Патшан шутсăр нумай чиновникĕсем, тĕрлĕ йышши тарçи-тĕрçисем халăха хăратса, кӳрентерсе пурăннă, сăмах та калаттарман. Чăваш халăхĕ пек сахал йышлă халăхсен çыннисем хăйсен юррисене те ирĕклĕн юрлайман. Ф. П. Павлов каларĕшле, чăваш юрри ун чухне «çырмари юрă» шутĕнче пулнă, мĕншĕн тесен чăвашсем хăйсен юррисене çырмасенче пытанса вăрттăн юрланă.

Литература çулĕ те çавăн пекех хĕсĕк пулнă. Чăваш литературин чи малтанхи произведенийĕ — М. Ф. Федоровăн «Арçури» баллади, 1879 çулта çырнăскер, вăтăр çула яхăн сăмах вĕççĕн çӳренĕ. Унăн авторĕ, чăвашсен пирвайхи чăн-

чăн поэчĕ, хăйĕн чĕререн юратнă произведенине пичетре курмасăрах çĕре кĕнĕ.

Чăвашсен тепĕр хастар поэтне — Тайăр Тимккине патша чиновникĕсем кун паман: ăна ирĕклĕх сăввисем çырнăшăн 1907 çулта Çĕпĕре ссылкăна янă. Ытти писательсемпе поэтсен пурнăçĕ те çавăн пекех тертлĕ пулнă.

1905—1907 çулсенче патша Российинчи халăхсем, аслă вырăс халăхĕн пролетариачĕ пуçарнă революцин вăйĕпе хавхаланса, кĕрешĕве çĕкленнĕ, хăйсен культурине аталантарас тесе, хăшпĕр пĕчĕк майсемпе усă курма тытăнса пăхнă. Çак революци вăхăтĕнче чăваш чĕлхипе пăртак кĕнекесем пичетленсе тухнине çавăн пек пуçăну выраннe шутлас пулать. Ку шута 1908 çулти апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче пичетленсе тухнă «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрă» ятлă кĕнеке тата çав çулхинех октябрь уйăхĕнче тухнă «Чăваш халлапĕсем» кĕреççĕ.

Çак кĕнекесем иккĕшĕ те чăваш халăхĕн чи юратнă сăвăçин — К. В. Ивановăн ячĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Пĕрремĕш кĕнекинче М. Ю. Лермонтовăн К. Иванов чăвашла куçарнă поэмисемпе сăввисем: «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрă», «Тĕрме çынни», «Хумсемпе çынсем», «Пурнăç курки», «Тусен тăррисем», «Чул ту», «Пирĕшти» тата ыт. пулнă.

Иккĕмĕш кĕнекинче К. Иванов çырнă «Нарспи» поэма, «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» юмахсем тата ыт. пулнă.

Чăваш чĕлхипе çырнă «Нарспи» тата М. Ю. Лермонтовăн чăваш чĕлхине куçарнă «Юрри» чăннипех те чăваш литературин никĕсне хывнă произведенисем пулса тăраççĕ темелле. Вăл произведенисем чăваш чĕлхин вăй-хăватне кăтартса параççĕ.

«Калашник хуçа çинчен хунă юрра» М. Ю. Лермонтов 1837 çулта, хăй çирĕм икĕ çулта чухне çырнă. Тепĕр çултан çак юрă «Литературные прибавления к Русскому Инвалиду» ятлă журналта пичетленсе тухнă. Вăл Лермонтов ячĕсĕрех пичетленнĕ (унăн айне «—въ» тесе паллă тунă). Çак произведенин чапĕ тĕлĕнмелле хăвăрт сарăлнă. Ăна пуринчен ытла вырăссен аслă критикĕ В. Г. Белинский хавасланса ырланă, пысăк хак парса мухтанă.

Шăпах çитмĕл çултан «Калашник хуçа çинчен хунă юрă» чăвашла пичетленсе тухнă. Ăна куçараканĕ вунçичĕ çулти чăваш ачи Константин Иванов пулнă. К. Иванов

«Нарспи» поэмăна çырман пулсан та, М. Ю. Лермонтовăн «Юррине» куçарнипех те, пирĕн литература историне паллă поэт ячĕпе кĕнĕ пулĕччĕ. Ку тĕлĕшпе, пирĕн шутпа, Ухсай Яккăвĕ тĕрĕс калать. «Иванов Лермонтов поэмине куçарни чăннипех те пысăк çĕнтерӳ пулнă, ăна малалла ĕçлеме хăюллă вăй панă».

Виссарион Белинский Лермонтов поэми çинчен çапла хĕпĕртесе çырнă: «Лермонтов поэмине эсир епле кăна тинкерсе пăхсан та, пĕр ытлашши е çитеймен сăмах, йĕр, сăвă, пĕр ытлашши сăнлăх тупаймăр, пĕр начар вырăн та çук, пурте унта кирлĕ, тулли, вăйлă. Лермонтовăн поэми — сулмаклă япала, пиçсе çитнĕскер, вăл мĕн чухлĕ илемлĕ, çакăн чухлех халăхăн».

Эпир, Иванов вăйне пĕрре ӳстермесĕрех, вăл куçарни çинчен те Белинский сăмахĕсемпех калама пултаратпăр. Лермонтов поэми чăваш чĕлхинче те вырăсли пекех янăрать, пĕрре те урăх чĕлхерен куçарнă пек туйăнмасть (пирĕн хальхи хăшпĕр поэтсем вырăсла произведенисене куçарас теççĕ пулсан, К. Ивановран вĕренччĕр!)

«Нарспи» поэмăна К. Иванов 1907 çул вĕçĕпе 1908 çул пуçламăшĕнче çырнă пулмалла. 1908 çулта вара ăна, халăх хушшинче çырса илнĕ фольклор произведенийĕ вырăнне хурса, эпир çӳлтерехре асăннă кĕнекере пирвайхи хут пичетлесе кăларнă. Унта унăн чăн-чăн авторĕ К. Иванов пулнине, «Нарспи» оригиналлă произведени пулнине кăтартман (ку ĕç çав тĕлĕшпе М. Ю. Лермонтовăн «Юррин» историйĕ пекрех пулса тухнă).

«Чăваш халлапĕсем» кĕнекене кăларакан И. Я. Яковлев, «Нарспи» авторĕн ятне тӳрех кăтартмасăр, патша чиновникĕсене улталаса, «Нарспие» юмах шутне кĕртсе, К. Ивановăн чи хăватлă произведенине чăваш халăхĕ патне çитернĕ.

«Нарспи» поэмăна автор ятне кăтартмасăр кăларма И. Я. Яковлева тата тепĕр сăлтав хушнă: вунçичĕ çулхи Иванова Чĕмпĕрти шкулта пулса иртнĕ забастовкăна хутшăннăшăн 1907 çулхи март уйăхĕнче шкултан кăларса янă пулнă. Çавăнпа та «Чăваш халлапĕсене» пичетлесе кăларнă чухне И. Я. Яковлев урăхла тума кăштах шикленнĕ те пулмалла.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн культурăна патша йĕрки хĕссе тăнă пирки, унăн кашни чечекнех патша чиновникĕсен атти таптанă пирки, ăна кăкласа хăртнă пирки «Нарспие» фольклор произведенийĕ ячĕпе витсе кăларнă.

«Нарспи» пичетленсе тухнă вăхăт йывăр вăхăт пулнă. Патша министрĕ Столыпин революционерсене хаяррăн пĕтерсе тăкасси çинчен закон кăларнă. Ирĕклĕн шухăшлакан кашни çыннах, кашни революционерах Столыпин «галстукĕ», урăхла каласан, такансенчен çакса вĕлермелли пăяв, хăратса тăнă. 1906 çултан пуçласа 1909 çулччен Столыпин законĕ тăрăх икĕ пин çын ытла çакса вĕлернĕ, 25 пин çынна каторгăпа ссылкăна янă, тĕрмесене хупса лартнă.

Шăпах Столыпин саманинче, 1907—1908 çулсенчи йывăр кунсенче, К. Иванов, пурнăç тĕксĕмленнине çамрăк чĕрипе малтанах сиссе, çапла çырнă:

Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек...

Ун чухнехи хăрушă саманан ирсĕрлĕхне пăхмасăрах, «Нарспи» пичетленсе тухнă «Чăваш халлапĕсем» кĕнекен малтанхи экземплярĕсем тĕттĕм чăваш ялне çитнĕ. Çак ирĕклĕхе юратакан поэтăн поэмине хут вĕренекен чăваш ачисем хĕллехи сивĕ каçсенче тăвăр та пăчă пӳртсенче шăппăн-шăппăн пăшăлтатса вуланă, хут пĕлмен амăшĕсемпе аппăшĕсем тĕлĕнсе итленĕ, йăваш чунĕсемпе хурланнă, ĕçре хытнă аллисемпе куçĕсене хупласа йĕнĕ...

1914 çулта пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнă. Российăри халăхсем çине пысăк хуйхă тиеннĕ. Çакăн чухне те чăваш халăхĕ хăйĕн юратнă поэтне манман. Салтака каякан çамрăксем «Нарспи» поэмăна кутамккасене чиксе фронта илсе кайни те пулнă.

Нарспипе Сетнерĕн сăнарĕсем пӳртрен пӳрте, ялтан яла çӳренĕ, халăхăн ăс-тăнне кĕрсе вырнаçнă, чĕре патне çитсе чун хавалне хускатнă. Анчах вулакансем çав чаплă произведенин авторĕ К. В. Иванов пулнине нумайччен лайăххăн пĕлеймен. Унăн чăн-чăн талантне хаклакан та ун чухне пулман. Вăл хăйĕн юратнă ĕçĕнче — литературăра ытларах, хытăрах ĕçлетĕр тесе, ăна никам та хавхалантарман,— И. Я. Яковлев пек тăван халăхшăн тăрăшакан уйрăм çынсем çеç ăна пулăшнă.

Октябрьти Аслă социализмлă революци хыççăн тин «Нарспи» чăваш халăхĕ хушшинче çеç мар, ытти халăхсем хушшинче те паллă вырăн йышăнса тăракан произведени пулчĕ. Унăн художествăллă пахалăхне совет çыннисем кăна тивĕçлĕ хак пачĕç.

Константин Иванов поэт ăсталăхне вырăссен прогрессивлă литературинчен вĕреннĕ. Унăн литературăри учите-

лĕсенчен пĕрремĕш выранта тăраканни чăннипех те М. Ю. Лермонтов пулнă. К. Иванов Лермонтовăн юррисемпе сăввисене куçарнă çеç мар, вăл унăн поэзири хăватне илме тăрăшнă, Лермонтов пек чун хавалĕпе çунса ĕçленĕ.

1825 çулти декабрĕн 14-мĕшĕ хыççăн патша Российинче пуçланнă реакци вăхăтĕнче харсăр М. Ю. Лермонтов пуç усмасăр ĕçленĕ пекех, 1905—1907 çулсенчи революци хыççăн пуçланса кайнă хура реакци вăхăтĕнче К. В. Иванов, прогрессивлă çул çинче тăрса, чăваш литератури ялавне çĕкленĕ, этемĕн ырă ĕçне мухтаса, çутă ĕмĕтлĕ, ырă шухăшлă произведенисем çырнă. Вĕсем иккĕшĕ те гражданла поэтсем пулнă, самана ыйтнине палăртакан, чун-чĕререн халăха паранса ĕçлекен поэтсем пулнă.

К. Иванов хăйĕн «Нарспи» поэмипе чăваш литературин çулне такăрлатнă. Çакна чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер хăйĕн «Нарспи» авторне ятлă сăввинче питех те лайăх каласа парать.

Вăл çурхи юр айĕнчен
Пĕччен тухнă чечек пек,
Ирхи шуçăм ӳкиччен
Хăпаракан çăлтăр пек,—
Пĕтĕм чăваш çĕршывне
Çурхи илем кĕриччен,
Ун ялĕсем çинелле
Çурхи шуçăм ӳкиччен,—
Чуралăхри чĕлхене
Шанчăк пама пуранна,
Тухас сăвăç туссене
Çул кăтартма пуçлана...

2

Чаплă поэма—«Нарспи» çур ĕмĕре яхăн ĕнтĕ вулакансен чĕрисенчен туха пĕлмест, вăл халăх чĕрине, шухăш-кăмăлне шаларах та шаларах кĕрсе пырать.

Мĕншĕн вăл çавăн пек? Мĕншĕн «Нарспие» кашниех юратса вулать? Мĕншĕн ăна ваттисем çеç мар, пирĕн вăхăтра çуралса ӳснĕ çамрăксем те чун-чĕререн кăмăлласçĕ? Мĕншĕн çак поэма кивелме пĕлмест?

Мĕншĕн тесен К. Иванов çырнă «Нарспие» пурнăç ӳкерсе сăнарланă, вăл пурнăçпа ӳснĕ, пурнăçпа пĕрле утакан поэма. Унăн тĕп шухăшĕ — гуманистла шухăш.

Мĕншĕн тесен «Нарспи»—халăх кăмăлне палăртса çырнă произведени. Унта эпир халăхăн чи паха шухăш-туйăмĕсене тупатпăр. Вĕсем халĕ те пирĕн чĕре хĕлĕхĕсене ăшшăн

перĕнсе, чунăмăрсене лайăх сисĕм кĕртсе, ырă ĕмĕтсемпе юрлаттараççĕ.

Мĕншĕн тесен «Нарспи»— этем тивĕçлĕхĕпе, граждан-лăх шухăшĕпе пурăнма вĕрентекен произведени. Вăл çам-рăклăх вăйĕпе, пурнăç туртăмĕпе çиççе тăрать. Кирĕк-тусан çĕнеймест, тĕксĕмлĕх сăнĕ витеймест ăна.

«Нарспи»— этемĕн ырă шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене хускатакан, çынна чăннипех те ырра вĕрентекен илемлĕ произведени: вăл — çуркунне юрри, çурхи хĕвел ăшши, ешĕл вăрманăн, йывăçсен, чечексен шăрши, вĕçен кайăксен сасси, вăл — шыв-шурсен кĕмĕл шăнкăравлă сасси...

«Нарспи»— хастар чĕреллĕ çынсене кивĕ пурнăçа хирĕç кĕрешме чĕнекен поэма, ирĕклĕхе савакан, ирĕклĕхе мухтама чĕнекен поэма, ирĕклĕхе савакан, ирĕклĕхе мухтакан чĕресен ялавĕ.

Ку вăл акă мĕншĕн çавăн пек пулма пултарнă: Константин Иванов поэт-демократ; унăн поэзийĕ — пĕтĕмпех гражданла поэзи; халăх ĕмĕт-шухăшне кăтартакан поэзи; унăн сасси — самана сасси. Вăл тата çакăнтан та килнĕ: Иванов произведенийĕн никĕсĕсенче выртакан эстетикăлла тĕп принципсем халăх тунă ĕçсен илемлĕхĕнчен, унăн кĕрешĕвĕнчен тухса тăраççĕ. К. Ивановăн эстетикăллă ăнланăвĕсем халăхăн малта пыракан сийĕсен эстетикăллă ăнланăвĕсем пек пулнă. Вăл пысăк та вăйлă туйăмсене пит те пысăк ăсталăхпа сăнласа панă.

Константин Ивановăн — чăваш поэзийĕн никĕсне çирĕплетнĕ поэтăн — произведенийĕсем питех те тарăн шухăшлă, вĕсенче — революцичченхи чăваш халăхĕн пурнăçĕ палăрса тăрать. Çавăнпа та унăн произведенийĕсене халăх юратать. Халăх кăмăлне кайнă, халăх юратса йышăннă произведенисем вара чăннипех те вилĕмсĕр, вĕсем халăхпа пĕрле пурăнаççĕ, ĕмĕртен ĕмĕре куçса пыраççĕ.

«Нарспи» шăпах çавăн пек произведенисен шутне кĕрет. Вăл кашни вулакан кăмăлне сисмен çĕртенех çĕклентерсе ярать, унăн шухăш-кăмăлĕсене хускатса, илемлĕх туйăмĕсене вăратать. «Нарспи» этеме хăйĕн вăй-халне ĕнентерет, ун çине шантарать.

Мĕн çинчен çырнă-ха унта?

«Нарспи» поэмăра чăвашсен пурнăçĕнчи пĕр-пĕтĕм эпоха çинчен çырса панă, вăл пĕр-пĕтĕм эпохăри обществăллă аталанăвăн туртăмĕсене çутатса парать. Çакă вăл — Российăра капитализм аталанса пынă вăхăт. Российăра капитализм ӳссе сарăлса пынă май çав аталану чăваш çĕршывĕ

пек тĕттĕм кĕтессене те кĕрсе пынӑ. Чӑваш ялĕнче те çĕр çитмен пирки, выçлӑх пирки хĕсĕнсе-пĕсĕнсе пурӑнакан чухӑнсем ытларах та ытларах курӑна пуçланӑ(М. Ф. Федоров хӑй вӑхӑтĕнче ун пек чухӑнсем çинчен «Хĕвел ансан Хĕветĕр» тесе юптарса çырнӑ), пуянсем-кулаксем пуçланса кайнӑ.

Обществӑра çĕнĕ вӑйсем малти вырӑна тухса пынӑ. Чӑвашсем те çак процесран аякра тӑман: вĕсем хушшинче те классем çитĕннĕ, кĕрешнĕ; классем хушшинчи хирĕçӳсем тарӑнланнӑçемĕн тарӑнланнӑ [1]. Вӑл хирĕçӳсем тĕрлĕ формӑсемпе палӑрса тӑнӑ. Ку процесс чӑваш халӑхне те, Российӑри ытти халӑхсемпе пĕрлех, 1905—1907-мĕш çулсенче пулса иртнĕ буржуалла-демократиллĕ революцие хутшӑнасси патне илсе çитернĕ.

К. В. Иванов — реалист. Вӑл халӑх пурнӑçĕн паллӑ енĕсене, обществӑллӑ аталанӑвĕн тĕп туртӑмĕсене курса тӑнӑ, ӑнланнӑ. Поэт чӑваш ялĕн патша вӑхӑтĕнчи пурнӑçне, унти класлӑ сийсене курса, реалистла çутатса панӑ.

Силпи ялĕ çинчен Иванов акӑ мĕнле çырать:

Силпи ялĕ — пуян ял,
Ларать вӑрман ӑшĕнче.
Кантур пекех çурчĕсем
Ват йӑмрасем айĕнче.

Ялĕ тавра укӑлча,
Çĕнĕ çатан укӑлча,
Кив капанлӑ анкарти,
Тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча.

Аслӑ урам тӑршшĕпе
Хӑма витнĕ çурчĕсем,
Урам икĕ айккипе
Ем-ешĕлех сачĕсем.

Çуртсем тавра кил карти
Чул хӳме пек çавӑрнӑ.
Сарӑ хапха килсерен
Чĕнтĕрленĕ тӑрӑллӑ.

---

[1] Ку тĕлĕшпе В. И. Ленин 1897 çулӑн вĕçĕнче, хӑйĕн «Задачи русских социал-демократов» ятлӑ произведенийĕнче çапла çырнӑ: «Что касается до демократических элементов в угнетенных народностях и в преследуемых вероучениях, то всякий знает и видит, что классовые противоречия внутри этих категорий населения гораздо глубже и сильнее, чем солидарность всех классов подобной категории против абсолютизма и за демократические учреждения.» (Сочинения, 4-е изд., том 2, стр. 311—312).

Силпи ялĕ — аслă ял,
Хула тейĕн инçетрен.
Ахăр, кунти чăвашсен
Мулĕ пур-тăр çав вĕсен.

Поэт кунта Силпи ялĕн тулаш енне кăтартса пачĕ. Çак тулаш енĕ («инçетрен хула» пек курăнаканскер) тӳрех куç умне тухса тăрать, унти пурнăçăн ăшчиккине витсе хурать, социаллă йĕрне тупма кансĕрлет. Çавăнпа ĕнтĕ К. Ивановăн çак строфисем хăшпĕр «критиксене» чăннипех те ăнран ячĕç. Вĕсем çав вырăна илсе, пирĕн классика, халăх поэтне, кулаксен, пупсен поэчĕ туса хума хăтланса пăхрĕç. Вĕсем поэтăн: «пурăнăçсем, ах, аван аслă Силпи ялĕнче», тенĕ сăмахĕсенче чакаланчĕç, çăтмах пек туйăнакан (туйăнакан çеç!) Силпи ялĕнче чухăнсен пурнăçĕ тамăкри пек асаплине ăнланасшăн пулмарĕç.

Хăйĕн поэминче К. Иванов чăваш халăхĕ классем çине пайланнине уççăнах кăтартса пачĕ. Пирĕн шутпа, вăл поэмăра тахçанхи патриархаллă вăхăта мар, XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурпайĕнчи, тĕрĕсрех, 80—90-мĕш çулсенчи вăхăта, 1905—1907 çç. революци умĕнхи пысăк тапхăра, илсе кăтартнă. Унта эпир чăваш ялĕн пĕр-пĕрне тĕлмехирĕç икĕ пайне — кулаксемпе чухăнсене куратпăр: вĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнаççĕ, килĕштерми кĕрешеççĕ.

Пуянсем — михетерсемпе тăхтамансем; чухăнсем — сетнерсем, Михетер патĕнче ĕçлекен тарçăсем, хырăмĕ питĕ выçнипе Силпи ялнелле пăхакан кĕтӳ ачисем, сăри пулмасан, хăйсене уйранпа та çырлахтаракансем тата ыттисем те. Паллах, чăваш ялĕнче вăтамсем те пулнă, анчах поэт вĕсене кăтартса парас задача лартман.

Михетер пек пуянсем Силпи ялĕнче пĕрер-икшер, виçшер çеç; ыттисен йышĕ — вăтам пурăнакансемпе чухăнсен, тарçăсен йышĕ пысăк. Чухăнсен йышне çултан-çул ӳстерекенĕ — мул тĕнчи, капитализм, «кантур пекех çуртсенче» пурăнакансен, тĕрлĕ михетерсен пусмăрĕ.

Акă çĕрме пуян Михетер мухтанать:

«... Михетере мĕн çитмен?
Мĕнĕм çук-ши çуртăмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕртнĕ пир
Сахал-ши-мĕн çӳпçемре?

Тырă-пулă туллиех
Ишĕлмест-и кĕлетре?
Çу, сĕт-турăх, сăра-пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?».

Малалла К. В. Иванов Михетерĕн хуçалăхне калама çук уççăн кăтартса парать:

Чăн сăмахăн суйи çук:
Михетерĕн мĕн çитмест?
Пĕтĕм ялта пĕр пуян,
Ăна никам çитеймест.

Унăн çурчĕ хула пек,
Кĕрсен, витĕр тухма çук.
Хуралтисен тăррине
Чăх-чĕп вĕçсе çитме çук.

Картиш тулли япала
Купаланса выртаççĕ,
Кĕлет тулли тыррисем
Тăкăнас пек тăраççĕ.

Урхамах пек лашисем
Утă-сĕлĕ çиеççĕ,
Унăн выльăх-чĕрлĕхсем
Пичĕке пек çӳреççĕ.

Турикасри çак кил-çурт
Аякранах курăнать—
Пирĕн вăтă Михетер
Тивĕçлипе мухтанать.

Ку йĕркесенче Михетерĕн пурлăхĕ çеç мар, çав пурлăхăн пысăкăшĕ те курăнса тăрать. Поэт вулакана Михетерĕн хула пек çуртне илсе кĕртет те çав никам çитеймен пуянăн пĕтĕм пурлăхне кăтартса çӳрет: хуралтисене, вĕсен тăррисене, купаланса выртакан япалисене, кĕлетри тыррисене, чăх-чĕпне, урхамах пек лашисене, пичĕке пек выльăхĕсене тата ыт. те кăтартать; поэт Михетерĕн нӳхрепне те, çӳпçисене те манса хăвармасть,— пурне те уçса кăтартать. Çав вăхăтрах вăл Михетерĕн мухтанчăк кăмăлне те яр уççăн палăртать: «тивĕçлипе мухтанакан» вăтă Михетер пулипулми çынпа хутшăнмасть, вăл «витĕр курăнакан» çынсемпе, урăхла каласан, çурт-йĕрсĕр, выльăх-чĕрлĕхсĕр аранаран тĕккеленсе пурăнакансемпе калаçмасть.

Пĕтĕм ялти «пĕр пуян», Михетер, хăй пекех тепĕр пуяна, Хушăлкари вăтă Тăхтамана, хăйĕн хĕрне вăйпах качча парать.

Çакă икĕ пуян çинчен ялта акă мĕн калаççĕ:

Пулас туя ялйышсем
Тӳсеймесĕр кĕтеççĕ:
— Икĕ пуян пĕрлешсен,
Шеп те пулĕ туй!— теççĕ.

Çапла, Силпи — пуян ял, мĕншĕн тесен вăл михетерсен ялĕ. Анчах çав вăхăтрах вăл сетнерсен ялĕ. Сетнер чухăн, унăн мулĕ çук. Акă чухăн Сетнерĕн килĕ:

Ял вĕçĕнче, Тукасра,
Пĕчĕкçеççĕ пӳрт ларать.
Амăшĕпе çак пӳртре
Сетнер ача пурăнать.

Чипер ача Сетнерĕн
Пĕр урхамах лаши пур,
Вата карчăк амăш пур,
Вĕри юнлă чĕри пур.

Кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме
Икĕ вăйлă алли пур.
Тăшман пуçне пĕтерме
Вĕри вут пек çиллли пур.

Унтан урăх Сетнерĕн
Нимĕн те çук япала.
(Анчах асту: Михетер
Хĕрне памасть çукалла.)

Çак строфасенчен революцичченхи чăваш ялĕн социаллă сăнĕ курăнса тăрать. Çапла ĕнтĕ, Силпи ялĕнче «пĕчĕкçеççĕ пӳртре» тата «хула пек» çуртра пурăнакансем пур. Михетер туй тăвать, сăра-эрех ĕçтерсе хĕр парать. Шавлаççĕ те юрлаççĕ, ташлаççĕ те сикеççĕ. Анчах çав вăхăтрах ялти çынсем «Михетертен шикленсе» калаçаççĕ. Михетер картиш тулли купаланса выртакан япаласем хушшинче мухтанса çӳрет пулсан, Сетнер кунĕн-çĕрĕн ĕçлет, вĕри вут пек çиллипе тăшман çине тарăхса çӳрет.

Эппин: Силпи — класлă ял. Унти кĕрешӳ ахаль кĕрешӳ мар, — класлă кĕрешӳ.

3

Сетнерпе Нарспи, ирĕклĕхе юратакан çамрăксем, пуянсен тĕнчинчен хăтăласшăн, вĕсем ирĕке тухасшăн.

«... Лашам çине ларăттăм,
Айккалла ку ялтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм», —

тет Сетнер. Нарспи те çавăн евĕрлĕ ĕмĕт-шухăшпах пурăнать. Поэт калаçнă тăрăх, Силпире савăнăç тупайман Нарспи:

Кайăк чунĕ пулсассăн,
Йĕрĕччĕ те кулĕччĕ;
Çуначĕсем пулсассăн,
Вĕçĕччĕ те кайăччĕ.

Анчах Сетнерпе Нарспи ниçта та «вĕçсе» каяймаççĕ. Нарспи, «ашшĕ» законне, мул законне пăхăнмасăр, кĕрешĕве тухать, айăплисене тупать.

«Эпĕ асап курнишĕн ху айăплă, эпĕ мар»,— тет Нарспи пуян ашшĕне хирĕç.

Тепĕр енчен, Михетерпе унăн карчăкĕ те Нарспипе Сетнере тăшман вырăннех хураççĕ. Вĕсем, Сетнер килне пырсан, сура-сура акă мĕнле ылханаççĕ:

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!

Тĕрĕссипе каласан, Нарспипе Сетнер — иккĕшĕ те кĕрешекен çамрăксем, иккĕшĕ те хăйсен вăйĕпе малалла, пурнăç патнелле туртăнакан çынсем. Акă илер-ха, сăмахран, Нарспипе Сетнерĕн çӳлĕ валак патĕнче каланă сăмахĕсене. Поэт çав сăмахсенче «ăрăскала» кĕрешӳре, кивĕ тĕнчене хирĕç пыракан кĕрешӳре çапăçса илме чĕнет.

— Çаплах вара, Нарспиçĕм,
Çук-ши манăн ăрăскалăм?
Çаплах сана ют çĕре
Илсе кайĕ-ши усал?—

тесе ыйтать çулăм чĕреллĕ Сетнер. Нарспи те çавăн пек ыйтăвах лартать:

Тăшман ытла хаяр, тет,
Епле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта каяс, мĕн тăвас?—

тет вăл. Ку ыйту çине вара Сетнер хăех ответ парать:

— Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Вата карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур,

Вĕсенчен те хаклăрах
Чунăм савни эсĕ пур,

Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур,

Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анчах ăна пĕтерсен,
Унтан усал тĕнче пур,—

тет Сетнер.

Çапла, юлашкинчен, Сетнер таçта вĕçсе каясси çинчен мар, хăйĕн тăшманне пĕтересси çинчен калать. Çапла, Сетнерĕн шухăшĕ сарăлсах, çĕкленсех пырать. Вăл социаллă шухăш пулса тăрать. Арăскал тупас тесен, пуянсемпе кĕрешмелле, усал тĕнчепе кĕрешмелле,— çакă «Нарспи» поэмăн витĕр витнĕ тĕп шухăшĕ. Ку вăл, çав вăхăтрах, Ивановăн пĕтĕм творчествинче тĕп туртăм пулса тăрать. Поэмăн çак прогрессивла-историллĕ туртăмĕ ун чухнехи пĕтĕмĕшле социаллă обстановкăран килнĕ, поэт çав обстановкăна малта пыракан сийсем енчен пăхса ăнланнипе хăйĕн шухăшĕсене уçса, вăйлăлатса пынă.

Çапла, «Нарспи» авторĕ вулакана пысăк ыйту патне çитерсе тăратать: михетерсемпе тăхтамансем — тăшмансем; вĕсене вăйлă алăпа пĕтерме те пулать; тăшмана пĕтерсен, унтан усал тĕнче юлать. Усал тĕнче пуррине Иванов пĕлет, анчах çав усал тĕнчене мĕнле пĕтересси çинчен вăл «Нарспире» нимĕн те каламасть; ăна мĕнле пĕтермеллине пĕлмест. Вăл «усал тĕнчене» мĕнле пĕтерес шухăш çӳлĕшне çити çĕкленеймен.

К. Ивановшăн пуринчен те илемли — вăл пурнăç хăй. Поэт Нарспипе Сетнерĕн сăнарĕсене, поэзи меслечĕсемпе ӳкерсе, çав чи илемлĕ япалана, урăхла каласан, шăпах пурнăçа юратма чĕнет. Çавăнпа ĕнтĕ эпир К. Ивановăн поэмине тулли кăмăлпа вулатпăр, унăн эстетикине йышăнатпăр, çӳле хурса хаклатпăр.

Анчах «Нарспи» поэма пурнăçпа мар, вилĕмпе вĕçленет (Сетнер те, Нарспи те пĕтет). Çапах та, Нарспипе Сетнерĕн пурнăçĕ поэмăра тĕп вырăн йышăнса тăни, вĕсен кĕрешĕвĕ, вĕсен таса та илемлĕ, вăйлă та тарăн юратăвĕ пире малтанах çирĕп кăмăл парать те Нарспипе Сетнерĕн вăхăтсăр вилĕмĕшĕн пирĕн çилĕсен хаярлăхне тăхтамансене, михетерсене хирĕç çĕклет. Çавăн чухне вара куç умне кĕрешекен Сетнер тухса тăнăн туйăнать, кĕрешекен Нарспи каланă сăмахсем кĕретĕнех илтĕннĕ пек туйăнать. Вăл пĕтĕм чунтан тарăхса, хаяррăн, çине-çинех, пилĕк-ултă хутчен акă мĕн калать:

«Качча пачĕç ирĕксĕр —
Пулмарĕ-çке ырлăха.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха.

Качча пачĕç ирĕксĕр—
Савăнăç çук ку тĕнчен.
Атте-анне ăссăртан
Савни юлчĕ пĕр-пĕччен.

Качча пачĕç ирĕксĕр—
Ятăм çĕрчĕ тахçанах.
Атте-анне ăссăртан
Пулчĕ асапăм анчах.

Качча пачĕç ирĕксĕр—
Манăн пурăнăç хĕн-хур,
Атте-анне ăссăртан
Капла пурăнса мĕн пур?

Качча пачĕç ирĕксĕр—
Пулмарĕ-çке ырлăха,
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха».

«Анчах манăн савни пур—
Çăлаймĕ-ши вăл мана?
Унăн вăйлă аллисем
Пĕтермĕç-ши тăшмана?

Çук, пуçăма çийиччен
Тăшманăма пĕтерем,
Асапланса тӳсиччен
Тăхтамана... вĕлерем»—

тет Нарспи.

Нарспи те, Сетнер пек, «тĕнче» ыйтăвĕ патнех çитсе тăрать («савăнăç çук тĕнчен», тет вăл). Анчах вĕсем «усал тĕнчене» пĕтериччен тăхтамансене пĕтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем «усал тĕнчен» пысăкăшне, унăн вĕçне-хĕррине пĕлеймеççĕ-ха, тăхтамансене вара вĕсем кĕретĕнех кураççĕ, вĕсемпе кĕрешеççĕ.

Çапла, Нарспи Тăхтамана пĕтерет. Анчах вăл ăна вĕлермен пулсан, çав ирсĕр тăшмана пурпĕрех Сетнер пĕтерсе тăкнă пулĕччĕ. Нарспи хăйĕн ĕçне тунă чухне Сетнер те Тăхтамана пĕтерес шухăшпах килĕнчен тухса каять:

Сетнер утрĕ пĕр-пĕччен,
Кĕрсе кайрĕ вăрмана.
Нарспи асапне илтсе,
Вилĕм сунать тăшмана:

«Тĕттĕм пулĕ, каç пулĕ
Тăшман патне çитиччен,
Тăшман чĕри лăпланĕ
Хĕвел кусса тухиччен,

Хĕвел тухĕ, çутатĕ,
Этем тăрĕ ыйхăран.
Тăшман анчах вăранмĕ
Ыйхи ытла йывăртан.

Хĕвел тухĕ, çутатĕ,
Эпĕ пулăп вăрманта.
Тăшман, выртăн, хускалмăн,
Нарспи пулмĕ çуртăнта».

Çакă вăл — мул тĕнчинчен килсе тăракан хурлăха хирĕç тăни пулмасан, çăткăнлăха, чыссăрлăха, ăссăрлăха питлени пулмасан, мĕн пултăр-ха? Нарспи хăй те пĕтме хатĕр, анчах ахаль мар, вăл хăй пĕтнипе тăшмана пĕтерессшĕн. Харсăр шухăш! Кĕрешӳ çине шанни! Акă мĕнпе палăрса тăраççĕ Нарспи çине-çинех каланă (эпир курсивпа палăртнă) хăватлă сăмахсем.

Эппин, «Нарспи» поэма социаллă кĕрешĕве кăтартса панипе пĕрлех, вăл пусмăр тĕнчине, укçа-тенкĕ çинче, эксплуатаци çинче тытăнса тăракан «усал тĕнчене» пĕтерме чĕнет. Анчах поэт ăна, каллех калатпăр, мĕнле майпа пĕтермеллине кăтартса парайман.

«Нарспи» поэма — 1905—1907-мĕш çулсенчи революци вăхăтĕнче пулса çитнĕ произведени. Унта, çак революцичченхи вăхăта илнĕ пулин те, пĕрремĕш революци панă шухăш-кăмăл уççăнах сисĕнсе тăрать. 1905—1907-мĕш çулхи революцисĕр «Нарспи» çавăн пек вăйлă произведени пулман пулĕччĕ. «Нарспи» вăл чăннипех те пĕрремĕш революци панă парне пулса тăрать.

4

«Поэт, — тет В. Г. Белинский, — унăн талантĕнче нациллĕ кăмăл пулмасан, вăл яланах, ку е çав таран, вăхăтлăха пулнă, иртсе пыракан явлени пек, вăл — малтан хăйĕн турачĕсене сарлакан ӳстерсе янă, анчах тымарĕсене çĕр ăшне таранрах кĕртме вăй çитереймен пирки хăрса кайнă йывăç пек».

«Хӑрса кайнӑ йывӑҫ пек» поэтсен произведенийӗсем нумая пымаҫҫӗ. Вӗсем халӑх патне ҫитеймеҫҫӗ, ҫул ҫинчех ҫухалаҫҫӗ, халӑх кӑмӑлӗнче, ӑс-тӑнӗнче нимӗнле йӗр те хӑвараймаҫҫӗ. Константин Иванов пек поэтсем, халӑха нихҫан манми шухӑшсем парса, унӑн кӑмӑлне кӗрсе вырнаҫса, ӗмӗрсем урлӑ ҫутӑ ҫӑлтӑрсем пек курӑнса тӑраҫҫӗ.

Мӗншӗн Пушкин, Лермонтов, Некрасов халӑха ҫывӑх? Мӗншӗн вӗсен произведенийӗсем ҫаплах пирӗн кӑмӑлсене ҫӗклеҫҫӗ, шухӑшсене хускатса ырӑ туйӑм кӗртеҫҫӗ?

Мӗншӗн тесен, вӗсем чи малтан — халӑх поэчӗсем, наци поэчӗсем пулнӑ. Вӗсем вырӑс халӑхӗн нацилле кӑмӑлне, нацилле уйрӑмлӑхӗсене туллин кӑтартса панӑ, аслӑ вырӑс халӑхӗн ирӗке юратакан, ытти халӑхсене тӑванла сума сӑвакан шухӑшӗсене палӑртнӑ.

Мӗншӗн «Нарспи» вулакансене килӗшет, вӗсен кӑмӑлне ҫаплах ҫӗклетет?

Мӗншӗн тесен вӑл — аслӑ вырӑс халӑхӗн ирӗке юратакан литературинчен вӗренсе пынӑ поэтӑн произведенийӗ. Унта, чӑваш халӑхӗн нацилле кӑмӑлне кӑтартса панӑ вӑхӑтрах, мӗнпур халӑхсене килӗшекен шухӑшсене каласа панӑ. «Нарспи»— гуманизм шухӑшӗпе витӗр витнӗ произведени. Вӑл поэма этеме хӑйӗн вӑй-халне ӗнентерет, ун ҫине шанса пурӑнма вӗрентет.

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Вӑйли ҫук та этемрен,—

ҫак шухӑша, чӑн-чӑн гуманизмӑн принципӗсемпе килӗшсе тӑракан шухӑша поэт-мыслитель ҫеҫ каласа пама пултарнӑ. Чӑн-чӑн этеме мухтакан чаплӑ шухӑш «Нарспи» поэмӑн тӗпре тӑракан шухӑшӗ пулса тӑрать, ытти шухӑшсем вара пурте ҫав философиллӗ шухӑша пӑхӑнса тӑраҫҫӗ. (Паллах, этеме малти вырӑнта тӑратса мухтани Ивановчченхи вӑхӑтчен те пулнӑ. Анчах Иванов этеме мухтакан шухӑшсене механистла илмен, прогрессивлӑ литература ҫулӗнче пырса, пултаруллӑ ӗҫлесе ӑса илнӗ).

К. Ивановӑн ҫӗр ҫинче Этем хӑватлӑ пулса тӑма тивӗҫлӗ тенӗ шухӑшӗ — Максим Горькинни пек шухӑш. М. Горький, Этеме мухтаса: «Человек — это звучит гордо», тенӗ (тепӗр произведенийӗнче тата: «Превосходная должность — быть на земле человеком», тесе ҫырнӑ).

Чӑваш поэчӗ К. Иванов вырӑссен аслӑ писателӗпе, Максим Горькипе, пӗр вӑхӑтра, ирсӗр патша самани вӗсене пусмӑрланӑ пулин те, Этеме мухтанине, Этем ҫинчен кӑ-

мăлĕсене хăпартса витĕмлĕ сăмах каланине эпир паян кун та уйрăмах палăртатпăр. Совет Союзĕнче Этем пĕлтерĕшĕ кунран-кун ӳссе пырать пулсан, капитализмлă тĕнчере вара пачах урăхла: буржуаллă литература Этемĕн тивĕçне варалас шутпа, Этем чунĕ лапăрчăк та ирсĕр тесе ĕнентерес шутпа тем те пĕр хăтланать. Буржуази философийĕпе литератури çынсен чун-чĕрисене хăртса çĕртесшĕн, ĕççыннисен пусмăра хирĕç кĕрешес кăмăлĕсене путарса лартасшăн, çапла вара, капитализм пусмăрне тата та ытларах çирĕплетесшĕн. Тĕнчери прогрессивлă литературăпа реакциллĕ литературăсем хушшинче ним килĕшми хаяр кĕрешӳ пырать. Прогрессивлă литература пуçĕнче совет литератури, Этем пĕлтерĕшне чи çӳлĕ хисепе çĕклекен, ăна мухтакан, ăна хӳтĕлекен литература тăрать.

Çак кĕрешӳре эпир Константин Иванов пек писательсен ячĕсемпе тивĕçлипех мухтанатпăр, мĕншĕн тесен çав хастар писательсем, халĕ те, пирĕнпе юнашар тăрса, капитализма хирĕç — пăнтăхса пыракан усал тĕнчене хирĕç кĕрешеççĕ.

5

Константин Ивановшăн Этем чи малти, чи çӳлти вырăнта тăрать. Анчах мĕнле кăтартса парать-ха вăл çынсен сăнарне, çынсен характерне?

«Нарспи» поэмăри кашни герой иртнĕ саманан уйрăм сăнарĕ пулса тăрать. Михетерпе Тăхтаман — пуянсен, кулаксен сăнарĕсем; Сетнер — чухăнсен сăнарĕ; Нарспи — тĕрĕслĕхшĕн тăракан таса чĕреллĕ хĕрарăм сăнне кăтартса парать; Сентти — çамрăк ача çеç мар, вăл — нимĕнпе те пăсăлман çын сăнарĕ, вăл тап-таса чĕре.

«Нарспи» поэмăра, çак типсемсĕр пуçне тата Сетнер амăшĕпе юмăç старик çинчен асăнма пулать. Юмăç старик — авалхи йăласене, тĕшмĕшсене тытса пыракан çынсен сăнарĕ.

«Нарспире», çав тĕп геройсемсĕр пуçне, ятсăр çынсем нумай. Поэмăна вуланă чухне пĕрмаях ялти çынсене туйса тăратăн, халăх пуррине сисетĕн. Унта чăваш халăхĕн ĕçĕсем, йăлисем, шухăш-кăмăлĕсем, ĕмĕчĕсем палăраççĕ, чăваш юрри-кĕввисем илтĕнеççĕ.

«Нарспи» поэмăн геройĕсем — хăйсен сăнĕпе те, шухăшĕсемпе те манми геройсем. Поэмăна пĕрре вуласанах вĕсем асра тăрса юлаççĕ, шухăшласанах куç умне тухса тăраççĕ.

Акă, сăмахран, Нарспи. Мĕнле хитре вăл, мĕнле таса:

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет,
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек

Явăнаççĕ хыçалта
Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.

Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çĕкленет,
Çӳхе тути кулнă чух
Каччăн чунĕ çемçелет.

Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?

Кунта эпир Нарспи портретне куратпăр. Чăвашсем хитре хĕрсене сарă чечекпе танлаштараççĕ. К. Иванов та, чăваш фольклорне лайăх пĕлнĕскер, Нарспие «хирти сарă чечекпе» танлаштарса кăтартать.

Нарспи сăнне поэт тата ĕçре кăтартса парать. Акă Нарспи мĕнле ĕçлет:

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
Е пурçăн çип илет те
Юрла-юрла тĕр тăвать;

Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать,
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать;

Е пир тĕртме ларать те
Вылянтарать ăсине;
Е хултăрчă тытать те
Çипне тирет çĕррине;

Е сак çинчи кушакĕ
Питне çăва пуçласан,—
Апат хатĕр хăнашăн
Алли-ури çăмăлран...

Ку йĕркесем Нарспи портретне тата та уçăрах, илемлĕрех тăваççĕ. Ĕçлемен çын темле илемлĕ пулсан та, хăйĕн илемне çителĕклĕ таран кăтартаймасть. Çыннăн илемĕ, ăсĕ, кăмăлĕ нумай чухне ĕçре палăрать. Ĕçлекен çынна çеç халăх юратать.

Халăх каланă тăрăх, ĕç хуйха пусарать, ĕмĕте çĕклет.

Поэмăн пуçламăшĕнче эпир хитре хĕр ӳснине çеç куратпăр-ха. Унтан вăл «хирти сарă чечек пек» пулнине куратпăр. Малалла вуласан, куç умне Нарспин ĕçри сăнĕ тухса тăрать. Вăл вылямa-кулма çеç мар, ĕçлеме те лайăх пĕлет,— пур çĕрте те типтерлĕ тытать.

Нарспи Сетнере юратать. Çак юратура вĕсен шухăшкăмăлĕ палăрать. Нарспипе Сетнере автор Михетерпе Тăхтамана хирĕç тăратнă. Ку вăл икĕ лагерь. Çак лагерьсем хушшинчи кĕрешӳре Сетнерĕн вăйĕпе сăнĕ çеç мар, унăн социаллă шухăшĕсем те курăнаççĕ.

Сетнер — чухăн ача; сарă каччă. Унăн портретне эпир çак строфасенче куратпăр:

Çӳлĕ валак патĕнче
Вată йăмра ешерет.
Куллен ирех çавăнта
Сетнер Нарспие кĕтет.

Кĕте-кĕтех шăварать
Урхамах пек лашине.
Шыва анать витрепе
Нарспи куллен ирхине.

Нарспи икĕ витрипе
Шăлтăр-шалтăр килет-çке.
Савăннипе Сетнерин
Чĕри кăлт-кăлт сикет-çке.

Нарспин çӳхе тутисем
Кулаççĕ-çке таçтанах,
Çӳлĕ валак пуçĕнче
Сетнер тăрать çутăлсах.

Йăлтăр-ялтăр куçĕсем
Сар хĕр çине пăхаççĕ,
Сар мăйăхлă тутисем
Ăшă сăмах калаççĕ.

Кунта автор Нарспи портретне татах та анлăлатнă, çитмен тĕссене çитернĕ. Çав вăхăтрах Сетнер сăнне те кăтартнă.

Сетнерпе Нарспин телей çук. Çак çамрăксен телейне,

юратăвĕпе ĕмĕтне михетерсемпе тăхтамансем пĕтерсе хураççĕ.

Михетер — çичĕ тарçăпа пурăнакан çĕрме пуян, усал кулак, мухтанчăк этем. Вăл укçашăн хĕрне сутса ярать. Укçа ăна уртарать, ăсран кăларать.

К. Иванов, Михетер портретне кăтартса панă чухне, йытă пит-куçне асра тытнă. Сăмахран, çак тĕслĕхсене илме пулать:

Нарспи тĕлĕк тĕлленет:
Ашшĕ йытă пулнă та,
Шăлĕсемпе шаккаса,
Сиксе çӳрет вăрманта.

Е тата:

Урнă йытă Михетер
Хăй саламат йăтрĕ те
Тытăнчĕ-çке тулама
Çыхса хунă Сетнере.

К. Иванов архивĕнче тĕлĕнмелле картина сыхланса юлнă. Вăл картина çинче эпир хăрушла ирсĕр йытă пуçне куратпăр. Картина айне Иванов «Нарспи тĕлĕкĕ» тесе çырнă. Çакă вăл — шăпах урнă Михетер пулнă.

Тăхтаман портретне Иванов тата уççăнрах кăтартса парать.

Акă Тăхтаманăн, «чипер каччăн», «ырă кĕрӳн» сăнарĕ пуçран тытăнса ура тупанне çитиччен:

Лаптак сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал;
Лаши вĕçсе пырупа
Пичĕ-куçĕ пит усал.

Хура сăхман, сар çĕлĕк,
Çамки çинче тенкĕпе;
Шурă чăлха-çăпата
Пит килĕшет кĕрĕве.

К. Иванов Тăхтаманран кулать, унăн тискерлĕхне кăтартса парать, питлесе тăрăхлать:

Хушăлкара туй иккен,
Туйĕ ытла шеп иккен;
Шур сухаллă Тăхтаман
Туйне тăвать, тет, иккен

Чипер каччă Тăхтаман
Силпи хĕрне çаклатнă.

Е тата тепĕр тĕслĕх:

Ырă кĕрӳ Тăхтаман
Туй кĕлетне астăвать,
Куллен-кунах арăмне
Саламатпа кастарать.

Мĕскĕн арăмĕ тӳсет
Асапсене чĕнмесĕр.
Ухмах упăшка хĕнет
Мĕн пуласне пĕлмесĕр.
. . . . .

Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар унăнне!
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!

Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан култăр!
Асаплантар, Тăхтаман,
Нарспи часах ватăлтăр!

Анчах кайран хăвăнах
Ӳкĕнмелле ан пултăр.
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан култăр!

Михетерпе Тăхтаманăн, тĕрĕссипе каласан, çын сăнарĕ те çук. Вĕсем иккĕшĕ те мулшăн, укçа-тенкĕшĕн хыпса-çунса çӳрекен çăткăнсем. Вĕсем иккĕшĕ те намăс-симĕсне маннă, этем чысне çухатнă,— вĕсемшĕн хакли этем чысĕ мар, укçа.

Тăхтаман Нарспие качча илет. Анчах юратса илет-и-ха? Çук, юратса мар. Тăхтамана юрату туйăмĕ хускатмасть, унăн юратас туйăмне укçа хăртса, пăсса хунă. Тепĕр енчен тата, çутçанталăк хаех, чĕрĕ тĕнче законĕсем тăрăх, унăн хĕрарăма юратас туйăмне хăртма тытăннă, питне-куçне пĕркелентернĕ, сухалне кăвакартнă... Çитменнине тата çуралнă чухнех ăна пурнăç кĕске ăс панă.

Эсĕ çамрăк хĕрарăма юратас тетĕн пулсан, ху та çамрăк пул, вăл та сана юраттăр. Ху юратакан хĕрарăм сана юратмасть пулсан, урăхла каласан, санăн юратăву хĕрарăм чĕрине хускатмасть, ун енчен юрату тĕл пулмасть пулсан, çапла вара, эсĕ çав хĕрарăмшăн вăл юратнă çын пулса тăраймастăн пулсан,— санăн юратăву вăйсăр пулса тăрать. Анчах Тăхтаманăн чăн-чăн юрату çук-çке. Çак ватсупнă этем çамрăк Нарспие юратмасăрах, хĕрарăм юратăвĕсĕрех, иккĕн пĕрле пулса, хăйĕн арлăх ыйтăвĕсене выльăхла кăнăçтарса

пурӑнасшӑн. Таса чун-чӗре, таса шухӑш-кӑмӑл ун пек «юратӑва» йышӑнмасть, тӳсме пултараймасть. Анчах укҫа ҫинче тытӑнса тӑракан общество ҫавӑн пек юратӑва лайӑх тӳсет, кӑмӑлласа ырлать. Ун пек обществӑра укҫа хуҫи, Маркс тӑрӑхласа ҫырнӑ сӑмахӗсемпе калас-тӑк, ҫакӑн пек шухӑшлать:

«Укҫана пула маншӑн мӗн пурри, эпӗ тӳлеме пултарни, урӑхла каласан, эпӗ укҫа парса сутӑн илме пултараканни — вӑл пӗтӗмпех *эпӗ хам*, укҫа хуҫи. Укҫа вӑйӗ мӗн тери хӑватлӑ, манӑн вӑй та ҫавӑн пекех хӑватлӑ. Укҫа пултарулӑхӗ — ман пултарулӑх, укҫа хуҫи пултарулӑхӗ; ҫак пултарулӑх — пысӑк вӑй. Ҫавӑнпа та эпӗ пурри, эпӗ пулма пултарни пӗрре те манӑн уйрӑмлӑхӑмран килмест, укҫаран ҫеҫ килет. Эпӗ чӑлах-чӗлӗх сын, анчах эпӗ *чи хитре* хӗрарӑма сутӑн илме пултаратӑп; апла пулсан, эпӗ ӗнтӗ чӑлах-чӗлӗх мар, мӗншӗн тесен ҫав чӑлах-чӗлӗхӗн илемсӗрлӗхӗ, унӑн ҫынсене манран пистерекен, тӗртсе яракан вӑйӗ укҫана пула пӗтсе ларнӑ. Ан тив, эпӗ — хамӑн уйрӑмлӑхӑм тӑрӑх — *уксах* ҫын пулам; анчах укҫа мана 24 ура парать, эпӗ ӗнтӗ уксахламастӑп; эпӗ ирсӗр, чыссӑр, ухмах та тӳрӗ мар ҫын, анчах укҫа чыслӑ — апла пулсан, укҫа хуҫи те чыслӑ ҫын пулса тӑрать. Укҫа — чи пысӑк ырлӑх,— апла пулсан, укҫа хуҫи те ырӑ ҫын; кунсӑр пуҫне укҫа мана тӳрӗ мар тунӑ ӗҫрен хӑтарать, мӗншӗн тесен мана ҫав-ҫавах тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫын теҫҫӗ. Эпӗ мӑка ӑслӑ ҫын, анчах укҫа мӗнпур япаласене чи ҫивӗч ӑс парать,— укҫа тытакан ҫын ӑҫтан мӑка ӑслӑ пултӑр-ха? Кунсӑр пуҫне тата укҫа хуҫи чи ҫивӗч ӑслӑ ҫынсене сутӑн илме пултарать, камӑн ҫав ҫынсене тытмалли власть пур, вӑл вара чи ӑслӑ ҫынран та ӑслӑ мар-и? Манӑн вара, укҫана пула, ҫын чӗри ӗмӗтленекен япаласене пурне те туянма пултараканскерӗн, этемри мӗнпур пултарулӑхсем ҫук-и? Укҫа манӑн пултарулӑхсӑра пултарулӑх туса хумасть-и-ха?»[1]

Ҫакӑн пек шухӑшсене пӗр-пӗр капиталист, пӗр-пӗр ял пуянӗ хӑй ӑссӗн шутласа кӑларман, вӗсене Михетерпе Тӑхтаман та шутласа кӑларман,— вӑл шухӑшсене укҫа ҫинче тытӑнса тӑракан ҫыхӑнусем, укҫа отношенийӗсем укҫа хуҫисен пуҫне кӗртсе хунӑ, чӗри витӗр кӑларса чӗресӗр, чунӗ витӗр кӑларса чунсӑр, ӑсӗ витӗр кӑларса ӑссӑр туса хунӑ, ҫынна хисеплес, юратас туйӑмсене типӗтсе, хӑртса, пӗтерсе лартнӑ.

---

[1] К. Маркс и Ф. Энгельс. Об искусстве. 1940, 68 стр.

Нарспипе Сетнер юратăвĕ ун пек мар. Вĕсем пĕр-пĕрне чăн-чăн юратупа юратаççĕ. Чăн-чăн юрату — чи паха, чи таса юрату. Вăл чĕресене хавхалантарать, ĕçре вăй-хăват парать, çунатлантарса тăрать. Чăн-чăн юрату — арçын хĕрарăма, хĕрарăм арçына чун-чĕререн юратни — пĕр-пĕрне юратса пĕрле пурăнакан, пĕрле ĕçлекен, йывăрлăха та, савăнăçа та пĕрле тӳссе ирттерекен, мăшăрсен ĕçри пултарулăхне, пуçри шухăшĕсене, чĕрери туйăмĕсене аталантарса тăрать.

Çĕр ăшĕнче выртакан ылтăн муклашки таса, анчах чăн-чăн юрату унтан та тасарах,— çĕр хут, пин хут таса, темрен те хаклă. Ăна кĕмĕлпе те, ылтăнпа та илме çук. Анчах пуян аллине лекнĕ ылтăн, тен, темиçе хут ĕççыннисен тарĕпе çăвăннă пулĕ, чи усал вăрă аллинче пулнă пулĕ, юн ăшĕнче выртнă пулĕ,— çавăн пек ылтăнпа ĕнтĕ эксплуатаци тĕнчинче юратăва сутăн илеççĕ, чыслăха, чĕрене, чуна сутаççĕ.

Çын юратăвне укçашăн пĕтернине Нарспи пĕлет,— теори тăрăх мар, чун-чĕрепе туйса, курса пĕлет. Акă Нарспи юратăва мĕнле ăнланать:

Тупрĕ пуян упăшка
Атте-анне хăй хĕрне,
Анчах унта мĕн усси—
Юратмасан пĕр-пĕрне?

Тату, ырă, килĕшсе
Иккĕш пĕрле пурăнсан,
Çĕр хут ытла телейлĕ
Юрлă çын та пуянран...

Михетер «урнă йытă» пулсан, Тăхтаман — выçă «кашкăр». Çамрăк Нарспи çав йытăсемпе кашкăрсен тĕнчине хăюллăн питлет:

Эй, аттеçĕм, пурнăç мар
Савман каччă килĕнче...
Пуянлăхра анчах мар,
Ыр курасси — çыннинче...

Кивĕ тĕнчен этеме этем пусмăрлани çинче, ырлăха укçара çеç курни çинче тытăнса тăракан йăлине питлесе тăрă шыв çине кăларни уйрăммăнах тата Нарспин çак сăмахĕсенчен курăнать:

Эсир мана ӳстертĕр,
Ача чухне юратрăр,
Анчах ӳссе çитрĕм те,
Хĕрĕр чунне курмарăр.

Эпĕ сире кĕлтурăм,
Эпĕ сире йăлăнтăм.
Вĕçне çите пуçласан,
Йăваланса макăртăм.

Анчах эсир хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр,
Ӳстертĕр те укçашăн
Сутса ярса пĕтертĕр.

. . . . .

Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса ятăн кашкăра?—
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕн пурĕ те укçара...

Михетерпе Тăхтаман — эксплуататорсем, халăх юнне ĕçекенсем, ирĕклĕх тăшманĕсем. Ахальтен мар ĕнтĕ Нарспипе Сетнер вĕсене кашни сăмахра тенĕ пекех «тăшман», «çичĕ ют» теççĕ. Тĕрĕс калаççĕ вĕсем! Вĕсен сăмахĕпе халăх килĕшет. Вĕсен сăмахĕ халăх чĕрине хавхалантарать.

Шăпах çавăнпа ĕнтĕ Нарспипе Сетнер чăваш халăхĕн литературăри юратнă геройĕсем пулса тăчĕç.

Шăпах çавăнпа ĕнтĕ хальхи вăхăтра хăшпĕр çамрăк мăшăрсем хăйсен малтанхи ывăлне Сетнер ятне параççĕ, малтанхи хĕрне Нарспи ятне параççĕ. Çав çĕнĕ сетнерсемпе нарсписем халĕ совет шкулĕсенче вĕренеççĕ, колхоз уйĕсенче, заводсенче ĕçлеççĕ.

Шăпах çавăнпа ĕнтĕ «Нарспи» алран кайми кĕнеке пулса тăчĕ, ăна кашниех харпăр хăйĕн килти библиотекинче тытма тăрăшать, Пушкинпа Лермонтов кĕнекисемпе юнашар хурать.[1]

«Нарспи» поэмăра тата Сентти ятлă ача пур. Вулакансем час-часах: кам ачи вăл? мĕн шутпа çав ачана поэмăра кăтартнă? — тесе ыйтаççĕ.

Нарспи хуйхи çинчен çырнă май К. Иванов Сентти çинчен «пăяхăшин ачи», тет. Малалла эпир çакна куратпăр:

---

[1] Сăмахран, ЧАССР Çутĕç министерствине 1947 çулта çакăн пек хут килнĕ: «Ку çырăва эпĕ инçетри Çĕпĕртен çыратăп. Эпĕ— вăтам шкулта ĕçлекен учитель. Çамрăк чухне эпĕ Константин Ивановăн «Нарспи» ятлă тĕлĕнмелле паха поэмине вуласаттăм. Унтанпа ĕнтĕ нумай вăхăт иртрĕ. Эпир пурăнакан Кемерово хулинче «Нарспи» тупма çук. Пирĕн çемьере пурте чăвашсем. Эпир çак кĕнекене тупса илесчĕ тесе, ăна хамăрăн килти библиотекăра тытасчĕ, тепрер хут вуласа тухасчĕ тесе питех те хытă ĕмĕтленетпĕр. «Нарспие» пире ярса парсан, тем пекех хавас пулăттăмăр. Салампа М. П а в л о в».

Сентти — ырӑ кӑмӑллӑ чипер ача. Вӑл нирĕн куç умĕнчех — сиксе выляса çӳрет:

Чипер ача Сентти пур,
Чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса,
Ача вылять лашалла.

Аслӑ урам тӑршшĕпе
Чиксĕр тусан кӑларать,
Хура чикан пек хура
Каçпа килне гаврӑнать.

Чипер ача Сентти пур,
Чупса килет лашипе,
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
Пакӑлтатать инкĕшпе.

Çĕнĕ çын та Нарспи кин
Пĕрмаях вӑл хуйхӑрать,
Пӑяхĕшин ачине,
Сенттие çеç юратать.

Çĕнĕ çын та Нарспи кин
Пĕрмаях вӑл хуйхӑрать,
Сенттипе çеç калаçса
Хӑй хуйхине пусарать.

Çавтер ырӑ ачана
Турӑ чунне панӑ çав,
Кулса сиксе выляма
Кайӑк чунĕ янӑ çав.

Çичĕ çулхи ачара
Чӑваш чунĕ ларать çав.
Пĕчĕк куçĕ йĕрсен те,
Йӑваш тути кулать çав.

Чипер ача Сентти пур,
Инкĕш патне ӑнтӑлать;
Хӑйĕн пĕчĕк чĕлхипе
Инкĕшне вӑл йӑпанать:

«Ан йĕр, инкем, ан йĕрсем,
Тутӑрупа шӑл куçна.
Ан хуйхӑрсам, инкеçĕм,
Хӑваласам хуйхӑна».

Çак йĕркесенчен мĕн курӑнать-ха? Акӑ мĕн: Сентти — ним хуйхӑ-суйхӑсӑр ача; телейсĕр Нарспи пĕр Сенттипе çеç калаçса хӑйĕн хуйхине пусарать; Тӑхтаман кил-çуртĕнче

Нарспие таса чĕреллĕ çичĕ çулхи ача çеç йăпатма пултарать.

Сентти чунне мул тĕнчи мăкăлтаса пăсайман-ха. Унăн хуйхă-суйхă çук. Çамрăк Сентти халлĕхе кулса-сиксе, лашалла выляса çеç çӳрет. Нарспи мĕншĕн вĕри куççуль тăкнине ырă Сентти пĕлеймест, мул тĕнчи çынсен телейне путарса тăнине те вăл ăнланаймасть. Уншăн пуянĕ те, чухăнĕ те пĕр пекех, вăл никама та хур туман, никамăн телейне те пăсман, никамăн кун-çулне те пĕтермен, çын укçи-тенкине туртса илмен, никам çинчен те усал шухăш шухăшламан. Пĕр сăмахпа каласан, Сентти — тап-таса, чи ырă чĕреллĕ çын, унăн чунĕ «кайăк чунĕ» пек. Унăн пĕтĕм «усал ĕçĕ» те хăйĕн «паттăр лашине» (кĕвентине) «хăй аллинчи хуллипе» çапни çеç, «ăнсăртран инкĕшне урипе тапса» илни çеç.

Сентти сăнарĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ, вăййи-кулли, ĕмĕчĕ, шухăшĕ инкĕшĕн хуйхи-суйхине, унăн тарăнăшне тата та уççăнрах кăтартать, кивĕ ăрупа çĕнĕ ăру хушшинче мĕн тери пысăк уйрăмлăх пулни çинчен калать. Сенттисен чунĕ — «кайăк чунĕ», таса чун; сетнерсемпе нарсписен чунĕ те таса, вĕсен ĕмĕчĕ çутă. Михетерсемпе тăхтамансен ăшне чун вырăнне укçа шухăшĕ кĕрсе ларнă, чĕри кăвакарса пăнтăхсах кайнă, хура юнпа тулса ларнă; вĕсен ĕмĕчĕ — мул пухасси, мулшăн тăван хĕрне, арăмне, тăван ялне, халăхне сутса ярасси, — пĕр сăмахпа каласан, кулакла, капиталистла пуясси.

Сетнерпе Нарспи пĕр-пĕрне ырă кăмăлпа, таса чунпа, таса ĕмĕтпе юратаççĕ. Вĕсен таса юратăвĕ калама çук вăйлă.

Поэт акă мĕн çырать:

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуççăр çил тухсан,
Чарăнассăн туйăнмасть.

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Тамăкри пек ахăрать.
Те арçури, те шуйттан
Çав териех ашкăнать.

Тапхăр-тапхăр çил килет
Пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ӳхĕрет
Çĕре çитех авăнса.

Хура пĕлĕт хушшинче.
Шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
Хура пĕлĕт пĕрмаях

Анчах, пăхăр-ха, Нарспипе Сетнер вăрманта пыраççĕ, вĕсен тем пек вăйлă юратăвне аса илĕр-ха:

Икĕ савни пĕрлешсен,
Пуçне тайрĕ ват юман.
Пĕр-ик тапхăр çил вĕрсен,
Шăп лăпланчĕ сĕм вăрман.

Хура пĕлĕт саланса
Пĕтрĕ вăрман хысĕнче.
Хĕвел пăхать шăратса,
Кайăк юрлать йăвинче.

Курăк çинчи сывлăма
Хĕвел парать ăшшине.
Икĕ чуна савăшма
Хĕвел парать çуттине.

Ялтăртатать ырă кун.
Усал кунăн мĕн ĕç пур?
Савăнса утать икĕ чун,
Çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?

Çак икĕ цитатăра картина çеç мар, вĕсенче питех те тарăн шухăш: Нарспипе Сетнер юратăвĕ вăрман шавĕнчен те вăйлă; вĕсен юратăвĕ — ырă кун, хĕвел ăшши, йăвари кайăк юрри. Çак икĕ çамрăк пĕр-пĕрне çав тери вăйлă юратаççĕ пулсан, вĕсен юратăвĕ ырă кун пулсан,— усал кунăн мĕн ĕç пур? çичĕ ютăн мĕн ĕç пур? тăхтамансен мĕн ĕç пур? усал тĕнчен мĕн ĕç пур?

Вăйлă сăнлăх панă, хăватлă шухăш каланă поэт. Шухăшĕ пуçа кĕрсе юлать, сăнлăхĕ куç умĕнче тăрать. Манмастăн вĕсене, мĕншĕн тесен вĕсенче чăн-чăн искусство вăйĕ, вĕсенче ырă шухăш.

«Нарспи» идейăсен анлăшĕпе тарăнăшĕ енчен çеç мар, вĕрилĕх, çепĕçлĕх, туйăм, эмоци енчен те ытарма çук паха произведени пулса тăрать. «Нарспин» содержанийĕпе форми ним уйрăлми пĕрлĕх: унăн илемлĕхĕсем, художествăлла сăнлăхĕсем, унăн чĕлхи поэт шухăшĕсене вăйлăрах пулма пулăшаççĕ; тепĕр майлă та,— «Нарспири» ырă шухăшсем поэмăн илемлĕхне тата та çӳлерех çĕклеççĕ.

«Нарспи» поэмăна К. В. Иванов 1907 çул вĕçĕпе 1908 çул пуçламăшĕнче çырнă, тенĕччĕ. Ăна çыриччен вăл, хăйĕн ытти произведенийĕсене çырса, хăшпĕр таран опыт илме ĕлкĕрнĕ. Сăмахран, Иванов 1908 çулта виçĕ юмах («Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр») çырнă. Çав çулхинех «Выçă аптранисем», «Шуйттан чури» произведенисене те

çырнă. Ку юмахсемпе сăвăсене çырнă чухне Иванов халăх творчествипе ытларах усă курнă. «Нарспие» çырнă чухне вара вăл халăх творчествипе тата та ăстарах усă курнă.

К. Иванов халăх творчествинчен илнĕ юрăсемпе, такмаксемпе хăюллăн усă курнă. Анчах вăл вĕсен тĕп йĕрне пăсман. Кун çинчен çак тĕслĕхсем лайăх каласа параççĕ:

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шăнкăрч чĕппи шыв ĕçет,—
Чĕкеç чĕппин мĕн ĕç пур?
Ылтăнпа кĕмĕл тавлашать—
Пăхăр укçан мĕн ĕç пур?
Тăванпа тăван тавлашать,—
Çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?

Ку чăваш халăх юрри. Çак юрăпа «Нарспире» акă мĕнле усă курнă:

Йăлтăртатать ырă кун,
Усал кунăн мĕн ĕç пур?
Савăнса утать икĕ чун,
Çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?

К. Ивановăн чĕлхинче те халăх творчествинчи пек элементсем, формăсем сахал мар. Фольклорта хăшпĕр чухне подлежащи нумайлă хисепре, сказуемăй пĕреллĕ хисепре пулнине курма пулать. Тĕслĕхшĕн çакна илер:

И, çилсем вĕрст,
Вичкĕн çил вĕрет,
Вăйлă çăмăрсем
Капланса килет.

Çакăн пек форма «Нарспире» те пур.

Çĕр çĕмĕрсе каччăсем
Ташлать хапха умĕнче.

Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.

Кун пек тĕслĕхсем К. Ивановăн ытти произведенийĕсенче те тĕл пулаççĕ:

Карти-карти кайăксем
Вĕçет тинĕс леш енне.
(«Кĕркунне»)

К. Иванов чăваш пурнăçне, йăлине, чĕлхин уйрăмлăхне пит те аван пĕлнĕ. Сăмахран, «Нарспире» тата çакăн пек вырăнсем тĕл пулаççĕ:

Ялти тантăш тăвансен
Пырĕ тĕпĕ ярăнать.

Эсĕ мана хĕнесе
Кĕлрен вутă тăвас çук.

Кăтăр-кăтăр арман чулĕ
Чĕре çинче авăртать.

Кăнтăрлапа пĕтĕм ял
Пĕççисене шарт çапать.

К. Иванов творчествинче халăх юрринчи пек танлаштарусем, сăмах çаврăнăшĕсем те сахал мар тупма пулать:

Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларатăр?
Шăппăн-шăппăн лармашкăн
Шăпчăк чĕппи мар эпир.

Тухса кайрĕç хăтасем
Ырă юрă юрласа:
«Айтăр каяр çулпала
Курка тулли пылпала».

К. Иванов халăх сăвви-юррипе усă курнă чухне киввине, пĕтсе пыраканнине, идеализацилемен, вăл çутă ĕмĕтсене палăртма, вĕсене хăйĕн творчестви урлă халăх хушшине ытларах сарма тăрăшнă. Иванов халăх чĕлхинчи лайăх сăмахсене илме пĕлнĕ, вăл халăх юмахĕсемпе халапĕсене те хăйне кирлĕ пек улăштарса çырнă, вĕсен темисене хăйне пăхăнтарнă, илемлетнĕ.

«Нарспи» поэмăн сăвăллă форми çĕнĕ форма мар. Вăл чăваш халăх юррисен çичĕ сыпăклă тахçанхи форми, çăмăл форма. Тĕрĕссипе каласан, хальхи поэтсемшĕн вăл «хĕсĕк» форма; хĕсĕк пулнипе вăл шухăшсене кăштах «çыхса лартать». Анчах çав формăпа «Нарспи» пек хăватлă произведени çырма Иванов пек пысăк талантлă поэт çеç пултарнă. Çак енчен пăхсан, Ивановăн пултарулăхĕ, ăсталăхĕ мĕн тери вăйлă пулни тата та уççăнрах курăнать.

Иванов вăхăтĕнче чăвашсен аталанса çитнĕ литература чĕлхи пулманпа пĕрех. Иванов, çапла пулин те, чаплă та

вайлă поэма çырса хунă. Шутлатăн та тĕлĕнсех каятăн: аталанса çитнĕ литература чĕлхи пулман чухне «Нарспи» пек вайлă та илемлĕ произведени çырма мĕн тери пысăк талант, мĕн тери пысăк хăюлăх кирлĕ пулнă! Ивановăн вара пурте пулнă,— унăн ăс та, хăюлăх та, ăсталăх та пулнă. Çакна шута илсе ĕнтĕ Иванов çинчен: вăл пирĕн илемлĕ литература чĕлхине пуçарса янă, теççĕ.

6

Хăшпĕр «критикла этемсем»: «Нарспи» поэма вăл хальхи саманашăн юрăхсăр произведени», теме пăхрĕç. Паллах, çак поэмăн вайсăр енĕсем те пурах, унта ăнланса илме кăткăсрах вырăнсем те пур. Константин Иванов, патша саманин йывăрлăхне çивĕччĕн туйса тăнă пулин те, тĕрлĕ пусмăрлăха хирĕç этем ирĕклĕхĕшĕн тăнă пулин те, политикăлла революционер пулман. Çапах та, çав «критиксемпе» нимĕнле килĕшме те çук. «Нарспие», вăл пирĕншĕн юрăхсăр тесе сивлени, тĕрĕссипе каласан, пуçсене нигилистла каçăртса, хамăр историе, тăван халăх утса тухнă çула, унăн паха традицийĕсене маннипе пĕрех. Çапла хăтланни вăл — нацилле нигилизм евĕрлĕ чир пулса тăрать. Сталин юлташ 1918 çултах: «Нацилле нигилизм, буржуалла националистсене пулăшса, социализм ĕçне сиен кӳрет»,[1] тенĕ.

Çапла ĕнтĕ, К. Иванов «Нарспийĕнчен» пирĕн чăваш поэзийĕн литература чĕлхин чăн-чăн историйĕ пуçланса кайнă теме пулать. Çак паха та чаплă поэмăна, аларан каймн, кивеле пĕлми «Нарспие» халĕ чăваш халăхĕ кăна мар, ытти халăхсем те кăмăлласа вулаççĕ. Ку ĕнтĕ К. Иванов поэзийĕ чăннипех те халăхсен ĕмĕртенхи ĕмĕчĕсене, шухăшĕсене савăнтарса тăнине, вăл ытти халăхсен поэзийĕпе пĕр тăванлине кăтартса парать.

Чăваш халăхĕ революцичченхи йывăр та асаплă условисенче Константин Иванов пек пысăк талантлă сăвăç пама пултарнă пулсан, чăваш халăхĕн пултарулăхĕпе вайĕ çине шанман çынсем кулă тункати вырăнне çеç пулма пултараççĕ. Ĕлĕкрех, чăваш чĕлхине шанмасăр, тăшманла этемсем, мĕнпур çĕнни çине сиввĕн пăхса: «чăваш чĕлхи пĕтет» тесе халăха виртленĕ пулсан, Октябрьти Аслă социализмлă революци панă тивлетсем, Совет влаçĕ вăхăтĕнче халăх тунă ӳсĕмсем çавăн пек тăшманла элексене пĕтĕмпех сирсе пăрах-

---

[1] И. В. Сталин. Сочинения, 4 том, 91 стр.

рĕç. Октябрьти революци, пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăхсене, çав шутра чăваш халăхне те, ирĕке кăларса, вĕсен творчествăллă вăйĕсемшĕн çул уçса, улăпла пысăк вăй-хăват пачĕ, никам курман-илтмен çӳллĕше çĕклерĕ. Халĕ патша Российинче вăхăтсăр вилсе выртнă Константин Иванов выраннe чăваш совет поэзин нумай йышлă отрячĕ ӳссе çитĕнчĕ, вĕсен кăмăллă юррисем халăх хушшинче ирĕклĕн янăраççĕ.

...Елĕкрех пĕр «критик» çапла çырнăччĕ: «Нарспие» 1905—07 çулхи революци хыççăнхи реакци пусланнă вăхăтра çырнине пĕрех те манма юрамасть. Çав реакци пусланнă вăхăтра çырнăран та пулĕ, К. Ивановăн поэминче... реакцилле хура шухăшсем вырăн тупнă», тенĕччĕ. Кун пек киревсĕр сăмахсене каличчен çак критикăн «Нарспи» поэмăна, «Хальхи самана», «Вăранăр, тапранăр» сăвăсене лайăхрах вуламалла пулнă, сахалтан та, вулама вĕренмелле пулнă. К. Иванов «Нарспийĕ» çинчен чăн-чăн Этеме мухтаса çырнă произведени çинчен çавăн пек калама вульгарлă социологизм урапи çине питех те çирĕп вырнаçса ларнă критик çеç пултарнă. Анчах ку тикĕтсĕр урапа пирĕн литературăра малалла ытлах каяймарĕ, ăна часах çапса аркатрĕç.

Çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ культура тăвакан халăх, «Нарспие» алла тытса, çавнашкал «критиксен» шухăшĕсене таптаса иртсе пырать.

«Нарспи» поэмăна, çавăн пекех тата К. Ивановăн пĕтĕм творчествине те, тĕрĕсрех ăнланса илес тесен, поэт ĕçлесе пурăннă эпохăна вĕренсе пĕлес пулать, — ку вара унăн шухăшĕсене, унăн творчествинчи социаллă туртăмсене тарăнрах пĕлме пулăшĕ. Çакă вăл — марксистла критиксем тумалли ĕç. Вĕсем çеç пирĕн литературăн иртнипе хальхи вăхăтне, унăн пулас кунĕсене тĕрĕс çутатса парĕç.

Чăваш литератури сăпка çинче силленнĕ вăхăт халĕ ĕнтĕ нумай кая юлчĕ. К. В. Иванов пусласа янă литература ĕçĕ совет саманинче пĕтĕм халăх ĕçĕ, государство ĕçĕ пулса тăчĕ. «Нарспи» авторĕн çутă шухăшĕсем пирĕн халăх ăстăнĕнче тивĕçлĕ вырăн тупрĕç. Халĕ пирĕн халăхăн илемлĕх туйăмĕсем, шухăш-кăмăлĕсем ĕлĕкхинчен нумай пуян.

Константин Иванов хăйĕн творчестви çинчен А. С. Пушкинăн тĕрĕс те паха сăмахĕсемпе çапла калама пултарнă:

... Чувства добрые я лирой пробуждал!..

1948

КОНСТАНТИН ИВАНОВ СĂВВИСЕМ

Константин Иванов — поэт-лирик. Иванов произведенийĕсенче чăннипех те тарăн лирика пулни унăн сăввисене вуланă чухне те лайăх палăрать. Лирика — вăл авторăн хăйĕн шухăш-кăмăлĕ çеç мар, вăл уйрăм поэтăн шухăш-кăмăлĕ халăх шухăш-кăмăлĕпе пĕрлешсе тăнине кăтартни те, ăна тĕрĕс палăртса пани те пулса тăрать. Халăха савăнтарни Иванова савăнтарнă, халăха хурлантарни — Иванова хурлантарнă, унăн сисĕмлĕ чĕрине ыраттарнă. Ивановăн çавнашкал сăввисенче Лермонтовăнни пек кăмăл хăвачĕ тапса тăрать, вăл малалла туртăнни палăрать, çав вăхăтрах Некрасовла уççăн çырнисем хăйсен пĕтĕм тĕрĕслĕхĕпе тухса тăраççĕ.

Константин Иванов çуркуннепе кĕркунне картинисене, вăрман шавланине, шыв юхнине, шăрăх çанталăка çырса кăтартать-и, хăйĕн шухăш-кăмăлĕсем, чĕрери туйăмĕсем çинчен çырать-и е вырăс поэчĕсен сăввисене куçарать-и,— яланах халăх шухăшĕ патне пырса тухать, хăйĕн ĕмĕчĕсене халăханнипе пĕрлештерет те халăхпа пĕрле, мала тăрса, утать.

Акă вăл «Нарспи» поэмăн пĕр юрринче ырă çуркунне çинчен çырать. Хĕвел пĕтĕм тĕнчене сават. Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет. Çеçенхир ешерет. Пурте, пурте хăй илемĕпе мухтанать.

Çӳлте, пĕлĕт айĕнче,
Тăрри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.

Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
Ача шăхличĕ калать,
Хырăмĕ пит выçнипе
Силпи ялнелле пăхать.

Çапла, поэт савăк çуркуннене сăнласа панă çĕртех вулакана, ним систермесĕрех, социаллă ыйту патне çитерсе тăрататать те: «Куратăн-и, выçă ачана çуркунне те илĕртмест», тенĕ шухăша калать. Ун чухнехи саманана асра тытса: «Çутçанталăкра усал япала çук, çынна усал тăваканĕ, выçă усраканĕ вăл — мул тĕнчинчен килет», тесе каласшăн вăл.

Çапла, К. Иванов çут тĕнче сăнлăхне кăтартнипех, хăйĕн чун-чĕрин илемлĕх туйăмĕсене çырса панипех чарăнса тăмасть, вăл, çавсене тунă вăхăтрах, тата халăх пурнăçне кăтартакан картинăсем çырать, халăх туйăмĕсене каласа парать, çав туйăмсемпе шухăшсене вулаканăн чĕрине кĕртет.

Поэт «Ватă вăрман шухăшĕ» ятлă сăвăра хăйĕн çамрăк вăхăтне аса илет те «асап килсен, хĕн килсен» шухăша кайса ларни çинчен çырать. Вăл асап «хура пĕлĕт пек». Çакă вăл — патша самани кӳнĕ асап. Унăн хĕвел çуттине хуплакан, этем кăмăлне пĕрмаях хуçса тăракан ирсĕрлĕхĕ çинчен вăл А. В. Кольцов сăмахĕсемпе те калать:

Сивĕ çил вĕрет,
Хаяр çил вĕрет;
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.

Курăнмасть унта
Çутă кун çути,
Курăнмасть унта
Çут хĕвел çути.

«Çутă кун çути курăнман» патша Российинчи пурнăç К. Иванова пайтах шухăшлаттарнă. 1905—1907 çулсенчи революци çуратнă шухăшсене пăхăнса, вăл поэт-гражданин çулĕ çине тăрать, политикăлла, гражданла сăвăсем çырать. Çакă вăл ырăссен демократиллĕ литератури çулĕ, харпăр хăй ĕмĕчĕсене халăхăн малта пыракан сийĕсен ĕмĕчĕсемпе пĕрлештерес çул.

Илер-ха тата тĕслĕхшĕн «Хальхи самана» сăвва. К. Иванов ăна 1908 çулта, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнине уявланă чухне çырнă.

Мĕн çинчен калать-ха автор çав сăвăра?

Вăл унта, чи малтан, хăй вĕренекен шкул çинчен калать.

Çак ыйтăва хускатнă май вара поэт ытти пысăк ыйтусене те лартать: чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçне аса илет, унтан хăй вăхăтĕнчи пурнăç çине куçать, пулас кунсем çинчен çырать.

«Хальхи самана» — политикăллă сăвă. Иванов унта хăйĕн хăшпĕр политикăллă шухăшĕсене уççăнах каласа парать.

Чăваш халăхĕ ĕлĕк питех те тĕттĕм пулнă. Тухатмăшсем тухатнă, юмăç хăратнă, асамçă аснă, ача-пăчана пăснă, ашшĕ-амăшне йĕртнĕ...

Çапах та чăвашсем хушшинче, тĕрлĕ йывăрлăхсене пăхмасăрах, шкулсем уçăлни, пирĕн халăха çутта кăларассишĕн И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев пек çынсем ĕçлени пысăк усă панă.

«Хальхи самана» сăвăра Чĕмпĕрти чăваш шкулне, çав шкула пуçарса яракан И. Я. Яковлевăн ĕçĕсене хакласа, К. Иванов çакăн пек калать:

Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатнинчен питĕрех
Шухăш ўкрĕ пуç çине.

Мĕнле шухăшсем пырса кĕнĕ-ха поэтăн пуçне?

Константин Иванов ку сăвăра тăван халăхăн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен калать, патша йĕрки вăхăтĕнчи сивĕ кунсен сăнне тĕлĕнмелле уççăн, тĕлĕнмелле хăватлăн кăтартса парать:

Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕçнех çитмен-ха вĕсем.
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,
Ĕçсе-çисе ларнă чух,
Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне,
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савнăç-и, куççуль-и
Сан куçăнта куç тулли?

Çак йĕркесене çырнă чухне поэт-гражданинăн, тен, хăйĕн те чĕри тулли халăх хуйхи пулнă пулĕ... Поэт, «куççульпе кулса», чăвашсем хушшинчен тухнă улпутсене, вĕсен тарçи-тĕрçисене питлет, халăха маннă чиновниксем çинчен хаяр сăмахсемпе çырать:

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ».
Тĕрлĕ çутă тӳмешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн;
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть:
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕри виле пулнă çав.

Çак «чаплă вырăншăн», çутă тӳмешĕн тĕнки тухакан, тăванне те манакан çыннăн чунĕ, Михетер чунĕ пекех, кĕçĕн хĕрне килĕнчен хăваласа янă пуян чунĕ пекех,— вăл çын мул интересĕсемпе илĕрсе пурăнать, халăха хирĕç пырать, укçашăн чунне сутса яма та хатĕр. Унăн юрри — шуйттан чури юрри. Вăл укçа-тенкĕ пухса пуйсан, çакăн пек пурăнма ĕмĕтленет:

Ылтăн-кĕмĕл çурт лартăп,
Выльăх тытăп пинĕпе.
Ирттерĕп çав пурнăçа
Савăнса çеç, кулса çеç.

Чиновниксене — çутă тӳмеллĕ этемсене, тăванне те астуман çынсене Тайăр Тимкки те, К. Иванов пекех, хытă питлет:

Хăвăр ахаль пурăнсан,
Эсир ырлăх тупаймăр;
Ĕçе тума чарăнсан,
Усал айне хупăнăр.
Эсир ĕçсĕр пурăнсан,
Сире çынсем ылханĕç.
Сиртен юлнă ачăрсем
Сире пăхса хурланĕç...
... Сире халăх вĕрентме
Нумай укçа салатрĕ,
Сире çынна кăларма
Пĕтĕм вăйпа тăрăшрĕ.
Ухмах! Эсĕ халăха
Мĕскер усă кăтартрăн?
Выçлăх, пысăк хурлăха
Мĕскер ĕçпе пĕтертĕн?..

Халăха маннă, унăн ĕçне тума тăрăшман этемсем çинчен икĕ поэт тарăхса пĕр пек çырнă пулсан, вĕсем кăтартса панă сăрă хурт пек этемсем, патша влаçĕ майлă çаврăнса ӳкнĕ-

скерсем, ун чухне, хура реакци пуçланса кайнă çулсенче, халăхăн малта пыракан ывăлĕсене питех те кансĕрленĕ, тарăхтарнă. Шăпах çавăнпа Иванов та, Тайăр Тимкки те вĕсене хирĕç çырмасăр чăтса тăрайман [1].

К. Иванов халăхăн малта пыракан сийĕсен шухăшĕсене палăртса çырнине тата çак тĕслĕхсем те лайăх кăтартса параççĕ.

Патша вăхăтĕнче тутар реакционерĕсем, 1905 çулти революцирен хăраса ӳкнĕскерсем, хăйсен националистла-пантюркистла шухăшĕсене сарма тăрăшса, тутарсене Турцие куçса кайма чĕннĕ. Тутар халăх поэчĕ Габдулла Тукай националистсене питлесе «Каймастпăр!» ятлă сăвă çырнă. Унта вăл: «Эпир кунта çуралнă, кунта ӳснĕ, çакăнтах эпир вилĕпĕр. Вырăс çĕрĕпе пире хамăр кун-çул хăех пĕрлештернĕ», тесе çырнă.

К. Иванов «Хальхи самана» ятлă сăввинче, «чунĕ хытнă çынсем», чăваш хушшинче тапаланма пуçланине питлесе çырнă вăхăтрах, тутар реакционерĕсене те питлесе илет, чăваш ĕççыннисем вĕсен çулĕпе кайманнине кăтартса парать:

Урăх çулпа утрăмăр,
Урăх çĕре тухрăмăр,— тет вăл.

Çав çул — тăван çĕршывăн, çĕнĕ Российăшăн чĕререн тăрас çул пулнă. Иванов вырăс литератури тăрăх вĕренсе ӳснĕскер, хăйĕн творчествине демократи çулĕпе аталантарса пыма тăрăшнă. Акă мĕншĕн эпир К. Иванова халăх поэчĕ тетпĕр, поэт-демократ, тетпĕр.

* *
*

К. Иванов пурăннă вăхăт — йывăр вăхăт. Пуринчен ытла унăн творчестви сарăлса пынă вăхăт йывăр пулнă. Шутласа пăхăр-ха, эпир Иванова 1905—1907 çулсенчи революци

---

[1] Чăваш тата ытти хăшпĕр халăх интеллигенцийĕ хушшинче тăван халăхне маннă, «тĕрлĕ çутă тӳмешĕн тĕнки тухакан» сутăнчăк этемсем çинчен пĕр кивĕ кĕнекере çакăн пек çырнă:

«Ни в одной среде интеллигенция не была так чужда массе, как в инородческой. Вкусив плоды русского образования, интеллигент пуще всего заботится о том, чтобы как можно скорее смыть с себя печать инородческого происхождения, печать отвержения и приниженности. И народ, сам тяготившийся своей отверженностью, платил ему глухой враждебностью, видя в нем одновременно и барина, и ренегата.. Так... было у таких народностей, как вотяки, чуваши, башкиры, черемисы, интеллигенция которых в буквальном смысле слова стыдилась своего происхождения». («Формы национального движения», 1910 ç., 557 стр.).

хавхалантарса ҫунатлантарнӑ тетпӗр, ҫав вӑхӑтрах вӑл хӑйӗн произведенийӗсене пурне те тенӗпе пӗрех патша Российинче хура реакци пуҫланнӑ ҫулсенче ҫырнине куратпӑр. Мӗн тери хӑват кирлӗ пулнӑ ӑна, епле ҫирӗп пулмалла пулнӑ унӑн шухӑшӗсем.

Ҫавӑн пек ҫирӗплӗхе вӑл халӑх хушшинче шыранӑ, выӑссен демократиллӗ литературинче шыранӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ Иванов вырӑс поэчӗсен Лермонтовӑн, Кольцовӑн, Некрасовӑн сӑввисене юратса куҫарнӑ. Вӗсен сӑввисенче пирӗн поэт хӑйӗн чӗришӗн тӑван туйӑмсене, кӑмӑла каякан шухӑшсене шыраса тупнӑ.

Лермонтов сӑввисенчи пӗччен лӗх, пӑлханакан чӗрелле, канӑҫсӑр чунлӑ ҫын пӗччен лӗхӗ, кӗрешӳпе ирӗклӗх шыракан ҫын туртӑнӑвӗ вӑхӑтлӑха Ивановӑн кӑмӑлне каять. Ҫакнашкал ҫынсем Лермонтов парӑсӗ пек: Парӑс телей шырамасть, телейрен те тарса каймасть. Канӑҫсӑр! Ҫил-тӑвӑл шавӗнче канлӗх пур пек, тӑвӑл вӑл ыйтать.

«Парӑс» сӑвва К. Иванов юратнӑ, ҫавӑнпа ӑна чӑвашла чӗрепе туйса, чӑннипех те ӑса илсе куҫарнӑ.

Иванов ӗҫлесе пурӑннӑ вӑхӑт — массӑсен ҫиллипе хаярлӑхӗ тулса ҫитсе тӑкӑнма пуҫланӑ вӑхӑт. Революци хумӗ патшасен керменӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Ӗҫ массисем, сикесике тӑрса, рабочи класс хывнӑ ҫулпа малалла ыткӑннӑ. Пуянсем чӗтренӗ. Обществӑри тӗрлӗ классем, тӗрлӗ сийсемпе ушкӑнсем хусканса кайнӑ. Ҫак хускану тупсӑмӗ литературӑна ҫитсе кӗнӗ, чунсене ҫӗкленӗ, шухӑшсене вӑй панӑ.

Шӑпах вара ҫавӑн чухне (1906 ҫ.) Иванов вырӑс халӑх юрри тӑрӑх «Вӑранӑр, тапранӑр!» ятлӑ сӑвӑ ҫырать. Чӑваш ӗҫҫыннисене 1905—1907 ҫулсенчи аслӑ юхӑма хутшӑнтарас шухӑша асра тытса ӗнтӗ Иванов: «Вӑранӑр, тапранӑр, чӑваш ҫыннисем!» — тесе чӗннӗ.

Ҫак тӗслӗхсенчен Иванов поэзийӗн гражданлӑхӗ тата та лайӑхрах курӑнать. Иванов малта пыма тӑрӑшнӑ, ку ҫеҫ те мар,— вӑл чӑннипех те малта пынӑ, поэт вырӑнӗ мӗнле тата ӑҫта пулмаллине хӑйӗн творчествипе кӑтартса панӑ.

Вырӑс поэчӗсен Кольцовӑн, Лермонтовӑн, Некрасовӑн, Огаревӑн, Майковӑн сӑввисене Иванов вӗренес шутпа та, хӑйне килӗшекен шухӑшсене тупас тата самана лартнӑ ыйтусене ответлес шутпа та куҫарнӑ.

XX-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнче пӗрре ҫеҫ мар халӑх умне выҫлӑх тухса тӑнӑ. Ҫак халӑх инкекӗн сӑнарне эпир Ивановӑн темиҫе произведенийӗнче тата куҫарнисенче

тупатпăр («Выçă аптранăскерсем», «Хальхи самана», «Выçă юрă», «Усал шăрăх»).

Çакăнта асăннă произведенисенчен пĕринче — «Выçă аптранăскерсем» ятлă сăвăра — Иванов выçлăх çинчен акă мĕнле çырать:

Пурăнатăн пит аван,
Курайманччĕ выç куна.
Анчах, тăванăм, паян
Апат лекни çăварна?

Ларса хырăм тăранмасть,—
Мĕнле шухăш шухăшлан?
Ĕç шыратăн — тупăнмасть,—
Ăçта каяс тен паян?

Иртнĕ саманара ĕç хресченĕсен пурнăçĕ мĕн тери хĕсĕк пулни çинчен чăвашсен ытти поэчĕсем те сахал мар çырнă. Сăмахран, Т. Кирилловăн «Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем» ятлă сăввисен кĕнекинче (1912) çакăн пек йĕркесем пур:

Пурнăç пурăнма пит йывăр:
Мĕнле пурнас, кун курас?
Çукшăн тĕнче пит тăвăр,
Мĕскер туса аслатас?

Укçа мĕн туса тупас-ши?—
Пирĕн тавра савăт çук.
Кам патне тарçа каяс-ши?—
Тарçинче те тӳсме çук.

Йĕри-тавра ал çухрăм кай—
Ĕçе кĕртекен пур-и?
Апла пулсан, хулана кай—
Сана кĕтекен пур-и?

Çак сăвăсен йĕркисенче чăннипех те патша вăхăтĕнчи пурнăçăн ирсĕр сăнĕ курăнса тăрать. Халăха выçлăх аптратнă, выçă çынсем ĕç шыраççĕ, анчах ĕç тупăнмасть,— ялта та, хулара та тупăнмасть!

Патша саманинче кашни ĕççынни умĕнчех «ăçта каяс», «мĕнле тăранса пурăнас» тенĕ ыйту тăнă. Çакă вăл капитализмлă çĕршывсенче халĕ те çавăн пекех: унта хресченсем çултан-çул чухăна тухаççĕ; рабочисем хăйсен ĕç вăйне сутса пурăнаççĕ; ĕççĕр тăрса юлнисен, ĕç шыраса çӳреккеннисен шучĕ пĕрмях ӳссе пырать.

«Мана ĕçрен хăваласа кăларнăранпа виçĕ çул иртрĕ ĕнтĕ,

анчах унтанпа эпӗ ӗҫ тупаймарӑм. Унччен ӗҫлесе илнӗ укҫана тахҫанах ҫисе пӗтертӗм. Юрать-ха, хам пекех ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ арӑмпа икӗ ывӑлӑм вилсе кайрӗҫ»,— тесе ҫырать Америка рабочийӗ Том Мули.

Ҫакӑн пек Том Мулисем капитализмлӑ ҫӗршывсенче миллионшар. Вӗсене унта кашни хуларах, хулан кашни урамӗнчех курма пулать.

К. В. Иванов революцичченхи саманан мӗнпур енӗсене сарлакан уҫса кӑтартнӑ тесе калама ҫук. Анчах вӑл унӑн уйрӑм енӗсене тӗрӗс ӑнланнӑ, реалистла кӑтартса панӑ. Унӑн произведенийӗсене ҫӗрсӗр аптранӑ, выҫӑ ларакан чухӑн хресченсен сӑнӗ кӗрсе юлнӑ. Хӑшпӗр юлташсем каланӑ тӑрӑх, К. В. Иванов «Ӗҫҫынни» ятлӑ сӑвӑ ҫырма палӑртнӑ пулнӑ,[1] анчах ӑна вӑл ҫырнӑ-и, ҫырман-и — паллӑ мар. Ҫапах та, кунта вулакансене ҫакна астутарма кирлӗ: Иванов вырӑс халӑхӗн «Дубинушка» ятлӑ юррине чӑвашла куҫарма тытӑнса пӑхнӑ, унӑн пуҫламӑшне куҫарнӑ. Унта вӑл шӑпах ӗнтӗ ӗҫхалӑхӗн, ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ мӗнле пулни ҫинчен калать:

> Юрӑсем нумай илтнӗ эп хам ҫӗршывра,
> Савнӑҫ мар, усал хуйхӑ ҫинчен вӑл.
> Ҫавсенчен пӗр юрри тӑрса юлчӗ пуҫра,
> Ӗҫлекен хура халӑх юрри вӑл.

* * *

Иванов лирикинче тӗп вырӑн йышӑнса тӑраканни — этем, ӗҫ, кӗрешӳ, ҫут тӗнче. Вӑл кӑтартса панӑ этем вӑйлӑ, унӑн ӗмӗчӗ ҫутӑ. Чаплӑ поэт пур ҫӗрте те этемӗн пархатарлӑ ӗҫӗпе кӗрешӳне мухтать. Иванов сӑввисенчи, вилӗмсӗр «Нарспири» тӗнче пирӗн умма пӗтӗм илемӗпе, пӗтӗм хӑвачӗпе тухса тӑрать. Вулакана ҫак илем йӑлтах хӑйӗн аллине ҫавӑрса илет, поэт калас тенӗ шухӑшсене тарӑнрах та тӗрӗсрех ӑнланма пулӑшать, пирӗн чӗрери илемлӗх туйӑмне ҫӗклентерсе ярать.

Иванов лирики — халӑх шухӑшӗпе витӗр витнӗ лирика, революцичченхи чӑваш халӑхӗн чи ҫутӑ ӗмӗчӗпе ҫыхӑнса тӑракан хӑватлӑ лирика. Константин Иванов хура реакци вӑхӑтӗнче те гражданла поэзи ялавне чыслӑн ҫӗклесе пынӑ, вӑл ҫав ялава ӗненнӗ, шаннӑ, вӑйне панӑ. Ӑна реакци тапхӑрӗнчи юрӑхсӑр шухӑшсем хупласа илеймен.

---

[1] «Илемлӗ литература» альманах, иккӗмӗш кӗнеке, 1941, 22 стр.

К. Иванов — халăх поэчĕ. Анчах «халăх поэчĕ» тени мĕне пĕлтерет-ха?

В. Г. Белинский каланă тăрăх, пурнăçа тĕрĕс сăнласа кăтартакан поэт — халăх поэчĕ. Ку шухăша вăл хăйĕн статьисенче, чи малтан, Крылов, Пушкин, Лермонтов, Гоголь çинчен çырнă статьисенче сăлтавласа парать. Белинский çырнисенче çакă курăнать: литературăри халăхлăх (народность) пĕр вăхăтрах литературăн нацилле хăйне уйрăмлăхне (самобытность), реализмлă тĕрĕслĕхне, малта пыракан идейăлăхне пĕлтерет.

Вырăссен тепĕр аслă критикĕ Н. А. Добролюбов тата ку ыйту тĕлĕшпе акă мĕн çырать: «Халăхлăх тесе эпир вырăнти çутçанталăкăн илемлĕхне кăтартма пĕлнине çеç мар, халăхран илсе тупнă тĕл калакан сăмахпа усă курма пĕлнине çеç мар, халăхăн пурнăçне, йăлине тата ыттине кăтартнине çеç те мар ăнланатпăр... Чăн-чăн халăх поэчĕ пулас тесен, тата нумайрах кирлĕ: халăх ăс-тăнĕпе тулса ĕçлемелле, унăн пурнăçĕпе пурăнмалла, халăх çӳлĕш çĕкленмелле, сословисен, кĕнеке тăрăх çеç вĕрентнин мĕнпур тĕшмĕшĕсене тата ыттине те сирсе пăрахмалла, пурне те халăхăн ахаль туйăмĕпе туйса илмелле...»[1]

Çакăн пек пулман-и-ха пирĕн Иванов? Пĕр сăмахпа çеç калăпăр: пулнă! Вăл пурне те халăх туйăмĕпе туйса тăнă, халăх туйăмĕпе туйса, хавасланса çырнă.

Писатель халăха çывăх тăни, ăна халăх йышăнни, хисеплени, халăх массисем ăна ăнланни — вăл халăх писателĕ пулнине кăтартса паракан паллăсенчен пĕри пулать.

К. Иванова халĕ пурте чун-чĕререн юратаççĕ, тăван поэт тесе хисеплеççĕ, ырă кăмăлпа асăнаççĕ. Чăваш çыннисем хамăр республикăра пурăнаççĕ-и е Совет Союзĕн ытти районĕсенче, калăпăр: Уралта, Çĕпĕрте, Калининград облаçĕнче, Карело-Финн республикинче,— колхозра ĕçлесе уйра тырă акаççĕ-и, заводра ĕçлеççĕ-и, шахтăра кăмрăк чаваççĕ-и,— пур çĕрте те, пурте, ватти те, çамрăкки те, К. В. Ивановăн произведенийĕсене пĕлеççĕ, пысăк хавхаланупа темиçешер хут вуласа тухаççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл çырнисем халăхăн ĕлĕкхи йывăр кун-çулне пирĕн умма анлăн кăларса тăратаççĕ, паянхи куна, хальхи пурнăça лайăхрах ăнланса илсе, ăна пĕтĕм чун-чĕререн юратма, уншăн

[1] Н. А. Добролюбов. «О степени участия народности в развитии русской литературы» (Избранные сочинения, 1947, стр. 46).

пархатарлӑн ӗҫлеме, кӗрешме хавхалантараҫҫӗ, хитрене ӑнланас, туяс туйӑмсене аталантараҫҫӗ.

Халӑх поэчӗн ятне поэт хӑйӗн творчествипе, пултарулӑхӗпе, ӗҫҫыннисен кӑмӑлне каякан, вӗсемшӗн усӑллӑ произведенисем ҫырнипе ҫеҫ илме пултарать. Писатель ӗҫҫыннисемпе, халӑхпа хӑйӗн нацийӗпе мӗн тери ҫывӑхрах тӑрать, унӑн творчестви ҫав тери таранрах, хӑйне евӗрлӗрех, халӑхлӑрах, нациллӗрех пулать.

К. Иванов чӑваш халӑхӗн ӗҫри хастарлӑхне те кӑтартма тӑрӑшнӑ. Акӑ «Нарспирен» илнӗ пӗр тӗслӗх:

Чӑваш кӗпи улача,
Хир варринче кӑн-кӑвак.
Ӗҫчен чӑваш вӑкӑр пек,
Юрла-юрла ӗҫ тӑвать.

Тӑрать ҫурӑмпуҫӗпе,
Ирех хире вӑл тухать.
Кӑшт-кӑш апат тӑвать те
Ҫутӑ ҫава вӑл йӑтать.

Учӳк хыҫҫӑн чӑвашсем
Айкашрӗҫӗ хирсенче:
Валем, купа, капансем
Ларчӗҫ улӑх варринче.

Ҫивчӗ ҫава вашлатрӗ
Ҫулман ҫаран ҫийӗнче,
Пуҫлӑ ыраш саралчӗ
Ҫеҫен хирсем хушшинче.

Кунта кашни йӗркех, кашни сӑмахах халӑхӑн, темелле. Йӑлисем те халӑх йӑлисем. «Нарспи» поэмӑри сӑнлӑхсем тӳрех халӑх пурнӑҫне кӑтартса параҫҫӗ: халӑх ӗҫпе пурӑнать, ӗҫчен ҫынна юрататъ.

«Нарспи» авторӗ хӑйӗн произведенийӗсенче халӑх хуйхи-суйхине ҫеҫ мар, халӑх савӑнӑҫне кӑтартса пама та лайӑх пӗлнӗ. Акӑ, сӑмахран, унӑн «Ҫумӑр» ятлӑ юррине илсе пӑхар:

Каҫ тӗттӗмӗсем пулса килеҫҫӗ-ҫке,
Ҫумӑр пӗлӗчӗсем пухӑнаҫҫӗ-ҫке.

Шӑпӑр-шӑпӑр ҫумӑр ҫӑвать-ӗҫке,
Ешӗл курӑк ешӗрсе ӳсет-ӗҫке.

Вӑш-вӑш ӑшӑ ҫилсем вӗрет-ӗҫке,
Тырӑ-пучахӗсене таять-ӗҫке.

Тырă пучахĕсем тайăлаççĕ,
Пирĕн чунăмăрсем савăнаççĕ.

Кунта К. Иванов вăйлă тырпул — халăх савăнăçĕ пулса тăнине пит те илемлĕ сăнласа панă. Ăна вуланă хыççăн куç умне чăннипех те сарă ыраш хумханса ларакан уй тухса тăрать. Тулли пучахлă тырă хумханса ларни халăх чунне савăнтарать.

Çапла, пирĕн классикĕн, Ивановăн «Нарспи» поэминче çеç мар, унăн сăвви-юррисенче те эпир халăх пурнăçне куратпăр, халăх шухăш-кăмăлне тупатпăр, халăхăн ун чухнехи хуйхи-суйхине туятпăр, савăнăçне курса савăнатпăр. Çавăнпа та эпир ăна халăх поэчĕ тетпĕр.

Константин Иванова эпир, хальхи ăру çыннисем, курман. Художниксем унăн портретне ӳкерсе çитермен. Çапах та эпир ăна пĕлетпĕр те, куратпăр та, мĕншĕн тесен «Нарспи» авторĕн çутă сăнарĕ чăваш халăхĕн чĕрине, ăс-тăнне çирĕп кĕрсе вырнаçнă.

Çавăн пек поэтсем çинчен халăх ĕмĕр-ĕмĕрех ăшă сăмах каласа пурăнать.

* * *

К. В. Иванов çинчен хальхи чăваш поэчĕсем нумай сăвăсем çырнă. Вĕсем, кашниех тенĕ пекех, К. В. Ивановăн чăваш литератури историйĕнчи вырăнне кăтартса пама тăрăшаççĕ.

К. В. Иванов вăхăтĕнчех çырма тытăннă сăвăç Н. И. Шелепи чăвашсен малтанхи поэчĕ çинчен «Чăваш шăпчăкĕ» ятлă сăввинче акă мĕнле сăмахсем калать:

Тăван халăх ывăлĕ,
Хастар чĕре,
Юрру санăн ĕмĕр юлĕ
Кĕрекере.

Ĕнтĕ пирĕн юрăсем
Çĕнелчĕçĕ.

Чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер К. В. Ивановăн литературăри ĕçне хăйĕн 1925 çулта çырнă сăввинче хаклать.

Петĕр Хусанкай хăйĕн сăввисенчен пĕринче «Нарспи» поэмăна фронтра салтаксене вуласа пани çинчен калать. Çакна май тĕрлĕ халăх çыннисем хăйсен тăван поэчĕсене аса илеççĕ: грузин — Руставелине, азербайджан — Низамине, узбек — Навоине, украинец — Шевченкăна аса илет.

Унтан мĕнпур чĕлхепеле
Янрарĕ «Пушкин!» хĕпĕртевлĕн.
... Чăваш салтакĕ çав тĕлте
Чăваш сăввисене итлерĕ,
Патронташне тӳрлетрĕ те
Сасартăк «Ивановшăн!» терĕ.

Яков Ухсайăн «Иванов вăрманĕ» ятлă сăвви революцичченхи поэт пуçласа янă ĕç халь хи саманара мĕнле вăйлăн сарăлса кайнине кăтартса парать:

Поэт юман пулса шавланă
Асаплă чуллă çĕр çинче,—
Кашни çулçи пĕр юрă пană,
Юман юрланă пĕр-пĕччен.

Çак «юман пулса кашланă» поэтăн — Константин Ивановăн — «йĕкелсем нумай пулнă», шăпах ĕнтĕ çав йĕкелсенчен халĕ çĕнĕ вăрман çĕкленчĕ, ашкăрса кайрĕ. Ку вăл — çултан-çул аталанса пыракан чăваш совет литератури. Çак литература вăрман пек пуян, унăн вăйĕ иксĕлми чĕрĕ.

Яков Ухсайăн чăваш литературин классикĕ пирки каланă сăмахĕсем питех те тĕрĕс:

Ĕрчевлĕ вăрлăх акаканĕ
Кайсан та, ĕмĕчĕ кайман.
Хитре вăрман, сĕм-сĕм вăрман,
Чăваш поэзийĕн вăрманĕ.

1947—1960

КОНСТАНТИН ИВАНОВ — КУÇАРУ АСТИ

1

Константин Васильевич Иванов, чаплă произведенисем çырнă вăхăтрах, вырăс чĕлхинчен чăваш чĕлхине куçарас тĕлĕшпе те пысăк пултарулăхпа ĕçленĕ. Вăл М. Ю. Лермонтовăн «Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова» ятлă поэмине, «Парус», «Утес», «Ангел», «Волны и люди», «Горные вершины», «Узник» сăввисене куçарнă. Кусемсĕр пуçне тата Н. А. Некрасов сăввисене те куçарма тытăннă. А. В. Кольцовăн икĕ сăввине («Песня», «Молодая жница») хăй валли кăна куçарнă, вĕсене вăл якатсах çитереймен.

Чăваш халăх поэчĕ К. Иванов вырăс халăх поэчĕсенчен Пушкинран, Лермонтовран, Кольцовран, Некрасовран тата ыттисенчен те илемлĕ литература ĕçне тимлесе вĕреннĕ; çав поэтсем пеккех, халăх сăмахлăхĕпе сарлакан та пултаруллăн усă курнă. Çак енчен пăхсан, вăл мĕншĕн Лермонтовăн «Песня про купца Калашникова» ятлă произведенине чи малтан куçарнине те ăнланса илме йывăрах мар. Калас пулать, Лермонтов творчествин халăхлăхĕ (народность) пуринчен ытла çак произведенире уççăн курăнса тăрать. В. Г. Белинский Лермонтовăн çав «Юрри» çинчен акă мĕн çырнă:

«...Поэма Лермонтова — создание мужественное, зрелое и столько же художественное, сколько и народное».

«...Наш поэт вышел в царство народности, как ее полный властелин, и, проникнувшись ее духом, слившись с нею, он показал только свое родство с нею, а не тождест-

во; даже в минуту творчества он видел ее перед собою, как предмет, и так же по воле своей вышел из нее в другие сферы, как и вошел в нее. Он показал этим только богатство элементов своей поэзии, кровное родство своего духа с духом народности своего отечества...»

«...Мы узнаем в нем поэта русского, народного, в высшем и благороднейшем значении этого слова...»

Çапла ĕнтĕ, К. В. Иванов çак «Юрра», вăл халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăнăран, ытарайми кăмăлласа, чăваш чĕлхи çине куçарнă. «Песня про купца Калашникова»— правасăрлăха хирĕç, опричнинăна хирĕç протестлекен произведени («Вышел я на страшный бой, на последний бой»), тĕрĕслĕхшĕн тăракан произведени («Постою за правду до последнева»).

К. Иванов хăй ун чухнехи йĕркене мĕн тери протестленине «Нарспи» урлă та, тата çак произведение куçарни урлă та каласшăн пулнă: ку тĕлĕшпе Лермонтовпа Ивановăн социаллă шухăш-кăмăлĕсем пĕр майлăрах пулнă тесен те йăнăш пулас çук[1].

Поэт-демократ Лермонтовăн произведенийĕнче хăйĕн канăçсăр чунне юрăхлă, çунса тăракан чĕрине кăшт та пулин вырттаракан, кăмăлне тултаракан кĕвĕ тупнă; Иванова çав произведенири паттăрлăх хавхалантарнă, унăн халăхлăхĕ ăна творчествăллă çĕклентерӳ панă. Пысăк талантлă поэт Лермонтов произведенийĕсене куçарассинчен хăраса тăман, вĕсене вăл пысăк ăсталăхпа куçарнă. Тытăннă пулсан, К. В. Иванов А. С. Пушкинăн произведенийĕсене те çавнашкалах ăнăçлă куçарнă пулĕччĕ. Мĕншĕн тесен вăл çак аслă поэтсен протестне ăнланнă, вĕсен прогрессивлă шухăш-кăмăлĕсене чăвашсен илемлĕ литературине кĕртес тесе хĕрӳллĕ ĕçленĕ.

2

Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарас ĕç механически япала мар, тенĕ Карл Маркс хăйĕн Николай — он патне çырнă çырăвĕнче. Буква хыççăн буква «чăмласа» куçаракан çынсем

[1] «Переводчик нередко пользуется переводными текстами для укрепления и защиты своих собственных социальных позиций». (К. И. Чуковский — «Искусство перевода», «Academia», 1936, стр. 37). Çак шухăша К. В. Ивановăн куçару тĕлĕшĕнчи ĕçĕсем пирки те калама юрать.

çеç, куçарас ĕçре пĕр чĕрĕ, творчествăллă шухăшсăр ĕçлекен этемсем çеç çакна хирĕç калама пултараççĕ.

К. Иванов «Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова» («Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрă») произведение куçарнă чухне (вăл çак ĕçе Российăра хура реакци пуçпулса тăнă çулсенче тунă пулин те), малтанах каларăмăр, прогрессивлă шухăшсен шайĕнче тăма вăй çитернĕ. Кун çинчен çак тĕслĕхсем калаççĕ. Иванов Лермонтовăн «православный народ» тенине «ырă халăх» тесе, «Святая Русь» тенине «Ырă çĕр» тесе куçарнă; çавăн пек тата «на небе божиим» тенине те вăл произведенин тупсăмĕ тăрăх куçарнă. Пĕр вырăнта Лермонтовăн «злы татаровья» тенĕ сăмахсем пур. Çакна Иванов буквально мар, «урăхлатса» куçарнă: «курайман тăшмансем» тенĕ вăл. Анчах çакăн пек куçарнисем (ун пек вырăнсем татах та пур) Лермонтов произведенийĕн тĕп шухăшне пĕрре те пăсмаççĕ.

Çак тĕслĕхсем, пĕрремĕшĕнчен, К. Иванов çав «Юрра» ăнланса, туйса илсе, пысăк ăсталăхпа куçарнине кăтартса параççĕ; иккĕмĕшĕнчен, тепĕр япала çинчен, буржуалла националистсен тезисĕ,— К. В. Иванова «мистик» тесе калакан тезисĕ,— чăнлăха хирĕç пыракан, ниме юрăхсăр, пĕтĕмпех тăрлавсăр, пĕтĕмпех суя сăмах пулни çинчен калаççĕ. Çапла вара, «Нарспи» авторĕ чăннипех те халăх чĕлхишĕн, халăх шухăш-кăмăлĕшĕн тăни çав çӳлте илсе кăтартнă тĕслĕхсенче те çителĕклех палăрать.

В. Г. Белинский çав поэтсен (Лермонтовăн, Кольцовăн) произведенийĕсене ытти чĕлхесем çине куçарма май çукки çинчен каланине те пĕлетпĕр эпир. Сăмахран, «Песня про купца Калашникова» çинчен Белинский тӳрех:

«...Его поэма не может быть переведена ни на какой язык, ибо колорит ее весь в русско-народном языке...» тесе çырнă («Стихотворения М. Лермонтова» ятлă статьяна пăхăр).

Лермонтов хăй тата хăйĕн сăввисенчи шухăшĕсем пирки акă мĕнле çырнă:

Кто может, океан угрюмый,
Твои изведать тайны? Кто
Толпе мои расскажут думы?
Я — или бог — или никто!

А. В. Кольцовăн сăвви-юррисем çинчен те В. Г. Белинский çакăн пек çырнă:

«Это (А. В. Кольцов.—*В. Д.*)—гениальный простолюдин, в душе которого возникают вопросы, свойственные только людям, развитым наукою и образованием, и который высказывает эти глубокие вопросы в форме народной поэзии. Поэтому он непереводим ни на какой язык, и понятен только у себя дома, только своим соотечественникам» («Герой нашего времени» ятлă статьяна пăхăр).

Çак сăмахсене шута илсен, Лермонтовпа Кольцов произведенийĕсене куçарасси çинчен шухăшламалли те çук пек туйăнать. Уйрăмах, чăваш чĕлхи пек чĕлхе çине, революцичченхи чăваш чĕлхи çине куçарма çăмăлах пулман ĕнтĕ. Лермонтов поэмине Иванов 1907 çулта, чăвашсен аталанса çитнĕ литература чĕлхи пулман чухне, куçарнине шута хурсан,— унăн таланчĕ мĕн тери вăйлă пулни пушшех те уççăн курăнса тăрать.

Çав ĕç К. Ивановшăн хăйшĕн те, пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн те пуçласа тунă ĕç (малтанхи ĕç) пулнă. Вырăссен классикла поэзине (прозине те) çак вăхăтчен чăвашла никам та куçарман пулнă. Пирĕн хăватлă поэт, 17 çулхи çамрăк, куçарнă «Песня про купца Калашникова» произведенине кашни вуламассерен тĕлĕнетпĕр эпир. Мĕн пек паха унăн чĕлхи! Мĕн пек пысăк илемлĕх туйăмĕ! Вулатăн та ăна, ирĕксĕрех шутлатăн: Иванов ку произведение те хăех çырнă пулĕ тетĕн, анчах çав «Юррăн» вырăсла оригиналĕ пур, Иванов куçарни çав оригиналăн вăй-хăватне çухатман, Иванов унăн пуянлăхне упраса куçарма пĕлнĕ, пултарнă. (Паллах, эпир кунта: çак поэмăн чăвашла тексчĕ «шăп та шай» вырăсли пекех темĕпĕр). К. В. Иванов çав произведенин тĕп шухăшне, унăн тупсăмне тĕрĕс ăнланса, унăн халăхлăхне, унăн пысăк илемлĕхне пĕтĕм чĕрепе туйса куçарнă,— çапла вара, вăл ăна куçарма пултарнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

3

Константин Иванов, Лермонтовăн сăввисене куçарнă вăхăтрах, «Нарспи» поэмăна тата «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Выçă аптранăскерсем» ятлă халапсене çырнă. Пĕр çул хушшинче çакăн чухлĕ пысăк ĕç тума хăватлă талант кăна пултарнă.

Лермонтов «Песня про купца Калашникова» произведение, халăх творчествипе усă курса, тоникăллă стихпа çырнă; Иванов та çавнашкалах, ăна куçарнă чухне халăх творчест-

випе усӑ курнӑ, ӑна вӑл чӑваш такмакӗсен виҫипе куҫарнӑ.

К. В. Иванов суйласа илнӗ ҫул — питех те тӗрӗс ҫул. Ҫавӑнпа та М. Ю. Лермонтов ҫырнӑ «Юррӑн» пуянлӑхӗ, унӑн халӑхлӑхӗ тата вӑйӗ чӑвашла текстра та ҫав тери чӗррӗн сисӗнет. Унта пурне те тӗл каланӑ, унта пурте хӑйӗн вырӑнӗнче. Сӑмахран, Калашников хуҫапа арӑмӗ хушшинче пулса иртнӗ калаҫуран пӗр-ик тӗслӗх илер:

«Ӑҫта, арӑм, арӑм, сулланса ҫӳрерӗн?
Мӗнле ҫын патӗнче, камсем килӗнче?
Мӗншӗн санӑн ҫӳҫӗ саланса кайнӑ,
Мӗншӗн санӑн тумтир ҫурӑлса пӗтнӗ?

Улпутсен ачисем хушшинче анчах
Ташласа, савӑнса шав ҫӳрерӗн-тӗр!
Ҫакӑн пек хӑтланма санпала эпӗ
Ӑрлӑ-арӑмланса мӑшӑрлантӑм-и?
Турӑшсен умӗнче тупа турӑм-и?..
Питӗрӗп лартăп ак тимӗр усӑпа,
Тимӗрпе тыттарнӑ алӑксен хыҫне,—
Ҫак ҫут тӗнчене курмасса ӳлӗм,
Варланман ятӑма ҫӗртмессе ӳлӗм...»

* * *

Алюна, упӑшкин сӑмахне илтсен,
Чӗтресе кайрӗ, кӑвакарчӑнӑм,
Ӑвӑс сулҫи пек чӗтреве ӳкрӗ,
Эрленсе-хурланса макăрса ячӗ,
Упӑшки умӗнче йӑванса кайрӗ.

* * *

«Эй, сутӑ хӗвелӗм, эй, ырӑ ҫыннӑм,
Е вӗлер мана, е итле мана!
Каланӑ сӑмахху — ҫивчӗ ҫӗҫӗ пек;
Ҫивчӗ ҫӗҫӗ пекех чӗреме касать.
Хӑрамастӑп хаяр вилӗмрен эпӗ,
Хӑрамастӑп ҫынсен чӗлхинчен эпӗ,
Пӗр хӑратӑп эсӗ сивӗнесрен анчах».

Тӗлӗнмелле яка та ҫыпӑҫуллӑ сӑмахсем,— шыв пек юхса пыраҫҫӗ вӗсем, ниҫта та такӑнмалли ҫук. Сӑмахсем ҫеҫ мар, кунта уйрӑм картинӑсем те питех те уҫҫӑн курӑнаҫҫӗ. «Ӑҫта, арӑм, арӑм, сулланса ҫӳрерӗн?» («Уж ты где, жена, жена, шаталася?») тенине вуласан — хуҫа арӑмӗ мӗнле «ҫӳрени» куҫ умне килсе тухать: унӑн ҫӳҫӗ саланса кайнӑ, тумтирӗ ҫурӑлса пӗтнӗ... Кунта Иванов уйрӑм сӑмахсене ҫеҫ мар, вӗсен ӑшчиккине, шухӑшне ҫеҫ мар, ҫав шухӑшсен пӗтӗм

тумне, картинине куçарнă,— ăна вăл копи çырса илнĕ пек мар, оригинал çырнă пек тунă: куçарни пачах та сисĕнмест. Тепĕр картина:

> Как запру я тебя за железный замок,
> За дубовую дверь окованную.

Çак та, тĕрĕссипе каласан, вулама çăмăл — куçарма йывăр йырăн, анчах ун пек вырăнсем Ивановшăн пĕрре те йывăр пулман.

Акă мĕнле куçарнă вăл вырăна «Нарспи» авторĕ:

> Питĕрĕп-лартăп ак тимĕр уçăпа,
> Тимĕрпе тыттарнă алăксен хыçне..

Пĕтĕмпех «чăвашла», пĕтĕм поэма çавăн пек, анчах та унта вырăс писателĕ, пысăк генийлĕ поэт М. Ю. Лермонтов панă пуянлăх пĕтĕмпе курăнса тăрать.

Е тата çак сыпăкранах тепĕр вырăн, питех те тĕлĕнмелле ăсталăхпа куçарнă вырăна илер:

Вырăсла:

> Горько-горько она восплакалась.

Чăвашла:

> Эрленсе-хурланса макăрса ячĕ...

Кунта та Лермонтов панă картина пирĕн умма туллин тухса тăрать. Пĕтĕмпе те тăватă сăмах çеç, çитменнине тата — глаголсенчен тунă сăмахсем кăна, анчах Иванов вĕсемпе ăста усă курнă: вĕсем тăваттăшĕ пĕрле Лермонтов çырнине ытла та илемлĕн кăтартса параççĕ.

4

Çак «Юрра» куçарни К. В. Ивановăн литературăри ĕçĕнче малтанхи опыт пулнă (ун чухне вăл «Нарспи» поэмăна тата ытти произведенисене те çырман-ха,— çапах та, вăл çак поэмăна куçарнипех те ăста поэт талантне кăтартнă. Вăл çакна валли кирлĕ майсене, сăмахсене, сăмахсен кирлĕ çыхăнăвĕсене суйласа илме пĕлнĕ.

Вăл картинăллă уйрăм сăмахсене акă мĕнле куçарать:

> Солнце красное — ылтăн хĕвел.
> Тучки синие — шурă пĕлĕтсем.
> Очи темные — тĕксĕм куçсем.

Слово грозное — хыт сăмах.
Красны девушки — сар хĕрсем.
Кони легкие — урхамах утсем.
Диво-дивное — халиччен пулманни,
Тихим шопотом — пăшăл-пăшăл хуллен...
Дитя малое, неразумное — ăс-пуç пуçтарман ача.

Е тата тепĕр вырăн, пĕтĕмпех тĕрлĕ эпитетсенчен тăраканскер:

И в ответ ему братья молвили:
«Куда ветер дует в поднебесьи,
Туда мчатся и тучки послушные;
Когда сизый орел зовет голосом
На кровавую долину побоища,
Зовет пир пировать, мертвецов убирать,
К нему малые орлята слетаются.
Ты наш старший брат, нам второй отец:
Делай сам, как знаешь, как ведаешь,
А уж мы тебя родного не выдадим».

К. Иванов çакна акă мĕнле куçарнă:

«Пĕлĕт айĕ тăрăх çил ăçта вĕрет,
Çумăр пĕлĕчĕ те унталлах шăвать;
Вăрçă хыççăн хирте, вилĕсем çинче,
Кăвак ăмăрткайăк сассипе чĕнсен,
Ĕçкĕ-çикĕ тума, вилесем çиме,
Ун патне чĕпписем пухăнса вĕçет.
Эсĕ пирĕн асли, атте вырăнне:
Мĕн тăвас тесен те, хăвăн ирĕкў,
Эпир те тăваншăн тăма пĕлĕпĕр!»

Е тата аслă та чаплă Мускав çинчен çырнă вырăна илер-ха:

Ылтăн тăрлă аслă Мускав çине,
Кремль шурă чуллă хўмисем çине,
Аякри вăрмансен, çўл тусен енчен
Çурт-йĕрсен тăррипе выляса-кулса,
Хуп-хура пĕлĕте салатса ярса,
Хĕп-хĕрлех çурăмпуç çутăлса килет,
Кĕрпе пек юр çине хĕлхемсем ярать;
Сарă хĕр куçкĕски витĕр пăхнă пек,
Кăн-кăвак пĕлĕте вăл пăхса кулать.
Мĕншĕнех, çурăмпуç, хĕрелсе килтĕн?
Мĕншĕнех савăнса выляса ятăн?

Çак тĕслĕхсенчен эпир акă мĕн куратпăр: К. В. Иванов чĕлхин çăлкуçĕ — халăх чĕлхи, чăваш халăхĕн юрри-кĕввисем, тĕрлĕ такмакĕсем, юмах-халапĕсем.

Ку «Юрăра» халăх юррисем майлă вырăнсем сахал мар. «Малые орлята слетаются» тенине К. В. Иванов: «Чĕпписем пухăнса вĕçет», тесе куçарнă.

Вăл хăйĕн «Кĕркунне» ятлă сăввинче те шăпах çавăн пек çырать:

Карти-карти кайăксем
Вĕçет тинĕс леш енне.

«Çумăр» сăвăра тата:

Вăш-вăш ăшă çилсем вĕрет-ĕçке,
Тырă пучахĕсене таять-çке,— тенĕ.

Халăх творчествин формисемпе çакăн пек усă курнисем «Нарспи» поэмăра та пур. «Çилсем вĕрет» тенĕ сăмахсене тĕл пулсан, хăшпĕр «критик» тенĕ этемсем —«Нарспи авторĕ чăваш чĕлхине пĕлмест», тесе хума та хатĕр. Хатĕр кăна мар,— иртнĕ вăхăтра пĕр «критик» хăйĕн статьинче шăпах çавăн пек каласа хунăччĕ!

Анчах халăх творчествинче сăмахăн çавăн евĕрлĕ çаврăнăшĕсем час-часах тĕл пулаççĕ.

Сăмах май тесе, халăх юррисенчен пĕр-ик тĕслĕх илер:

Ырă утсем юртать — çулсем юлать;
Ырă çынсем вилет — ят юлать.

Халăх творчествинче тата çакнашкал тĕслĕхсене те тупма пулать:

Маттур хĕрсем каяççĕ çырлана,
Йĕкĕт-каччă пырать хыçĕнчен;
Ыталаса илсе чуптăвать,
Ĕмĕр уйăрлмасса чуптăвать.

Ивановăн та «ĕмĕр уйăрлмасса» евĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулаççĕ:

Çакă çут тĕнчене курмасса ӳлĕм,
Вараланман ятăма çĕртмессе ӳлĕм.

Мускав çинчен çырнине куçарнă çĕрте халăх юрри-сăввисенчен çакăн пек элементсене илнине тупатпăр: «хĕп-хĕрлех», «мĕншĕнех» тата ытти те.

Ку произведение Лермонтов хăй те халăх творчествипе усă курса çырнă; куçарма та ăна урăхла майпа мар, халăх творчествипе усă курса куçармалла пулнă. К. Иванов вара

ку ĕçе ытла та ăста, калама çук çепĕç тунă: çак ĕçре вăл тулă хушшинчи пукра пĕрчисене татса пăрахнă, кĕскен каласан, вăл хăйĕн ĕçĕ çине критикăлла пăхнă,— ăна вăл механически мар, ăнланса тунă: ку ĕçре вăл — Пушкин пек, Лермонтов пек, Некрасов пек ĕçленĕ.

5

М. Ю. Лермонтов творчествинче «Парус» (1832), «Сосна» (1840), «Утес» (1841), «Дубовый листок» (1841), «Тучи» (1840) пек сăвăсем чылаях пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак произведенисенче Лермонтовăн пĕчченлĕхĕ, унăн хуйхăллă кăмăлĕ палăрать. Калас пулать, çакăн евĕрлĕрех пĕчченлĕх Ивановăн та хăшпĕр таран пулнă.

К. В. Иванов Чĕмпĕрти шкулта чухне вĕренекенсен забастовкине хутшăннă, анчах кайран, реакци тапхăрĕнче, вăл тăр-пĕччен тенĕ пек ĕçлет (вулать, çырать, куçарать).

Асап килсен, хĕн килсен,
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Йртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек,—

тесе çырать поэт «Ватă вăрман шухăшĕ» ятлă сăввинче. Тĕрĕссипе каласан, çакă вăл «вăрман» шухăшĕ мар, Ивановăн хăйĕн шухăшĕ. Вăл, чăваш çамрăкĕсен ăнланакан представителĕ, «асап, хĕн-хур» килнине, «хура пĕлĕт пек» килнине курнă. Çакăн пек хура пĕлĕте чăваш ĕççыннисен çамрăкĕсем те курса сиссе тăнă. Вĕсем тата акă мĕнле юрланă:

Хура вăрман тăрринче хура пĕлĕт
Каять-çке вăрман тăршшĕпе;
Манăн çамрăк пуçра йывăр хуйхă
Пырать-ĕçке ĕмĕр тăршшĕпе.

Çак шухăш-кăмăла К. В. Иванов туйса тăнă: вăл «хура пĕлĕт» хупăрласа тăнă вăхăтра, патша саманинче, пурăнмашкăн, мĕн тери йывăр пулнине сиссе çырнă; куçарнă чух та вăл çавăн пек шухăшлă сăвăсене ытларах куçарнă. Çакăн çинчен А. В. Кольцовăн çак сăввине куçарнă факт та каласа парать:

Сивĕ çил вĕрет,
Хаяр çил вĕрет;
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.

Курăнмасть унта
Çутă кун çути,
Курăнмасть унта
Çут хĕвел çути.

Сĕм тĕттĕм çĕрте
Тĕтресем витĕр
Хура кас анчах
Хуралса тăрать.

Çакăн пек вăхăт,
Çак усал вăхăт
Пĕр-пĕччен çынна
Чĕрине хĕсет.

«Асап килсен...» сăввăн, чăваш çамрăкĕсен юррин тата А. В. Кольцов сăввин шухăш-туйăмĕсем пĕр пек: поэт хура пĕлĕт хупăрланине каласа парать, çав вăхăтрах пĕччен-лĕх шухăш-кăмăлне палăртать,— астăвăр-ха, сетнерсем те пĕччиеншерĕн пулнă мар-и! («Сетнер утрĕ пĕр-пĕччен...»).

Лермонтовăн «Парус» сăввин малтанхи куплетĕнче те пĕччен-лĕх çинчен каланă:

Пĕччен парăс шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...

«Чул ту» сăвва илсен те çавнах куратпăр:

Чул ту пĕр-пĕччен
Хуллен йĕрет, хурланать.

Çакă вăл, калас пулать, вăя çухатни мар, пуласси-не ĕненме пăрахни мар, Лермонтов творчествинче пĕччен-лĕх кĕвви пур вăхăтрах, хастарлăх, хăюлăх, ĕненӳ кĕвви пур.

Вăл хăйĕн «Предсказание» ятлă сăввинче çапла каланă:

Настанет год, Россия черный год,
Когда царей корона упадет...

А. В. Кольцов хăшпĕр сăввисенче:

Тяжелей горы,
Темней полночи
Легла на сердце
Дума черная,—

тенĕ йышши шухăшсене каласа панă. Çав вăхăтрах вăл акă мĕнле çутă шухăшсем çинчен çырнă:

Со злобою людскою,—
Там, в обломках, царство
Зарастет травою.

Племена другие
На них поселятся;
Города большие
Где пройдет коварство
Людьми разродятся.
. . . . .
И жизнь молодая
Шумно запирует.

К. В. Ивановăн та пысăк шанчăк пур. Вăл михетерсен пуянлăхĕ çине мар, халăх хăйĕн çиллине хăпартасси çине шанать, ăна ĕненсе тăрать.

Поэт тăван халăхне улпутсене хирĕç тухма, малалла кайма хăюллăн чĕнет:

Вăранăр, тапранăр, чăваш сыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине хăпарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

Чăваш халăхĕ хушшинче К. В. Иванов хăйне пĕччен гесе шутламан, унăн пĕчченлĕхĕ унта пулман, пулма та пултарайман,— унăн пĕчченлĕхĕ уншăн ют тавралăхра, укçашăн, мулшăн çунакансем хушшинче сисĕннĕ: кунта вăл чăннипех те пĕччен пулнă.

Халăх шухăшĕпе кăмăлĕ уншăн пысăк çăлкуçĕ пулнă, халăх хушшинчен вăл хăйĕн творчествин вăйне илсе тăнă. Хăйĕн Этемне вăл халăх хушшинче, ĕççыннисем хушшинче шыранă, ăна вăл унта тупнă та,— урăхла пулма пултарайман та, мĕншĕн тесен К. Иванов халăхпа çыхăнса тăнă, халăхăн тава тивĕçлĕ ывăлĕ пулнă.

6

М. Ю. Лермонтовăн «Парус» ятлă сăввине те К. Иванов питех те илемлĕ куçарнă. Ку сăвва, Ивановсăр пуçне, юлашки вăхăтра (1938 ç.) чăвашсен ытти поэчĕсем те кашни уйрăмшарăн куçарчĕç.

Çак виçĕ текста танлаштарса пăхни хăшпĕр таран интереслĕ пулмалла: пĕрремĕшĕнчен, вăл Ивановăн ăсталăхне

тата та ытларах палăртса парать; иккĕмĕшĕнчен, вăл пирĕн çамрăк тăлмачсемшĕн те кăштах усăллă пулĕ.

Пĕрремĕш куплет:

Белеет парус одинокой
В тумане моря голубом...
Что ищет он в стране далекой?
Что кинул он в краю родном?

Виçĕ поэт çак куплета акă мĕнле куçарнă:

1

Пĕччен парус шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнчен...
Мĕн инçе, ют çĕрте вăл шырать?
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче? [1]

2

Пĕччен шăвать пĕр шурă парăс
Тĕтреллĕ тинĕс варринче...
Ют çĕршывра вăл мĕн шыртаь-ши?
Мĕн юлнă-ши çĕршывĕнче?

3

Курăнать пĕччен çĕ парăс шуррăн
Кăвак тинĕс инçетĕнче.
Мĕн ют çĕрте шырать вăл хурлăн?
Мĕн юлнă ун çĕршывĕнче?

Хăш автор куçарни вырăсла текстпа çывăх тăрать?— тесе ыйтсан, тӳрех: пĕрремĕш текст — К. В. Иванов куçарни, тесе калама тивет. Чăнах та, вăл акă ăçтан курăнать.

1. Пĕччен парăс — парус одинокий.
2. Пĕр шурă парăс — один белый парус.
3. Пĕччен çĕ парăс — одинокий (?) парус.

---

1. Парăс шуррăн курăнать — белеет парус.
2. Пĕччен шăвать... парăс — одиноко плывет парус.
3. Курăнать (пĕччен çĕ) парăс шуррăн — виднеется (одинокий) парус бело.

---

1. Кăвак тинĕс — море голубое.
2. Тĕтреллĕ тинĕс — море туманное.
3. Кăвак тинĕс — море голубое.

---

[1] Пĕрремĕш тĕслĕхе пур çĕрте те К. В. Иванов куçарнинчен илпĕ.

1. Тинĕс тĕтри ăшĕнче — в тумане моря.
2. Тинĕс варринче — в середине моря.
3. Тинĕс инçетĕнче — в дали моря.

«Что кинул он в краю родном?» тенине К. Иванов «Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче?» тесе куçарнă. Калас пулать, çакă вăл тĕрĕсех мар, анчах та тĕп шухăша çухатмасть. Çавăн пекех ăна «çĕршывĕнче» тени те тĕрĕсех пулмĕ, мĕншĕн тесен вăл «в краю родном» тенине пĕлтерсех каймасть, çапах та ăна урăхла куçарма çук. Çакă вăл текста çывăх тăрать, анчах та Иванов куçарни те текстран уйрăлса каймасть.

Ытти куплетсене илсен те, пирĕн авторсен тĕрлĕ ăнланăвĕсем, тĕрлĕ мелĕсем курăнаççĕ.

Иккĕмĕш куплет:

Играют волны, ветер свищет,
И мачта гнется и скрипит...
Увы! он счастия не ищет
И не от счастия бежит!

Çак куплета виçĕ поэт акă мĕнле куçарнă:

1

Чӳхенеççĕ хумсем, çил улать,
Шăтăр-шатăр юпа авăнать...
Анчах парăс телей шырамасть,
Телейрен те тарса вăл каймасть!

2

Хумсем выляççĕ, çил шăхăрать тек,
Çӳл мачта тертлĕн авăнать...
Анчах, телей-мĕн шырамасть вăл,
Ах, телейрен те-çке тармасть.

3

Хумсем выляççĕ, çил шăхăратчĕ,
Авăнатчĕ мачта, хуçлĕ тен;
Çук, телее вăл шырамасть-тĕр,
Тата тармасть-тĕр телейрен.

Тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: К. В. Иванов хăйĕн ĕçĕ çине творчество енчен пăхать, вăл халăх каланă евĕрлĕ туса куçарать, халăх чĕлхинче кирлĕ сăмахсем тупать. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш поэтсем текстран нимĕн чухлĕ те «пăрăнасшăн» мар: «играют волны» — «хумсем выляççĕ»; «ветер свищет»—«çил шăхăрать» тата мĕн кирлĕ-ха?

Кунта пурте пур-ҫке! Сӑмахсем тӗлӗшпе ҫаксем иккӗшӗ те тӗрӗс, ӑшчикки енчен те ҫавах; анчах К. Ивановӑн сӑмахӗсем урӑх пулсан та — картинӑлӑрах, ӑшчикки енчен вара Лермонтовӑнчен кӑшт та аякра тӑмасть. Унӑн ҫак строфи иккӗмӗш строфипе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. «Ҫил улать» (ку «шӑхӑрать» тенинчен вӑйлӑрах), «шӑтӑр-шатӑр юпа авӑнать» (кунта сасси те илтӗннӗ пек туйӑнать; вырӑсла та ҫавӑн пекех: «скрипит» тени ҫил вӗрнине систерет); ытти поэтсем урӑхла: «тертлӗн авӑнать»; «хуҫлӗ тен», парӑсӗ те «хурлӑн» (?) шырать,— ҫаксене вуланӑ чухне нимӗнле сасӑ та туйӑнмасть; ҫитменнине тата вӗсем текстпа килӗшсех те тӑмаҫҫӗ. Малалли йӗркесем (виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш) пирки ҫырмасан та юрамалла. Паллах, вӗсем те пӗр пек мар, анчах Лермонтов ҫырнӑ текстри элементсем вӗсенче пуринче те пур.

Виҫҫӗмӗш куплета илер.

Вырӑсла:

Под ним струя светлей лазури,
Над ним луч солнца золотой,—
А он, мятежный, просит бури,
Как будто в бурях есть покой!—

Чӑвашла:

1

Ҫутӑ юхӑм унӑн айӗнче,
Ҫӳлтен ылтӑн хӗвел ҫутатать.
Канӑҫсӑр! Ҫил-тӑвӑл шавӗнче
Канлӗх пур пек, тӑвӑл вӑл ыйтать.

2

Унӑн айӗнче ҫап-ҫутӑ юхӑм,
Хӗвел шевли ун ҫийӗнче.
Вӑл, чӑрсӑрскер! Ыйтать-ҫке тӑвӑл
Кану пур пек ун шавӗнче.

3

Ун айӗнче — ҫут шывӑн шавӗ.
Ҫӳлтен хӗвел савӑнтарать.
Пӑлхавҫӑ, вӑл ыйтать ҫил-тӑвӑл,
Тупас пек канлӗх тӑвӑлра.

Кунта, уйрӑм вырӑнсене тӗрлӗ май ӑнланса куҫарнӑ пулин те, Ивановпа иккӗмӗш поэт пӗр майлӑрах куҫарнӑ. Виҫҫӗмӗшӗ — куҫарни вара текстран уйрӑлса кайнӑ. Чӑнах та,

М. Лермонтов «çут шывăн шавĕ» çинчен каламасть, сăмах кунта шыв юхăмĕ çинчен пырать. Тепĕр енчен тата «хĕвел савăнтарать» тени те Лермонтовăн çук, кунта вăл савăнăç çинчен каламан: «Парус» сăвăран ун пек шухăш-кăмăл тухса тăмасть. Виççĕмĕш тăлмач, Лермонтовăн текстне тĕрĕс ăнланман пирки, хирĕçĕве те кĕрсе ӳкет: пĕр енчен, «Мĕн ют çĕрте шырать вăл хурлăн?», тет вăл, анчах çав вăхăтрах çав парус савăнса пырать иккен! («Çӳлтен хĕвел савăнтарать», тесе куçарнă вăл).

«Мятежный» сăмаха кунта кашни автор тĕрлĕ куçарнă (канăçсăр, чарусăрскер, пăлхавçă). Чăнах та, ăна текстран уйрăм илсен, виçĕ майлă та куçарма пулать. Мĕншĕн тесен, вырăсла чĕлхере те унăн çавăн пек пĕлтерĕшсем пур. Сăмахран, Д. Н. Ушаков профессор редакцилесе кăларнă словаре илер-ха. Унта вăл сăмаха акă мĕнле ăнлантарса панă:

«Мятежный... 1. Причастный к мятежу, замышляющий, поднимающий мятеж. *Мятежные войска. Противен мне* (царю Борису) *род Пушкиных мятежный.* Пшкн. 2. Тревожный, мятущийся, неспокойный, бурный. *Мятежная душа. М. характер. А он, мятежный, просит бури, как будто в бурях есть покой!* Лрмнтв.» («Толковый словарь русского языка», том II, стр. 294).

Пирĕн шутпа, «Парус» сăвăра «мятежный» сăмаха «тревожный», «неспокойный» пĕлтерĕшпе каланă. Çавăнпа та ăна «канăçсăр» тесе куçарни тĕрĕс пулать. Ан манăр: Лермонтовăн парăсĕ «покой» (канлĕх, кану) шырать, анчах вăл тăвăл ыйтать.

Çак сăвва куçарнин тĕслĕхĕсем — питех те вĕрентӳллĕ тĕслĕхсем. Куçарас тесен, уйрăм илнĕ сăмах пĕлтерĕшне тупни сахал, вăл сăмах ытти сăмахсем хушшинче, сăмахсене организацилесе пуплев тунă йĕркере, пĕтĕм произведенире мĕне пĕлтернине ăнланса куçарас пулать. К. Ивановăн ку тĕлĕшпе тĕлĕнмелле пысăк туйăм пулнă. Музыкăра эпир хăшпĕр сасăсене туйса илейместпĕр те, анчах музыкант,— талантлă, пысăк туйăмлă музыкант,— кашни сассах уйăрса илме пултарать. Иванов çинчен те çавнах каламалла: вăл чĕлхери сăмахсен кашни уйрăмлăхне, кашни пуплеври унăн хăйне евĕрлĕ пĕлтерĕшне туйса илме пултарнă. Çавăнпа та вăл поэзи маçтăрĕ, стиль маçтăрĕ пулнă, куçарас ĕçре те вăл пысăк маçтăр пулнă. Çав вăхăтрах вăл произведенин тĕп шухăшне тĕрĕс ăнланса илме пĕлнĕ. Вăл мĕнле произведенисене куçармаллине те лайăх пĕлнĕ. Малтанах каларăмăр, К. Иванов «куçарас» тенипе кăна мар куçарнă, вăл

Лермонтовăн, Кольцовăн, Некрасовăн сăввисене куçарнă чухне, çак ĕç çине хăйĕн социалла шухăш-кăмăлĕ енчен пăхса ĕçленĕ.

7

К. В. Иванов ырăс халăхĕн прогрессивлă илемлĕ литературин çулĕ çинче тăнă. Çакă вара питех те пысăк вăй парса тăракан çул пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл Пушкин, Лермонтов, Кольцов, Огарев, Чернышевский, Некрасов, Толстой произведенийĕсене вуланă, вĕсем тăрăх вĕреннĕ, вĕсемпе хăйĕн тăван халăхне паллаштарнă.

Лермонтовпа Кольцовăн сăввисене куçарнисĕр пуçне, К. Иванов Н. А. Некрасовăн «Кому на Руси жить хорошо» ятлă произведенине (чи революциллĕ поэмине) куçарма тытăннă.

Ухсай Яккăвĕ каланă тăрăх, К. В. Иванов «Некрасов урлă чăн-чăн халăх литератури шухăшне хытăрах туйса илнĕ» («Чăваш Коммуни», 9-мĕш №, 1940 ç.).

Некрасовăн çав поэминчен К. В. Иванов «Выçă юрă» («Голодная») тенĕ вырăна илсе куçарнă. Çак татăкра выçă хресчен çинчен тĕлĕнмелле картинăсемпе каланă:

Хресчен тăрать —
Тайкаланать,
Хресчен пырать,
Сывлаймасть те!

К. Иванов Некрасовăн «Выçă юррине» пур сăввисенчен те малтан куçарнă, урăхла каласан, çакă Ивановăн чи малтанхи опычĕ пулса тăрать, темелле. Çапах та кунта акă мĕн характерлă: пĕрремĕшĕнчен, Ивановăн литературăри малтанхи опычех революциллĕ-демократиллĕ поэтăн произведенине куçарма тытăннинчен пуçланать; иккĕмĕшĕнчен, унăн çак малтанхи ĕçĕнчех пысăк ăсталăх сисĕнет,— унăн чĕлхи якалса çитнĕ, вăл нумайранпа ĕçленĕ поэт пекех, кирлĕ сăмахсене, кирлĕ сăмах çаврăнăшĕсене тупма пĕлет...

Çакă вăл Некрасовăн тепĕр сăввине мĕнле куçарнинчен те лайăх курăнать:

Мужик, что бык: втемяшится
В башку какая блажь,
Колом ее оттудова
Не выбьешь: упираются,
Всяк на своем стоит!

---

[1] Н. А. Некрасов. Полное собр. стихотворений. Изд. XI, Ленинград, 1935 г., 235.

К. В. Иванов ку вырӑна акӑ мӗнле куҫарнӑ:

Хресчен ҫынни хӗрсессӗн,
Ене пекех ӗнерсӗр:
Пуҫне кирлӗ-кирлӗ мар
Пӗрер шухӑш кӗрсессӗн,
Савӑл лартса ҫапса та,
Тукмакпа та тухас ҫук.
. . . .

1935 ҫулхине «Кому на Руси жить хорошо» поэмӑн прологне чӑвашсен тепӗр писателӗ, Хумма Ҫеменӗ (С. Ф. Фомин) куҫарма тытӑнать. Н. А. Некрасов поэмин Иванов 1907 ҫулта куҫарнӑ вырӑнне Хумма Ҫеменӗ чӑвашла ҫакӑн пек куҫарнӑ:

Мужик вӑл вӑкӑр пек: пуҫа
Кӗрсессӗн пӗр-пӗр япала,
Ҫапса кӑлараймӑн савӑлпа:
Чӑркӑшаҫҫӗ вирлӗнех,
Кашни калать ҫав хӑйӗннех.

1938 ҫулта ҫак вырӑнах тата Арк. Эсхель куҫарнӑ:

Мужик вӑл ҫирӗп, вӑкӑр пек,
Унӑн пуҫне мӗн кӗчӗ-и,
Ӑна чунтан чукмарпала
Ҫапса та кӑлараймӑн ҫав:
Кашни хӑйшӗн тӑрать.

Ҫак тӗслӗхсем те каллех К. Иванов куҫарас ӗҫре халӑх сӑмахӗпе мӗнле ӑста усӑ курни ҫинчен, кирлӗ сӑмахсене мӗнле тупма пӗлни ҫинчен каласа параҫҫӗ. «Мужик, что бык...» тенине Хумма Ҫеменӗ «Мужик вӑл вӑкӑр пек». Арк. Эсхель «Мужик вӑл ҫирӗп, вӑкӑр пек...» тесе куҫарать. Паллах, Иванов та «бык» сӑмах чӑвашла «вӑкӑр» пулнине пӗлмен мар,— ҫапах та вӑл ҫак вырӑна: «хресчен ҫынни хӗрсессӗн, ӗне пекех ӗнерсӗр» тесе куҫарнӑ. Калас пулать, вӑл ҫак вырӑн мӗне пӗлтернине, унӑн тупсӑмне ӑнланса илсе куҫарнӑ, ӑна куҫарма вӑл чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗпе усӑ курнӑ. Вырӑс халӑхӗ итлемен ҫынна вӑкӑрпа танлаштарать, чӑвашсем хушшинче ун пек ҫынсене час-часах ӗнепе танлаштараҫҫӗ. Тепӗр енчен тата, Некрасов кунта вӑкӑр пек вӑйлӑ, ҫирӗп пулни ҫинчен каламасть, вӑл «ӗне пек ӗнерсӗр» пулни ҫинчен, итлеменни, пӑхӑнманни ҫинчен калать [1].

---

[1] Ӗнерсӗр — неслух, шалун (проф. Н. И. Ашмарин. Словарь чувашского языка, т. IV, стр. 120).

«Выçă юрă» тенĕ сыпăкра та К. Иванов халăх чĕлхинчен илнĕ сăмах çаврăнăшĕсемпе тĕрĕс усă курать.

«Тоска — беда» тенĕ «Голодная» ятлă сыпăкра. К. Иванов çак вырăна куçарма питех те вырăнлă сăмахсем шыраса тупать; ăна вăл «хуйхă-суйхă» тесе куçарнă. Е тата: «как идол...» тенине «тункатa пек...» тесе куçарнă.

Çак сăмах çаврăнăшĕсене пурне те фольклортан илнĕ, вĕсем кунта пурте вырăнлă, пурте Некрасов шухăшĕпе килĕшсе тăраççĕ.

Хăшпĕр «чараксăр критиксем» К. Иванов çинчен вăл пуянлăха мухтакан юрăçă тесе те çырма пăхрĕç. Анчах Ивановăн творчество пуянлăхĕ çак шухăша ним юлмиех сирсе пăрахать. Иванов реалист пулнă, реализм çулĕ çинче тăнă, вырăссен реалист-писателĕсенчен вĕренсе пынă. Вăл пурнăçа пĕр енчен кăна мар, нумай енчен çутатса панă; вăл пуянлăх çинчен те, «асап, хĕн-хур», «хуйхă-суйхă» çинчен те çырнă, анчах унăн кăмăлĕ яланах халăх енче пулнă.

Çак шухăш тĕрĕс пулни çинчен унăн оригиналлă произведенийĕсем те, вырăсларан куçарнă произведенийĕсем те уççăнах каласа параççĕ.

8

Константин Иванов 1905—1907 çулсенче Огаревăн сăввисене вуласа хăйĕн чунне çĕклентернĕ. Вăл, вырăс литературин прогрессивлă идеисене хапăл туса йышăннăскер, Н. П. Огаревăн «Засуха» ятлă сăввин[1] малтанхи пайне чăвашла куçарнă.

Вырăсла ку сăвă çакăн пек:

Нет ни тучки, солнце пышет,
Ярко блещет синева,
Воздух душный знойно дышит,
Блекнет бледная трава;
Нива рано пожелтела,
Сохнет колос, цвет убит;
Наша речка обмелела,
Наша мельница молчит.
Роща листья опустила,
Птице дышится с трудом,
Стадо тощее уныло

[1] Ку сăвă Н. П. Огаревăн 1858 çулта çырнă «Сушь и дождь» ятлă произведенин пĕрремĕш пайĕ пулса тăрать.

Дремлет в сне полуживом.
Людям жутко в эту пору,
Будет голод, жизнь тяжка;
По блестящему простору
Всюду мертвая тоска.

«Нарспи» авторӗ Огарев сӑввин пуҫламӑшне ҫакӑн пек куҫарнӑ:

УСАЛ ШАРĂХ

Пӗр пӗлӗт ҫук, хӗвел ҫунать,
Кӑвак пӗлӗт йӑлтӑртатать,
Пӑчӑ сывлӑш вӗри тӑрать,
Мӗскӗн чечек сарӑхать.

Ыраш ани типсе кайнӑ,
Пучахӗ ун саралнӑ.
Пирӗн ҫырман шывӗ чакнӑ,
Пирӗн арман шӑпланнӑ.

Эпир ку сӑвва пӗтӗмпех ҫырса илтӗмӗр, мӗншӗн тесен пирӗн хӑшпӗр юлташсем «усал шӑрӑх» сӑвва, вӑл Ивановӑн оригиналлӑ произведенийӗ тесе, тепӗр хут вырӑсла куҫарса кӑларчӗҫ (пӗрре ҫеҫ мар — виҫӗ хутчен куҫарчӗҫ!).

К. Иванова илес пулсан, вӑл ӑна ахальтен кӑна куҫарнӑ темелле мар,— «Нарспи» авторӗн, поэт-гражданинӗн, вырӑс литературин вӑйӗпе хавхаланнӑскерӗн, ҫакна тунӑ чухне пӗр тӗллев пулнӑ. Унӑн шухӑшне патша Российинчи ирсӗр пурнӑҫ, ун чухне час-часах пулнӑ выҫлӑхсем канлӗх паман (1906 ҫулта та выҫлӑх пулнӑ!) Ҫакӑн пирки ӗнтӗ пысӑк сисӗмлӗ поэт, Иванов, ҫав ҫулсенче Огаревӑн «Засуха» ятлӑ сӑввине, Некрасовӑн «Голодная» тенӗ сӑввине чӑвашла куҫарать. Кусемсӗр пуҫне тата, 1907 ҫулта вӑл хӑй те «Выҫӑ аптранӑскерсем» ятлӑ сӑвӑ ҫырать.

К. Иванова Н. П. Огаревӑн, поэт-революционерӑн — А. И. Герцен тусӗн шухӑшӗсем килӗшни тата ҫакӑнтан курӑнать: Н. П. Огарев хӑй вӑхӑтӗнче 1861 ҫулти февралӗн 19-мӗшӗнчи реформӑн ултавӗ ҫинчен сахал мар хӗрӳллӗ сӑмахсем ҫырнӑ; тепӗр ҫур ӗмӗр иртсен, К. В. Иванов тарӑхса ҫав реформа ҫинчен ҫапла ҫырнӑ:

Хура халӑха ирӗке янӑ
Нарсӑн вунтӑххӑрмӗш кунӗнче,
Анчах ҫӗр халӑха пулаймарӗ,—
Ак сире улпутсен ырлӑхӗ!

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

Огаревăн революциллĕ лирики хальхи вăхăтра та янравлăн илтĕнет. Унăн паха сăввисене чăваш поэчĕсем халĕ те куçараççĕ. Сăмахран, Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Огаревăн «Ирĕклĕх» ятлă сăвви чăвашла пичетленсе тухрĕ. Çакă вăл вырăс литературин революциллĕ традицийĕсене пирĕн писательсем, поэтсем пысăк хака хунине пĕлтерет.

9

К. Иванов творчествинче ача-пăча валли çырнă сăвăюрăсем те паха вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăл ачасем валли оригиналлă сăвăсем çырнă вăхăтрах, вырăсларан та куçарнă. Вĕсем — «Çулталăк хушши», «Чĕкеç», «Сăпка юрри» тата ыттисем те.

«Сăпка юррин» авторĕ — вырăссен XIX-мĕш ĕмĕрти паллă поэчĕ — А. Н. Майков (1821—1897).

Ку сăвă вырăсла çакăн пек:

Спи, дитя мое, усни!
Сладкий сон к себе мани.
В няньки я тебе взяла
Ветер, солнце и орла.

Улетел орел домой;
Солнец скрылось за горой;
Ветер, после трех ночей,
Мчится к матери своей.

Ветра спрашивает мать:
«Где изволил пропадать?
Али звезды воевал?
Али волны все гонял?»—

«Не гонял я волн морских,
Звезд не трогал золотых;
Я дитя оберегал,
Колыбелечку качал!»

А. Майков сăвви Ивановшăн кăмăллă произведени пулнă, çавăнпа ăна вăл юратнă, тăван чĕлхене куçарса, чăваш ачисем патне çитерме тăрăшнă.

Поэт ку чухне те пысăк ăсталăх кăтартнă. Вăл ăна акă мĕнле куçарнă:

Çывăр, ачам, çывăрах!
Ыйху тутлă пултăрах!
Сана пăхма илтĕм эп
Ăмăрткайăк, çил, хĕвел.

Ăмăрт вĕçрĕ килелле,
Хĕвел анчĕ ту айне;
Виçĕ каçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.

Çилтен ыйтать амăшĕ:
— Ăçта эсĕ пултăн-ши?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и,
Ĕ хумсене çапрăн-и?

— Тинĕс хумне çапмарăм,
Çăлтăрсене тивмерĕм,
Эпĕ ача сыхларăм,—
Ун сăпкине сиктертĕм!

«Колыбельная песня» сăвва Иванов вырăсла ытти сăвăсенчен кайрантарах куçарнă. Тĕрĕсрех каласан, ăна вăл чăвашла букварь хатĕрленĕ чухне ятарласах куçарнă пулмалла.

«Сăпка юррине» те Иванов питĕ çепĕç те ăста куçарнă. Иванов сăмахсене шутласа мар, сăмахсен, йĕркесен, строфасен тупсăмне, тĕп шухăшне ăса илсе куçарать, çав вăхăтрах вĕсен илемлĕхне те, художествăллă пахалăхне те упраса хăварать. Юлашки строфара çеç пĕр лайăх сăмаха сиктерсе хăварнă. А. Майков: «звезд не трогал золотых», тет пулсан, К. Иванов: «çăлтăрсене тивмерĕм» тет çеç, «золотых» сăмаха сиктерсе хăварнипе çак йĕркен илемлĕхĕ кăштах чакнă, çапах та шухăшĕ пăсăлман.

Çакăн пек тунă вырăнсем, пĕчĕк кăлтăксем Иванов куçарнă произведенисенче татах та тĕл пулаççĕ. Анчах произведенин тĕп шухăшне пăсса куçарни Ивановăн çук.

10

Иванов вырăсларан куçарнă произведенисене тĕпчесен, вăл мăйăр тĕшне уйăрса илме пĕлни, тăван халăх валли чи тасине, чи усăллине тирпейлĕн уйăрса илме пĕлни курăнать. Вăл тутă та сарă мăйăра сассинчен пĕлнĕ, выçă та пушă, хуртлă мăйăрсене çăвара хыпса çăвар тутине яман.

К. Иванов — пысăк талант, халăхпа çывăх тăракан ăслă писатель, халăх юрăçи пулнă. Вăл халăхшăн мĕн усăллă, мĕн усăсăр пулнине пĕлсе, ăнланса çырнă. Çавăнпа та, вăл çырнă

е куҫарнă произведенисем чăваш халăхĕшĕн хаклăран та хаклă произведенисем пулса тăраççĕ.

Н. Г. Чернышевский 1857 ҫулта Шиллер произведенийĕсене вырăс поэчĕсем куҫарса кăларнă кĕнеке ҫинчен ҫырнă рецензире пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куҫарни литература историйĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни пирки ҫапла каланă:

«Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куҫарнă литература,— тенĕ вăл,— Европăри ҫĕнĕ халăхсемшĕн кашнишĕнех халăхăн ăс-тăнĕ тата ҫутĕҫпе эстетика тути-маси аталаннă ҫĕрте питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă».

Чăваш халăхне аслă вырăс халăхĕн хăшпĕр классикла произведенийĕсемпе чи малтан К. Иванов паллаштарнă. Вырăс поэчĕсен произведенийĕсене чăвашла куҫарнипе вăл халăха ҫутта кăларас ĕҫе ҫеç мар, унăн эстетикăллă туйăмĕсене аталантарас ĕҫе те тунă, вĕсен демократиллĕ шухăшĕсене пирĕн литературăна илсе кĕртнĕ, чăваш халăхĕ хушшине сарнă. Иванова Лермонтовăн, Кольцовăн, Некрасовăн, Огаревăн демократилĕхĕ, халăхлăхĕ, гражданла лирики килĕшнĕ. Шăпах ĕнтĕ ҫавăнпа пирĕн классик вырăссен ҫав поэчĕсен произведенийĕсене чун-чĕререн юратса куҫарнă.

Социализм саманинче ҫеç К. Ивановăн произведенийĕсем хăйсене тивĕҫлĕ хака тупрĕҫ. Совет литератури ĕнерхи кунсене, пĕтĕм литературăн иртнĕ кун-ҫулне манмасть; вăл, классикла пуянлăха илсе, классикла литература хунă малтанхи кирпĕчсемпе усă курса, вĕсене социализмшăн усăллă туса пырать.

В. И. Ленин вĕрентнĕ тăрăх, буржуалла обществăри кашни наци культуринче буржуаллă культура пур, ҫав вăхăтрах демократиллĕ, социализмлă культура элеменчĕсем пур. «Эпир кашни нацилле культурăран унăн демократиллĕ тата социализмлă элеменчĕсене кăна илетпĕр»[1].

К. В. Иванов творчествине илес пулсан, вăл пирĕн чăваш литературин историйĕнче пĕр-пĕтĕм тапхăр пулса тăрать. Унăн творчестви халăх шухăш-кăмăлĕпе тулнă. Константин Иванов, чăннипех те, пирĕн литературăра малти вырăнсенчен пĕрне ырă та ҫутă ятпа йышăнса тăрать.

1940—1950

---

[1] В. И. Ленин. Сочинения, 4 изд., 20 том, 8 стр.

КОНСТАНТИН ИВАНОВĂН ИСТОРИ ТĔЛĔШĔНЧИ ШУХĂШĔСЕМ ПИРКИ ПĔР-ИК СĂМАХ

(Вăл çуралнăранпа 70 çул çитнĕ тĕле)

Константин Васильевич Иванов чăвашсен революцичченхи писателĕсем хушшинче уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать. Халĕ ĕнтĕ çакăнпа пурте килĕшеççĕ: вăл — чаплă поэт-драматург, патриот, мыслитель, художник.

К. В. Иванов пĕтĕмпе те çирĕм пилĕк çул çеç пурăннă. Çапах та вăл тăван халăхне ĕмĕр асăнмалăх паха произведенисем парса хăварнă, халăх ăс-тăнне чаплă шухăшĕсемпе пуянлатнă.

Чăваш халăхĕ хăйĕн юратнă поэчĕн пултарулăхне çултан-çул лайăхрах, анлăрах пĕлсе пырать: ĕнерсем унăн поэмисемпе сăввисене, юмахĕсемпе куçарăвĕсене вуланипе тĕлĕнеттĕмĕр, паян вара вуласа çеç мар, вĕсен чаплă илемлĕхне, тарăн шухăшне, философине тĕпчесе пĕлсе, вĕсен хăватне курса тĕлĕнетпĕр, кăмăлăмăрсене çĕклесе тивĕçлипех савăнатпăр: Константин Иванов чăваш литературине ытти литературăсем хушшинче ырă сăмахпа асăнтармалăх çĕкленĕ, чăваш халăхĕн ăс-тăн пултарулăхне кăтартса панă, тетпĕр.

К. В. Ивановăн истори тĕлĕшĕнчи шухăшĕсене, ăнланăвĕсене пăхса тухни усăсăр пулмĕ тесе, эпир аслă поэтăн хăшпĕр произведенийĕсене истори енчен тишкерсе тухас терĕмĕр.

* * *

1908 çулта К. В. Иванов вырăссен аслă поэчĕн М. Ю. Лермонтовăн «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрă» («Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова») ятлă поэмине чăвашла куçарса пĕтернĕ те çав çулхинех апрель уйăхĕнче М. Ю. Лермонтов юрри-сăввисен уйрăм кĕнекинче çапса кăларнă.

Кĕнекере «Юрă умĕнчен каланă сăмах» [1] ятлă статья пур. Ăна К. В. Иванов çырнă. Поэт çав «Юрра» куçармэ тытăниччен IV Иван Васильевич патша саманине тăрăшса вĕреннĕ, опричина мĕне пĕлтернине, опричниксем камсем пулнине, камшăн тăнине тĕпчесе пĕлнĕ. К. В. Иванов статьинче вăл хăй кама кăмăллани те, М. Ю. Лермонтов «Юрринче» кăтартнă самана ыйтăвĕсене мĕнлерех ăнланни те уççăнах курăнать.

Аслă вырăс халăхĕн хастар чĕреллĕ поэчĕ М. Ю. Лермонтов «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрра» 1837 çулта, патша правительстви ирĕк шухăшсемшĕн Кавказа ссылкăна ярсан, малтанхи уйăхсенче çырнă. Çак çулхине, январĕн 27-мĕшĕнче, патша хĕтĕртсе янипе пĕр сĕтĕрĕнчĕк этем Дантес вырăссен аслă поэтне А. С. Пушкина дуэльре вилмеллех амантнă пулнă. Икĕ талăк хушши асапланса выртнă хыççăн А. С. Пушкин — вырăс поэзийĕн хĕвелĕ — вилсе кайнă. Поэта вĕлерни ун чухнехи малта пыракан çынсене пурне те хумхантарса янă. М. Ю. Лермонтов, патша тарçи-тĕрçисене, сутăнчăк этемсене, тăван çĕршыв тăшманĕсене питлесе, аслă поэт хутне кĕрсе, «Поэт вилĕмĕ» ятлă сăвă çырнă. Унта вăл Российăри малта пыракан çынсен шухăш-кăмăлне каласа панă. Вырăс çыннисем çав сăвва çыра-çыра илсе алçырăвĕ вĕççĕн Петербургра çеç мар, пĕтĕм Российипех сарнă. Ăна вуланă, пăхмасăр каланă, сӳтсе явнă. Пушкин вилĕмĕ çин-

---

[1] Хăшпĕр юлташсем «Юрă умĕнчен каланă сăмаха» Иванов мар, урăх çын çырнă пулĕ, теççĕ. Чăвашсен тĕпчев институчĕ (ЧНИИ) тĕрĕсленĕ тăрăх çакă курăнать: Лермонтов произведенине К. В. Иванов 1907—08 çулсенче чăвашла куçарнă. «Юрă умĕнчен каланă сăмаха» хăй çырнă. Ку сăмах тĕрĕссине умсăмах чĕлхи тата хавхалануллă стилĕ çирĕплетсе парать. Тĕслĕхрен, юрă вĕçĕнче «кемĕ» сăмах тĕл пулать. Вăл сăмахпа К. В. Иванов çуралнă çĕрти чăвашсем кăна усă кураççĕ. Н. И. Ашмарин словарьне вăл сăмах кĕмен» (Константин Иванов. Çырнисен пуххи. Чăвашгосиздат, 1957 ç., 393 стр.).

чен çырнă чаплă сăвă Российăна çĕнĕ поэт килни çинчен пĕлтернĕ: аслă Пушкин вырăнне аслă Лермонтов йышăннă.

Февралĕн 20-мĕшĕнче Лермонтова «Поэт вилĕмĕ» сăвăшăн арестленĕ те, пĕр эрне иртсен, Кавказа Нижегородский драгунски полка ăсатнă. Çавăнта ĕнтĕ вăл хăйĕн чаплă «Юррине» çырса пĕтернĕ.

М. Ю. Лермонтов çав пĕчĕк поэмăна хăйĕн канăçсăр чунне, пăлханнă шухăш-кăмăлне лăплантарас, тарăхăвне каласа парас, патша-ĕмпӳсен, тирансен тискерлĕхне кăтартас ĕмĕтпе çырнă. Унта вăл вăйлă та хастар çынсен кăмăлĕсем, характерĕсемпе шухăшĕсем хирĕçсе кайнине, пĕр-пĕринпе çапăнса кĕрешнине палăртса панă. Çакна кăтартса парас тесе, аслă поэт авалхи, XVI ĕмĕрти пурнăçа илнĕ, çав ĕмĕрте вара вăйлă сăнарсем тупнă.

«Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашникхуçа çинчен хунă юрăра» эпир тăватă сăнар куратпăр. Вĕсенчен пĕри — Иван Васильевич патша историре чăннипех пулнă çын, вăл XVI ĕмĕрте Мускав патшинче ларнă; виççĕшĕ — Кирибеевич, Калашников, унăн арăмĕ Алена Дмитриевна историре пулман çынсем. Паллах, ун пек çынсем пулма та пултарнă. Вĕсене поэтăн хăватлă таланчĕ чаплă сăнласа панă. Çавăнпа та çав виçĕ сăнар пире пулнă пекех туйăнаççĕ, вĕсем — чĕрĕ çынсем пекех.

IV Иван Васильевич патшана илес пулсан, эпир ăна пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех истори учебникĕсенче тĕл пулнă. Вăл 1530 çулта çуралнă, Руç князĕ, вырăс патши пулнă (1533—1584); аллă тăватă çул пурăнса, 1584 çулта вилнĕ.

IV Иван Васильевич патшана историксем тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ характеристика панă. Вырăссен малтанхи историкĕсенчен пĕри Н. М. Карамзин унăн психологине нимле те ăнланайман, ăна вăл «ангел» (пирĕшти), «злодей» (киревсĕр этем), тесе те каланă. В. О. Ключевский историк патшан хаярлăхне ытларах палăртнă, унăн ĕçĕн прогрессивлă енĕсене ăнланайман.

М. Н. Покровский çав патшан хаярлăхне ун чухнехи суту-илӳ капиталĕпе пуян боярсем хушшинчи кĕрешӳрен килнĕ теме пăхнă.

Вырăссен революцилле демократĕсем В. Г. Белинский, А. И. Герцен, Н. Г. Чернышевский, Н. А. Добролюбов IV Иван патшан ĕçне-хĕлне питĕ пысăка хурса хакланă. В. Г. Белинский ăна I Петр император умĕнхи вăхăтра кирлĕ ĕçсем тунă çын вырăнне хунă.

IV Иван Васильевич патшан Россия историйĕнчи ĕçĕ-хĕлĕпе рольне марксизм-ленинизм классикĕсем кăна тĕрĕс хак панă. Вĕсем Хĕвеланăç Европăра тата Российăра централизациллĕ государствăсем мĕнле пулса кайнине тĕпчесе тухнă, Российăра çавăн пек государство мĕнле йĕркеленсе çирĕпленнине, çав ĕçре Иван Грозный мĕнле вырăн йышăннине кăтартса панă.

IV Иван Васильевич патша, халăх пана ятпа каласан, Иван Грозный — паллă политик, дипломат, çар стратегĕ, писатель-публицист, полемист пулнă. Унăн хаярлăхĕ çеç мар, ĕçĕ-хĕлĕ те халăх асне кĕрсе юлнă: хаяр патша çинчен халăх юмах-халап янă, юрăсем юрланă.

Илемлĕ литературăра Иван Грозный сăнарне М. Ю. Лермонтов, А. К. Толстой, А. Н. Толстой, В. И. Костылев тата ыттисем те кăтартса панă.

* *
*

К. В. Иванова «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрра» куçарма тата «Юрă умĕнчен каланă сăмаха» çырма çăмăлах пулман. «Нарспи» поэма, юмахсемпе сăвăсем çырма ăна историллĕ тата политикăллă ăнланусене палăртакан сăмахсемпе терминсем кирлех пулман е кирлĕ пулманпа пĕрех. Анчах М. Ю. Лермонтов «Юррине» куçарма та, ăна валли умсăмах çырма та çавăн пек сăмахсемпе терминсем чылаях кирлĕ пулнă.

Вырăсла терминсене мĕнле куçарнă-ха вăл? Мĕнле терминсемпе усă курнă-ха?

К. В. Иванов истори ыйтăвĕсене мĕнле ăнланнине пăхса тухас умĕн çав терминсем пирки пĕр-ик сăмах каласах пулать. Çав икĕ произведенире акă мĕнле терминсем тĕл пулаççĕ (вĕсене эпир вырăсла-чăвашла çырса кăтартатпăр).

Государство — патшалăх; государь, царь — патша, ĕмпӳ. Русское государство — Вырăс патшалăхĕ; Русская земля — Вырăс çĕрĕ.

Ку терминсем текстра ытти сăмахсемпе çакăн пек çыхăнса тăраççĕ: «Пĕр виççĕр аллă çул ĕлĕк Вырăс патшалăхне Иван Грозный патша тытса тăнă. Вăл хăй пурнăçĕнче патшалăха нумай усă кӳнĕ: Хусана, Аçтăрхана, Çĕпĕре вăрçса илсе, хăй патшалăхне аслăлатса сарса янă, ытти енчен те вăл патшалăха усă нумай тунă».

IV Иван Васильевич патшана халăх мĕншĕн «Грозный» тесе ят панине К. В. Иванов çапла ăнлантарать: «Çавăнпа

вăл халăх хушшинче хăйне асăнмалăх ят хăварнă. Çапах та унăн ырă ĕçĕсемпе пĕрле хаяр ĕçсем те нумай пулнă, çавăнпа ăна Грозный (Хаяр) патша тесе ят панă».

«Царь» тата «государь» сăмахсене «Юрăра» хăш çĕрте «патша» тесе куçарнă, тепĕр çĕрте — «ĕмпӳ» тенĕ. Ку çак тĕслĕхсенче курăнать.

Ох ты гой еси, царь Иван Васильевич!
Эй аслă патша, эй Иван ĕмпӳ!

«Опричник» сăмаха (историлле термина) К. В. Иванов «чура», «сыхлавçă» тесе куçарать.

Про тебя нашу песню сложили мы,
Про твово любимого опричника...
Сан çинчен эпир юрă хутăмăр,
Ху юратнă чуру, сыхлавçу çинчен...

«Опричина» сăмаха вара питĕ тĕплĕ ăнлантарса панă: «...вăл (Грозный. — *В. Д.*) юрлăрах улпутсен ывăлĕсене суйласа илсе, вĕсене турă умĕнче тупа тутарса, хăйне сыхлама пĕр евĕрлĕ çар ушкăнĕ тунă. Вăл вĕсене хуласем, çĕрсем валаçсе панă. Мускаври хăш-хăш урамсене юри вĕсем валли уйăрса панă. Çав çар ушкăнне, вĕсене валеçсе панă хуласене, çĕрсене, пурне те пĕрле *опричина*, тенĕ. Чăвашла вăл *уйрăм уйăрса хуни* тени пулать. Çав çар ушкăнне тепĕр тĕрлĕ *сыхлавçăсен ушкăнĕ* теме юрать, мĕншĕн тесен вĕсем пур çĕрте те патшана тăшман тапăнасран сыхласа çӳренĕ, вĕсем патшана сыхлакан çынсем пулнă».

«Уйрăм уйăрса хуни» тенĕ сăмахсем вырăссен «выделенное особо», «особый двор» тенĕ сăмахĕсене пĕлтереççĕ. Çакă вăл «опричина» (опричь — кроме, особо) тенине пĕлтерет (вырăссем опричниксене урăхла кромешниксем, тенĕ). Вĕсем патшасăр пуçне (опричь, кроме царя) никама та пăхăнман, çавăнпа та вĕсене, хальхи чĕлхепе каласан, «никама пăхăнмансем» (тĕрĕсрех: пуçкасансем!) теме те пулать.

М. Ю. Лермонтов «Юрринче» тата çакăн пек историллĕ терминсем тĕл пулаççĕ (вĕсене К. В. Иванов çапла куçарнă): боярин — улпут; купец — хуçа; слуга — чура; верный слуга — тĕрĕс тарçă; раб — чура; стольники — кĕрекеçĕсем; противник — хирĕç çын; басурман — тăшман, басурманский çын — тăшман ачи-пăчи. «Палач» сăмаха ку-

çарман. «Кремль» ятне «Кремĕл» тесе çырнă. «Лобное место» тенине «вилĕм вырăнĕ» тесе куçарнă.

К. В. Иванов «Калашник хуçа çинчен хунă юрра» чăвашла куçарма Иван Грозный самани çинчен истори учебникĕсенче çырнине тĕплĕ вĕреннĕ. Вăл çав саманана лайăх пĕлнине Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ юлташсем те хăйсен асаилĕвĕсенче каласа параççĕ. Акă, сăмахран, Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Д. Кузьмина хăйĕн асаилĕвĕсенче К. В. Иванов шкулта вĕренекенсене пĕррехинче, театра каяс умĕн, Иван Грозный çинчен каласа панине асăнать. Театрсене, тет вăл, «пире Константин Васильевич илсе каятчĕ, учительницăсем те пĕрлех пыратчĕç. Театра Иван Грозный пурнăçне кăтартакан пьесăна курма каяс умĕн Константин Васильевич пире пьеса содержанине каласа пачĕ, Грозный вăхăтĕнчи самана çинчен астутарчĕ. Çавăн хыççăн эпир пьесăна питĕ лайăх ăнлантăмăр».

К. В. Иванов пур ĕçе те тăрăшса тунă, юратса ĕçленĕ. М. Ю. Лермонтов поэмине те вăл тĕплĕ куçарнă, ăна куçарма унăн тимлĕхĕ те, пĕлĕвĕ те çителĕклĕ пулнă.

* *
*

Иван Грозный саманине, хаяр патшан пурнăçне, вăл мĕн пирки çав тери хаяр пулнине, унăн ĕçне-хĕлне К. В. Иванов мĕнле ăнланнă-ха? Мĕнле ăнлантарса панă?

К. В. Ивановăн сăмахĕсене — Иван Грозный (Хаяр) патша патшалăха нумай усă кӳнĕ, халăх хушшинче хăйне асăнмалăх ят хăварнă тенисене — мĕнле ăнланмалла? Тата Иван Грозный патшан «ырă ĕçĕсемпе пĕрле хаяр ĕçĕсем те нумай пулнă» тенине мĕнле ăнлантарса памалла?

Патшан «ырă ĕçĕсем» тесе вăл Вырăс патшалăхĕн çĕрĕсене аслăлатнине, патшалăха тĕреклетнине, тăшмансене пĕтерсе пынине тата ыт. те калать. Çак ĕçсене пула вăл халăх хушшине ырă ят хăварнă, анчах хаярлăхĕпе те асăнтарнă. (Кун пирки эпир каярахра хăшпĕр тĕслĕхсене илсе кăтартăпăр).

К. В. Иванов унăн «хаяр ĕçĕсем» çинчен те чылаях çырать, патшан «хаяр ĕçĕсем» мĕнрен килнине кăтартса пама тăрăшать.

IV Иван Васильевич ашшĕнчен — виçĕ çулта, амăшĕнчен сакăр çулта тăрса юлнă. Патша ытла çамрăкран патшалăха боярсем (К. В. Иванов терминĕпе каласан, улпутсем) тытса тăмалла пулнă. Анчах вĕсем хушшинче пĕртте ки-

лĕшӳ пулман. «Пурин те,— тет К. В. Иванов,— пĕр-пĕринчен аслăрах пуласси килнĕ, пĕри те пĕр-пĕрне пăхăнасшăн пулман. Вĕсен хушшинче яланах вăрçу-тавлашу татăлман, пĕр-пĕрин çинчен элекленĕ, пĕр-пĕрне тĕрмене хуптарнă, вĕлерттернĕ. Çав ĕçсем час-часах çамрăк патша умĕнчех пулнă».

К. В. Иванов малалла боярсем çинчен: «Çамрăк ачана чипертерех пăхса ӳстерес вырăнне, вĕсем çамрăкранах унăн кăмăлне пăсса янă», тет. Кайран вăл вĕсене шанми, вĕсенчен шикленекен пулнă. «Юлашкинчен вăл никама та шанми пулса çитнĕ, хăйне вĕлересрен те пит хăра пуçланă».

Иван Грозный пурнăçĕ чăнах та К. В. Иванов çырнă пекрех пулнă: улпут-боярсем ăна пĕр вăхăтрах патша тесе ачашласа мухтанă, ача тесе йĕкĕлтесе кӳрентернĕ. Усал сăмахсем, виртлевсем çемçе кăмăллă ачан чунне ыраттарнă, чĕри тĕпне кĕрсе юлнă.

Патшалăхри хаяр класс кĕрешĕвĕ, çамрăк патша таврашĕнчи харкашусем, каварсем, элексем тата ыттисем патша кăмăлне, шухăшне çивĕчлетсе, хаярлатса янă. Çитĕнсе çитсен вăл хăйĕн тăшманĕсене, патшалăх тăшманĕсене хирĕç ним шеллемесĕр кĕрешме тытăннă. Хăш чухне вăл хăйне хăй те тытса чарайман, çиллине шăнарма вăй çитереймен,— çапла вара тем те тума пултарнă.

IV Иван Васильевич патша мĕн тери хаяр пулнине, унăн çилли мĕн тери кăра пулнине палăртас шутпа хăшпĕр историксем çакăн пек тĕслĕхсем илсе кăтартаççĕ (эпир вĕсене сăмах май аса илтĕмĕр).

1577 çулхине Иван Васильевич Ливони çĕрĕнчи Конкенгаузен ятлă хулара пĕр пасторпа турă çинчен кăмăллăн калаçса тăнă. Пастор, кĕтмен çĕртен тенĕ пек, хăйсен Лютерне Павăл апостол тенĕскерпе танлаштарма пăхнă. Патша протестант пупне çавăнтах пуç урлă саламатпа çавăрса çапнă, унтан лашине карт туртнă та: «Эсĕ хăвăн Лютерупа шуйттан патне кай», тесе малалла вĕçтернĕ.

1581 çулхине пĕрре Иван Васильевич хăйĕн Иван ятлă ывăлĕн арăмĕ пурăнакан пӳлĕме пырса кĕнĕ. Хаяр старик хĕрарăм пӳлĕмне кĕнине кинĕ асăрхаман пулмалла: вăл, йывăр çын, аялти кĕпе вĕççĕн çеç ларнă пулнă. Ашшĕ вара, кинĕ ватта чысламасть тесе, вăрçма тытăннă, хĕртсе илнĕ. Шавланă çĕре ывăлĕ чупса çитнĕ те кӳреннĕ арăмĕ хутне кĕме тытăннă. Хаяр ашшĕ, çиллине шăнараймасăр, тăван ывăлне пуçран тимĕр туяпа çапса янă. Тимĕр туя вăйлă тивнĕ, Иванăн пуçне шăтарнă: вилĕм куçа курăнса

килмест тенӗ пек, ывӑлӗ, ашшӗ вырӑнне патшана лармалласкер, нумаях пурӑнайман — вилсе кайнӑ. (Ҫакна И. Е. Репин «Иван Грозный и сын его Иван» ятлӑ картинӑра тӗлӗнмелле чаплӑ ӳкерсе кӑтартнӑ).

Кайран хаяр патша, ывӑлӗшӗн хуйхӑрса, кӑшт ҫеҫ ухмаха тухман: каҫсерен ҫывӑрнӑ ҫӗртен сике-сике тӑнӑ, ӗсӗклесе макӑрнӑ, патшаран тухса мӑнастире тарма та шутланӑ.

IV Иван Васильевич патшан кӑмӑлӗ сутӑнчӑк боярсемпе кӗрешсе хытнӑ, хаярланса кайнӑ. Шултра боярсем кивӗ йӗркесене ытларах юратнӑ, кивӗ йӗркесене тивтересшӗн пулман. В. И. Ленин каланӑ тӑрӑх, ҫав йӗркесем вӑхӑтӗнче государство (патшалӑх) уйрӑм ҫӗрсем ҫине, хӑшпӗр вырӑнта княжествӑсем ҫине пайланса тӑнӑ. Ҫав пайланса пӗтнӗ вырӑнсенче уйрӑм чикӗсем пулнӑ, боярсем хуҫаланса пурӑннӑ, вӗсем кашни уйрӑм ҫар тытнӑ, вӑрҫа хӑйсен полкӗсемпе кайнӑ [1]. Иван Грозный, ҫав уйрӑм княжествӑсене пӗр ҫӗре пӗрлештерсе тата Мускава пӑхӑнтарса, Вырӑс государствине туса хунӑ. Кам ӑна хирӗҫ тӑнӑ — вӑл ырӑ курайман: кун пек чухне патшан хаярлӑхӗ тем пек ҫӗкленсе кайнӑ.

IV Иван Васильевич Новгород халӑхне, вӗсем Польшӑна сутӑннӑ тесе, ултӑ эрне хушшинче хӑйӗн опричникӗсемпе кайса, аркатса вӗлерсе пӗтернӗ.

К. В. Иванов статьинче IV Иван Васильевич вӑрҫӑсем вӑрҫни ҫинчен каланине куртӑмӑр. Вӑрҫӑсене вӑл Вырӑс патшалӑхне пӗрлештерсе тӗреклетес, суту-илӳ ҫулӗсем уҫас тесе вӑрҫнӑ. Ҫапла вӑл 1552 ҫулта Хусан ханствине, 1556 ҫулта Астрахань ханствине Вырӑс государствипе пӗрлештернӗ. Ҫакна май пӗтӗм Атӑл ун аллине куҫнӑ. Кайрантарахпа вӑл Ногай ордине, Ҫӗпӗр патшалӑхне пӑхӑнтарнӑ, Крым тутарӗсене хирӗҫ вӑрҫнӑ тата ытти те. Вӑрҫӑ вӑрҫма стрелецсен (перекенсен) ҫарне йӗркеленӗ (1550 ҫ.), вӗсене вут тӗртсе перекен пӑшалсемпе авӑрлантарнӑ (хӗҫпӑшаллантарнӑ).

Сӑмах май тата ҫакна каласа хӑвармалла: 1551 ҫулта чӑвашсем, ҫавӑн пекех тата Атӑлӑн сылтӑм ҫыранӗнчи тутарсемпе марисем те Вырӑс государствине хӑйсен ирӗкӗпе кӗнӗ. Ҫак вӑхӑтран чӑвашсем хӑйсен кун-ҫулне вырӑс халӑхӗн кун-ҫулӗпе ҫыхӑнтарнӑ. Ку вӑл чӑваш халӑхӗшӗн истори тӗлӗшпе прогрессивлӑ ӗҫ пулнӑ. Кайрантарахпа чӑвашсем, Иван Грозный вӑхӑтӗнчи тапхӑра асӑнса: «Чар Иван чух-

[1] В. И. Ленин, Сочинения, 1 т., 138 стр.

нехи пурнăçа мĕн калăн»,— тенĕ. Ку сăмахсем чăваш чĕлхине ваттисен сăмахĕ пулса кĕнĕ.

IV Иван Васильевич çакна лайăх ăнланнă: Вырăс государстви ĕлĕкхи пекех кивĕ йĕркепе сапаланса пурăнсан, ăна тулашри тăшмансем, çичĕ ютран килсе, пăхăнтарма пултарнă. Хаяр патша шалти тăшмансемпе кĕрешнĕ вăхăтрах тулашри тăшмансемпе те хытă кĕрешнĕ, вăрçăсем вăрçнă. Иван Васильевич Российăна Балтика тинĕсне кăларасшăн, Европăпа çыхăнтарасшăн пулнă, çавăнпа вăл Ливоние хирĕç вăрçă пуçласа янă. «Акă мĕншĕн I Петр ăна çав тери хытă мухтанă», тет К. Маркс [1].

IV Иван Васильевича государство ĕçĕсене тума реакцилле боярсем, хапсăнчăк та сутăнчăк этемсем нумай кансĕрленĕ. 1564 çулта, Ливоние хирĕç хĕрсе вăрçă пынă вăхăтра, çавăн пек боярсенчен пĕри — Андрей Курбский, Тăван çĕршыва пăрахса, тăшман патне Польшăна тарнă.

Реакцилле боярсене, сутăнчăк мăн сухалсене хирĕç кĕрешме Иван Грозный 1565 çулта опричина тенĕскерне тунă.

«Опричина» тени мĕне пĕлтернине эпир ĕнтĕ К. В. Иванов çырнинче куртăмăр, вăл ăна, пĕтĕмĕшле илсен, тĕрĕс ăнлантарса панă.

Иван Грозный, опричина тунă май, государствăна икĕ пая уйăрнă: пĕр пайне — земщина, тепĕр пайне опричина, тенĕ. Опричинăна çирĕме яхăн хула хăйĕн уезчĕсемпе, вулăсĕсемпе, çĕрĕпе, халăхĕпе кĕнĕ (кĕртнĕ). Кунсăр пуçне опричинăна Мускавăн пĕр пайне кĕртнĕ. Çав вырăнсенче пурăннă пуян боярсене урăх вырăна хăваласа янă. Иван Грозный хăйĕн тăшманĕсене хирĕç калама çук хаяр террор пуçласа янă. Унпа кăшт та пулин килĕшмен шултра княçсемпе боярсене хăйсене кăна мар, пĕтĕм йăхне, ачи-пăчипех, вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсене пăхăнса пурăнакансене те, вĕсен хресченĕсене те вĕлере-вĕлере тухнă, çурт-йĕрне, выльăх-чĕрлĕхне аркатса тăкнă, çунтарса янă.

Опричниксен йышĕ 6000 çынна çитнĕ. Вĕсем юланутпа çӳренĕ. Йĕнерĕн пĕр енне йытă пуçĕ, тепĕр енне шăпăр çакнă. Ку акă мĕне пĕлтернĕ: йытă пуçĕ опричниксем тĕрлĕ сутăнчăксене, каварçăсене, шпионсене, патша тăшманĕсене шăршласа, йĕрлесе тупасса пĕлтернĕ; шăпăр патшан çав мĕнпур тăшманĕсене — ун чухнехи пек каласан, крамольниксене — патшалăхран шăлса кăларасса пĕлтернĕ. Опричник, пуçран

[1] «Архив Маркса и Энгельса», 8 т., 165 стр.

тытӑнса ура таранах, хура тумтир тӑхӑннӑ, хура утпа ҫӳренӗ. Вӗсен пуҫлӑхӗсем пӗри — Малюта Скуратов, тепри — Василий Грязной пулнӑ. Андрей Курбский князь, Мускав патшалӑхӗнчен Ливоние тарса тӑшман енне куҫнӑскер, Иван патша пӗтӗм Вырӑс ҫӗрӗнчен «тӗрлӗ усал ӗмӗтпе пурӑнакан ирсӗр этемсене пухнӑ» («собрал себе человеков, скверных и всякими злостьми исполненных»), тесе ҫырнӑ.

Пирӗн поэт К. В. Иванов опричниксем ҫинчен ҫапла ҫырать: «Патша вӗсене ытла ирӗк янӑран вӗсем ним тума та хӑраман: айӑпсӑр ҫыннах, хӑйсен кӑмӑлне килмесен, вӗлернӗ; мулне туртса илесшӗнех айӑп тупса, пуянтарах ҫынна тытса кайнӑ; хӑш-хӑш чухне ҫын арӑмне, ҫын хӗрне те пусмӑрласа кайнӑ; ытти ҫавӑн пек ӗҫсем те нумай тунӑ. Сыхлавҫӑсем урампа иртсе ҫӳренӗ чухне ҫынсем урама тухма мар, чӳречерен пӑхма та хӑраса ларнӑ, урамра пӗр чӗр чун та курӑнман».

Опричинӑна 1572 ҫулта пӗтернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн «опричина» сӑмаха асӑнма та чарнӑ. Анчах вӑл «двор» ятпа ӗҫлеме тытӑннӑ.

Опричина, тем пек хӑрушӑ ӗҫсем тунӑ пулин те, Вырӑс государствин тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешес тӗлӗшпе Иван Грозный патшана пӗтӗм государствӑна тӗреклетме пулӑшнӑ.

Анчах, аристократиллӗ сийӗсене хирӗҫ хаяр кӗрешнипе пӗрлех, опричниксем ним айӑпсӑр ҫынсене те нумай вӗлерсе пӗтернӗ. Пӗтнисем хушшинче хресченсемпе хула ҫыннисем те чылай пулнӑ.

Ҫапла вара, крепостник-улпутсем, тискер те юнлӑ меслетсемпе усӑ курса, XVI ӗмӗрте государствӑра хӑйсем пуҫ пулса тӑрас йӗркене ҫирӗплетсе ҫитернӗ.

* *
*

Халӗ тата поэмӑри ытти сӑнарсене илсе пӑхар, вӗсем ҫинчен К. В. Иванов мӗн ҫырнине ӑнланса илме тӑрӑшар.

Кирибеевич — опричник, ӗмпӳ сыхлавҫи. Вырӑссен аслӑ критикӗ В. Г. Белинский, Кирибеевич сӑнарне палӑртса, ҫакӑн пек ҫырнӑ: «Мӗн тери вӑйлӑ, мӗн тери хӑватлӑ натура. Унӑн вӗҫӗмсӗр туйӑмӗ — вӑй-хӑват. Хуйхи-суйхи пысӑк та йывӑр...». Кирибеевич «ҫур ӗҫпе ҫырлахмасть: тупас тенине — тупмалла, тупаймасан — пӗтмелле!»[1].

Кирибей опричник Калашник хуҫа арӑмне курнӑ та юратса пӑрахнӑ. Вӑл вырӑс ҫыннисен авалхи йӑлисене тыт-

[1] В. Г. Белинский. Собрание сочинений в трех томах, 1948, т. 1, 658, 659 стр.

са пымасть, вĕсен чысне пăхăнмасть, анчах çĕннине, пахараххине, пархатарлăраххине туянайман. «...Хăватлă натурăллă, йĕркесĕр туйăмлă çыннăн çавăн пек аскăнлăхĕ хăрушă та тискер. Çапла пулин те, ун енче патша тăрать»[1].

Хăйне килĕшнĕ Алена Дмитриевна çинчен вăл, ăсне çухатса, патшана çакăн пек каласа парать:

Пирĕн ырă çĕрте, сарлака çĕрте,
Шыраса тупас çук ун пек хитрине;
Ярăнса утать шурă акăш пек,
Куçĕпе пăхать кăвакарчăн пек,
Сăмахне калать шăпчăк юрри пек.
Унăн хӳхĕм чĕрей хĕп-хĕрлех-ĕçке,
Ирсерен хĕрелсе хĕвел тухнă пек;
Çӳçĕсем сап-сарах, ылтăн пек çутă,
Хĕрлĕ çиптунипе çипленĕ çивĕт
Хулпуççи урлă яванса выртать,
Шурă ӳтлĕ кăкăрне чуптуса выртать.
Вăл пуян хуçа çемйинче ӳснĕ,
Вăл Мĕтри хĕрĕ, Алюна ятлă.

Анчах Алёна Дмитриевнăн юратнă упăшки пур. Алёна хăйне опричник намăс кăтартни çинчен упăшкине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парать. Унăн тӳрĕ упăшки, Калашников хуçа, çав намăса тӳсеймесĕр, Кирибеевич опричника тавăрма шутласа, Мускав шывĕн пăрĕ çине чышкăпа çапăçма тухать. М. Ю. Лермонтова Калашников хуçан çилли, вăйлă характерĕ тата ытларах килĕшет. Калашников хуçан хăюлăхĕпе паттăрлăхне поэт чун-чĕререн мухтать, çавăн пек çынсем вăл хăй пурăннă вăхăтра пулманнишĕн кулянать. (Ку «Бородино» сăвăра та лайăх курăнать.)

Акă Мускав шывĕ, сивĕ пăр. Акă унта сылтăм аллипе пилĕкне тытса, Кирибеевич йĕкĕт çӳрет; сулахай аллипе çĕлĕкне пусса лартать те хăйпе кĕрешес текенсене кĕтме тытăнать; хăравçăрах çынсенчен кулса илет...

Акă сасартăк халăх пăлханса каять — Парамун Çтаппанĕ, Калашников хуçа тухать.

Тухать те пуççапать патшана малтан,
Кремĕлпе таса чиркӳсене унтан,
Пуççапать кайран пĕтĕм халăха.
Вут-кăвар пекех ялтăрать куçĕ,
Сыхлавçă çине тинкерсе пăхать.

---

[1] В. Г. Белинский. Собрание сочинений в трех томах, т. 1, 659 стр.

Сыхлавçа хирĕç майланса тăрать,
Алсине тăхăнать çапăçма, вăрçма,
Вăйлă хулпуççине тӳрлетсе илет,
Кăп-кăтра сухалне шăлкалать анчах.

Калашников хуçа хăй камне пытармасть, «тăшман ачи-пăчине» хирĕç тухни çинчен каласа парать:

... Мăшкăла хăварман ют çын арăмне,
Вăр-хурах çын пек кĕретмен çĕрле,
Çутă кун çутинчен пытанман эпĕ...
... Шӳт тума, култарма халь тухман эпĕ,
Тухрăм эпĕ паян, тăшман ачи-пăчи,
Хăрушă вăрçа, юлашки вăрçа!

Калашников вăйне пуçтарса хатĕрленет те курайман тăшмана пуçран çапса ярать, сулахай тăнлавне çĕмĕрсе хурать.

К. В. Иванов «Юрăри» икĕ сăнарăн — Кирибей сыхлавçăпа Калашник хуçан — характерне тĕрĕс ăнланнă, вĕсен натурине кăтартса панă.

«Камсене кăтартас çак сатурлăха?» — акă Кирибей сыхлавçăн чун-чĕрине пăхăнман ĕмĕчĕ, ăс-пуçĕ чарайман пăлхавĕ!

К. В. Иванов çав сыхлавçăн «хăватлă натури» çинчен акă мĕн çырать: «Вăл сатур çын, унăн пурнăç(ĕ) — сатурлăх, унсăр пуçне вăл пурăнаймасть. Унăн чĕринче хуйхă пур: вăл Калашник хуçан çамрăк арăмне юратать. Çав хуйхăпа унăн чĕри çурăлать. Анчах çав чĕре аскăнса, пăсăлса пĕтнĕ, çав вут пек вĕри чĕре намăсне-мĕнне пĕлмест: мĕн тăвас килнĕ, мĕн ыйтнă, пурне те пар ăна».

Чăваш поэчĕн сăмахĕсене вулатăн та тĕлĕнетĕн,— тĕлĕнниччен ытларах савăнатăн: унăн шухăшĕсем аслă критикăн шухăшĕсемпе килĕшсе тăраççĕ! Пирĕн Иванов «Калашник хуçа çинчен хунă юрра» куçарнă чухне истори кĕнекисене кăна мар, В. Г. Белинский çырнă кĕнекесене те тупса вуланă пулмалла!

К. В. Иванов Кирибеевич опричника питлесе çырать, Калашникова кăмăллать, ăна вăл йăваш, лăпкă, тӳрĕ çын, тет. Анчах вăл, çав йăваш çын, арăмне ирсĕр этем мăшкăл тунине пĕлсен, çилли тăвăлса килнипе, курайманлăхĕ çĕкленсе кайнипе «кĕрлесе тăракан тинĕс пек» пулса тăнă.

Калашников хуçан сăнне, кăмăл-туйăмне К. В. Иванов тĕлĕнмелле çырса парать. Ун пек çырма, ун пек ӳкерме чăнчăн художник çеç пултарнă. Акă вăл Калашников хуçа — «кĕрлесе тăракан тинĕс»,

«Çил-тăвăл çук чух тинĕс лăпкă тăрать, унăн кĕленче пек кăкăрĕ хускалмасть те, çынсем пĕр хăрамасăр кимĕсемпе ишсе çӳреççĕ, çутă хĕвел те çӳлтен выляса пăхать. Анчах акă кутсăр-пуççăр çил-тăвăл килсе тухать те, тинĕс, пĕтĕм кăкăрĕпе чĕтресе çĕкленсе каять, шавласа, кĕрлесе тăвĕ-тăвĕпе хумсем шăваççĕ, кимĕ те, çын та шыва путать, хĕвел те хăраса тахçанах пĕлĕтсен айне тарса кĕнĕ. Калашник хуçа çавăн пек çын пулнă».

Ку йĕркесене çырнă чухне К. В. Иванов, тен, Л. Н. Толстойăн «Тинĕс» ятлă пĕчĕк калавне аса илнĕ пулĕ. Аслă писателĕн çав калавне пирĕн поэтăмăр кăмăл туса куçарнă. Унта çакăн пек вырăн пур: «Çил çук чухне тинĕс, кăваккăн курăнса, яп-яка выртать; çил тухсан, хумханса каять, вара хумсем ту пек йăтăнса çӳреççĕ; вĕсем пĕрне-пĕри çите-çите çапăнаççĕ те, вĕсенчен шап-шурă кăпăк сирпĕнет. Ун чух вара хумсем карапсене турпас пек вылятаççĕ».

Тинĕс çинчен çырнă сăмахсенче, çав илемлĕ ӳкерчĕкре Калашников хуçан чун хавалĕ мĕн тери вăйлă пăлханса кайнине тĕлĕнмелле ăста кăтартса панă. Çыннăн чĕре пăлхавне, юн вĕревне, туйăмне, психологине çавăн пек чаплă кăтартса памашкăн поэт-художник, тĕнче сассине, вĕçĕмсĕр музыкине илтме, кăмăлне туйма пултаракан музыкçă пулас пулать,— унсăр çав тери ăста çырма çук, талантăн çунатне карса яма, вĕçме çук!

К. В. Ивановăн хăватлă таланчĕ «Нарспи» поэмăра çеç мар, М. Ю. Лермонтов поэмине куçарнинче те курăнса тăрать. Поэтăн илемлĕх туйăмĕ вăйлă пулнă, унăн тарăн ăс, кăвар чĕре пулнă.

* * *

К. В. Иванов истори ыйтăвĕсемпе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче паллашнă. Кунсăр пуçне, вăл В. О. Ключеский историк кĕнекисене те вуланă пулмалла (Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ хăшпĕр юлташсем каланă тăрăх, В. О. Ключеский историк И. Я. Яковлев кăмăллакан историксенчен пĕри пулнă; унăн кĕнекисем Иван Яковлевичăн килти библиотекинче хисеплĕ вырăнта тăнă; вăл, хăй юратнă историкĕн кĕнекисене хăшпĕр вĕренекенсене те вулама панă). К. В. Иванов статьинче Иван Грозный çинчен каланă шухăшсем пурте тенĕ пекех Ключевскин «Курс русской истории» ятлă кĕнекин 2-мĕш пайĕнче (XXX лекци) тĕл пулаççĕ (ку кĕнеке 1906 çулта пичетленсе тухнă). Унта

Иван ашшӗ-амӑшӗнчен пӗчӗклех тӑлӑха юлни ҫинчен: «...на четвертом году лишился отца, а на восьмом потерял и мать», тенӗ; Иван хастар та ӑслӑ ача пулни ҫинчен, унӑн ӑсне пӑсса, хавшатса яни ҫинчен: «от природы он получил бойкий и гибкий ум...», «но обстоятельства... рано испортили этот ум, дали ему неестественное, болезненное развитие», тенӗ. Унта ҫапла каланисем те пур: «Он с детства видел себя среди чужих людей. В душе его рано и глубоко врезалось и всю жизнь сохранилось чувство сиротства, брошенности, одиночества... Иван рано усвоил себе привычку ходить оглядываясь и прислушиваясь. Это развило в нем подозрительность, которая с летами превратилась в глубокое недоверие к людям».

Анчах К. В. Иванов ку вырӑнсене куҫарса илмен, хӑйне кирлӗ пек ӑнланса, ӑса илсе ҫырнӑ. Вӑл малтанах, статья пуҫламӑшӗнчех, хӑй шухӑшне каласа парать: Иван Грозный патшан ырӑ ӗҫӗсене те, хаяр ӗҫӗсене те палӑртать. Ку тӗлӗшпе вӑл революционер-демократсен шухӑшӗсем майлӑрах шухӑш тытнӑ. В. О. Ключеский историке илес пулсан, вӑл Иван Грозный патшан юрӑхсӑр ӗҫӗсене, тискерлӗхне ытларах палӑртма тӑрӑшнӑ.

* * *

...К. В. Ивановӑн «Плансемпе ҫырма палӑртнисенче» Россия историйӗн ытти хӑшпӗр саманчӗсене асӑннисем те тӗл пулаҫҫӗ. Сӑмахран, вӑл XV ӗмӗрте Урал тӑрӑхӗнче пурӑннӑ казаксене темиҫе хут асӑнать.

Пӑртта карчӑкӗ ҫинчен ҫырма палӑртнинче К. В. Иванов Емельян Пугачева асӑнать.

Унта писатель акӑ мӗн ҫырнӑ:

«1. Пелепей хули. (Ҫӗр вӑтӑр ҫул ӗлӗк.)
2. Кашкӑр. Пурӑнӑҫ.
3. Пӑкача. Пуп.
4. Слак ҫинче. Вӑрӑм Ухтерень.
5. Вырӑссем. Ванюшке.
6. Ӗпхӳре мӗн пулни, мӗн курни.
7. Килте. Пурнӑҫ.
8. Халь.»

Ку плана писатель 1906 ҫулта ҫырнине асра тытса, ҫӗр вӑтӑр ҫул ӗлӗкрех иртнӗ саманана пӑхсан, эпир шӑпах пӑлханакан хресченсене патша йӗркине хирӗҫ, улпутсене хирӗҫ Емельян Пугачев ертсе пынӑ вӑхӑта (1773—75 ҫҫ.) куратпӑр.

Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай К. В. Ивановăн çав планне çакăн пек ăнлантарса парать: «Çĕр вăтăр çул ĕлĕк» тенинчен Ивановăн пĕтĕм шухăшĕ пуçланса каять. 1775 çул Емельян Пугачев хăйĕн хăюллă çыннисемпе Пушкăрт çĕрне пырса кĕнĕ, унта асап куракан пĕтĕм халăха — вырăссене, пушкăртсене, тутарсене, чăвашсене тата ыттисене те патшапа тĕрлĕ харампырсене хирĕç тăратнă. Çав вăхăтра Пелепей хулинчи чăвашсем хаяр кĕрешĕве тухнă. Константин Иванов аллинче архив материалĕсем те, Пелепейри ĕçсем çинчен тĕпчесе каласа паракан кĕнекесем те пулман, вăл ăруран ăрăва куçса пыракан калавсене итленĕ, вĕсене çырса пынă.

«Пăкача. Пуп» тесе уйрăмах ятарласа кĕнеке сыпăкне çырма шухăшлани Константин Ивановăн шухăшне пĕлме пире çăраççи парать. Чăвашсем çĕнĕ çĕре куçса килнĕ чухне вĕсен сукмакĕсене йĕрлесе миссионерсем-пупсем пынă, Христос тĕнĕпе пĕрле чăтма çук пусмăр илсе çитернĕ, тĕне кĕменнисене темĕнле майпа та хырçă-марçă тӳлеттернĕ. Сăмахран, вĕсене тĕне кĕнисемпе пĕрле пĕр çăлкуçĕнчен шыв та ăстарман. Пелепейри чăвашсем вĕчĕ тулса çитнипе йывăç чиркĕве çунтарса янă, пупсем ун вырăнне кирпĕчрен çĕнĕ чиркӳ ларттарнă. Пăлханакансем ăна вут тĕртме пултарайман, турăшĕсене çырмана кайса вăркăтнă. Çак ĕçсем «Пăкачă саманинче» пулса иртнĕ. Константин Иванов 1906 çулта ахаль мар ĕнтĕ Емельян Пугачева аса илнĕ, вăл хресченсем патшапа унăн тӳри-шарине, пупсене хирĕç çĕкленнине хавасланса мухтанă».[1]

Пугачев çинчен поэт хăйсен ăрăвĕн историйĕпе çыхăнтарса çырнă. 1906—07 çулсенче К. В. Ивановпа пĕрле вĕреннĕ Г. И. Ильин аса илĕвĕнче çакăн пек вырăн пур: «Тата пĕрре К. В. Иванов пире Пугачев çинчен, Пугачев хăйĕн восстани вăхăтĕнче Пушкăрт çĕрĕнче чухне, вăл К. В. Иванов аслашшĕсен килĕнче пулса хăналаннă, тесе каласа кăтартрĕ».

К. В. Иванов, поэт-гражданин, Пугачев самани çинчен произведени çырма ĕмĕтленни те унăн истори тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем, ăнланăвĕсем мĕнлерех пулнине палăртаççĕ. Анчах ăна вăл çырса хăварайман (çырнă пулсан та пирĕн вăхăта çитеймен). Çапах та пуриншĕн те çакă паллă: поэт-демократ, халăх юрăçи, халăх асĕнче пурăнакан вăхăтсем çинчен çырма, халăх чунне ыраттаракан ыйтусене хускатма

---

[1] Я к о в У х с а й. К. В. Иванов. Чăвашгосиздат, 1957. 43 стр.

тăрăшнă. Ку шухăша çирĕплетме эпир поэтăн *«Вăранăр, тапранăр!»*, *«Хальхи самана»* сăввисене илме пултаратпăр.

«Вăранăр, тапранăр!» сăвва К. В. Иванов вырăс юрри тăрăх çырма тытăннă. Анчах тăван халăхпа, чăваш хресченĕсемпе тачă çыхăнса тăракан поэт çав юрра «чăвашлатнă»: ĕççыннисене вăранма, тапранма чĕннĕ!

«Вăранăр, тапранăр!» юрăра хресченсене 1861 çулта февралĕн 19-мĕшĕнче крепăсла пусмăртан «ирĕке кăларни» çинчен каланă. Пирĕн хăшпĕр историксем: «Чăвашсем хушшинче çĕр улпучĕсем сахал пулнă е пулманпа пĕрех» текелесе çав ыйтуран пăрăнса иртме пăхаççĕ. Анчах çакă паллă: чăваш хресченĕсем патша вăхăтĕнче тем тĕрлĕ пусмăр та тӳссе курнă; вĕсене пусмăрлакансем шутĕнче çĕр улпучĕсем те пулнă. Сăмахран, 1858 çулта, хресченсене «ирĕке кăлариччен» пĕр 2—3 çул малтанрах, Шупашкар уездĕнче 27 улпут, Çĕрпӳ у.— 23 улпут, Етĕрне у.— 13 улпут, Чикме у.— 6 улпут пулнă. Вĕсем çакăн чухлĕ çĕр тытнă: Шупашкар уездĕнче — 8.429 дес., Çĕрпӳ у.— 8.627 дес., Етĕрне у.— 3.519 дес., Чикме у.—1.078 десятин.

Патша правительстви, Крым кампанийĕ вăхăтĕнче пулнă ăнăççăрлăхсем пирки вăйсăрланнăскер, кунтан та ытларах хресченсен «пăлхавĕсенчен» хăраса ӳкнĕскер, 1861 çулта крепăсла хресченсене «ирĕке» кăларанçи пулнă. Тĕрĕссипе каласан, улталанă, чике тăршшĕ лартнă: çĕрсĕр аптраса пурăнакан хресченсене çĕр пама мар, вĕсен пур-çук çĕрне те касса илнĕ (хресченсен пĕтĕм çĕрĕнчен 1/2—2/5 пайне касса илсе улпутсен çĕрĕсемпе пĕрлештернĕ). Çитменнине тата хресченсене хăйсене «ирĕке кăларнăшăн» икĕ миллиарда яхăн укçа тӳлеттернĕ.

Улпутсем хресченсене намăса пĕлмесĕр улталани çинчен вырăс халăхĕ юрă хывнă. «Ирĕке кăларнине» пула çĕрсĕр тăрса юлнă хресченсем вара çакăн пек юрланă:

Отпустили крестьян на свободу
Девятнадцатого февраля.
Только землю не дали народу:
Вот вам милость дворян и царя.

Мужики без земли пропадают,
А дворяне и рады тому,
Что дешевле они нанимают
Мужиков на работу свою...

К. В. Иванов «Крестьянская песня» сăвва чăваш хресченĕсем валли куçарнă:

Хура халăха ирĕке янă
Нарсăн вунтăххăрмĕш кунĕнче,
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ,—
Ак сире улпутсен ырлăхĕ!

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

Хресченсем çĕрсĕр пит аптăраççĕ,
Улпутсем уншăн питĕ хавас;
Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме.

Литература тĕпчевçисем вĕренсе пĕлнĕ тăрăх, К. В. Иванов ку юрра вырăсларан 1906 çулхи октябрĕн 10-мĕшпе 25-мĕшĕ хушшинче, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи вĕренекенсем шкул инспекторне шкулти юрăхсăр йĕркесене хирĕç хăйсен протестне çырса пама хатĕрленнĕ кунсенче, куçарма тытăннă. Анчах темшĕн куçарса пĕтереймен: малтанхи икĕ строфана (сакăр йĕркене) çеç куçарнă, хушса юрламаллине (припевне) «Марсельеза» юрăран илнĕ («Марсельеза» юрра вырăс революционерĕ П. Л. Лавров XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче çырнă).

К. В. Иванов «Хресченсен юррине» урăхлатса куçарни çак тĕслĕхсенчен курăнать. Юрра вăл çĕнĕ ят панă: «Вăранăр, тапранăр!» Ку вăл — ахаль ят çеç мар, революциллĕ чĕнӳ. «Отпустили крестьян на свободу» тенине «Хура халăха ирĕке янă» тесе куçарнă. К. В. Иванов кунта «хресченсене» тесе калас вырăнне «хура халăха» тенĕ. Паллах, «хура халăх» терминăн шухăшĕ класс тĕлĕшпе илсе пăхсан, уçăмлă мар, анчах К. В. Иванов ăна хресченсене асра тытса çырнă: «хура халăх» шутне хура çĕр сухаласа, тырă акса пурăнакансене, урăхла каласан, ĕç хресченĕсене кĕртнĕ. Юррăн малалли йĕркисенче «хресченсем» тени икĕ хут та тĕл пулать («Хресченсем çĕрсĕр пит аптраççĕ»...)

«Вставай, подымайся, рабочий народ» тенине тăлмач «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!» тесе урăхлатнă; «Раздайся клич мести народной» тенине «Халăх хăй çиллине кăтарттăр!» тесе куçарнă (пирĕн шутпа, тĕрĕс те лайăх куçарнă).

«Вăранăр, тапранăр!» юрă пирки çакăн пек пĕтĕçтерсе калама пулать: вăл юрă 1905—1906 çулсенчи революциллĕ ĕçсемпе çыхăнса тăрать; поэтăн революциллĕ шухăшĕ мĕн

тери аталанса ҫитнине кӑтартса парать. Поэт, халӑха вӑранма, революциллӗ ӗҫе тапранма чӗнсе, халӑх вӑй-халӗпе, кӗрешӗвӗпе чун-чӗререн хавасланнӑ.

* *
*

К. В. Ивановӑн, поэт-демократӑн, истори тӗлӗшӗнчи шухӑшӗсене пӑхса тухнӑ май унӑн «Хальхи самана» ятлӑ сӑвви пирки пӗр-ик сӑмах каламасӑр иртме ҫук. «Хальхи самана» — политикӑлла сӑвӑ. Унта поэт хӑй вӑхӑтӗнчи саманана ҫинчен ҫырма тӑрӑшнӑ, хӑшпӗр ҫӗрте иртнӗ саманасем пирки те ҫырнӑ.

Сӑвӑ ячӗ айне: «1908-мӗш ҫулхи октябрӗн 28-мӗшне» тесе ҫырса хунӑ. Мӗне пӗлтерет-ха ку? Ҫак кун Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ хӗрӗх ҫул тултарнӑ. Автор ҫав шкулӑн хӗрӗх ҫул хушшинчи ӗҫне, Иван Яковлевич мӗн-мӗн тунисене хаклаҫа ҫырнӑ. Сӑвӑра чӑваш халӑхӗ ҫутта туртӑннине кӑтартса панӑ. Чӑваш ачи ҫыру пӗлме, ҫын пулма шкула вӗренмешкӗн каясшӑн. Ашшӗ, унӑн шухӑшне ырласа, ӑна Чӗмпӗр хулине яма ӗмӗтленет. Нумай чӑваш ҫыннин ӗмӗчӗ пурнӑҫа кӗнӗ: Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче темиҫе ҫӗр чӑваш ачи вӗренсе тухнӑ.

Ачине Чӗмпӗре вӗренмешкӗн яма ӗмӗт тытнӑ чӑваш самана улшӑнни ҫинчен каласа парать: «ӗмӗр иртнӗ ӗҫ ҫинче, ӗҫ иртсессӗн — ӗҫкӗре». Анчах чӑвашӑн тӗрлӗ хуйхӑ та пайтах пулнӑ. Вӗсен ачи-пӑчине тухатмӑшсем, юмӑҫсем, асамҫӑсем пӑснӑ; вӑр-хурахӗ, таркӑнӗ тарӑхтарнӑ; усал-тӗсӗл, чир-чӗр хупланӑ, хӗл-ҫӑвӗпех хӗн курнӑ... Киремечӗ, турри, чӳкӗ, кӗлли ним те пулӑшман. Чӑвашсем хушшинче шкулсем усӑлни, вӗсен ӗҫӗ чӑвашсене ҫутта кӑларать. Поэт шухӑшӗпе, ҫак ырӑ ӗҫсене тӑвакансенчен пӗри — И. Я. Яковлев (хушаматне асӑнман, анчах ун ҫинчен ҫырни уҫҫӑнах курӑнать):

Анчах ыр ҫын тупӑнчӗ,
Самани те улшӑнчӗ.
Урӑх ҫулпа утрӑмӑр,
Урӑх ҫӗре тухрӑмӑр.
Кунсӑр пуҫне чӑвашсем
Мӗн пулӗччӗҫ халиччен?
Тутаралла тухӗччӗҫ,
Тутар тӗнне тытӑччӗҫ
Е вырӑса ерӗччӗҫ,
Пӗрерӗнех пӗтӗччӗҫ.
Ырӑ чӑваш тупӑнчӗ.

Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатнинчен питĕрех
Шухăш ўкрĕ пуç çине.

Çак йĕркесенче националистла сĕрĕм çук-ши?.. Мĕнле ăнланмалла, мĕнле ăнлантарса памалла вĕсене? — теççĕ хăшĕ-пĕрисем.

«Хальхи самана» сăвва К. В. Иванов 1908 çулта çырнă. Çак вăхăт реакци тапхăрĕ пулнă: патша йĕркин ирсĕр вăйĕсем, 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче халăхран хăраса ўкнĕскерсем, вăй илсе, революцие хирĕç тухнă, революцилле организацисене çĕмĕрме тытăннă, революционерсене тĕрмесене хупса лартнă, çака-çака вĕлернĕ.

Çĕршыври йывăр кунсем интеллигенци хушшинче ўкĕнчĕк шухăшсем çуратнă. Çавна пула хăшĕ-пĕрисем шанчăкĕсене çухатнă. Реакци вăхăтĕнчи хура кунсем çинчен К. В. Иванов «Хальхи самана» сăвăра «Хальхи кунсем капла-ха, çитес кунсем мĕнле-ши?» тесе çырнă. Çав кунсене палăртас тесе, вăл 1908—1909 çулсенче вырăссен паллă поэчĕн А. В. Кольцовăн «Русская песня» («Дуют ветры, ветры буйные») ятлă сăввине куçарнă:

Сивĕ çил вĕрет,
Хаяр çил вĕрет;
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.

Курăнмасть унта
Çутă кун çути.
Курăнмасть унта
Çут хĕвел çути.

Сĕм тĕттĕм çĕрте
Тĕтресем витĕр
Хура каç анчах
Хуралса тăрать.

Реакци тапхăрĕнче ирсĕр вăйсем пуçĕсене çĕкленĕ. Патша правительствин реакциллĕ политики тата та тискерленнĕ: вăл урса кайсах шовинистла шухăшсем сарнă, вак халăхсене, ирĕксĕрех «вырăслатас» шутпа пушшех те хытă хĕсĕрленĕ.

Паллах, ку политикăпа вырăс халăхĕ килĕшмен, вырăс халăхĕ ытти халăхсемпе пуринпе те туслă пулма тăрăшнă.

К. В. Иванов вырӑссем чӑваш ачисене «ырӑ сунса вӗрентме илни» ҫинчен калать, ҫав вӑхӑтрах вӑл, самана улшӑнни ҫинчен асӑрхаттарса, тӑван халӑхӑн иртнӗ йывӑр пурнӑҫӗ ҫинчен шухӑшласа, чӑвашсем пирки: «Е вырӑса ерӗччӗҫ, пӗрерӗнех пӗтӗччӗҫ», тет. Пирӗн шутпа, К. В. Иванов кунта патша правительствин ытти халӑхсене ирӗксӗрлесе «вырӑслантарас» шовинистла политики ҫинчен ҫырнӑ. Паллах, ҫырма вӑл патша йӗркине хаяр айӑпласа, унӑн политикин ирсӗр меслечӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса ҫырайман, — ҫапах та поэт хӑйӗн сӑввине ҫырнӑ чухне патша влаҫӗн ытти халӑхсене вӑйпа вырӑслантаракан политикине асра тытнӑ.

Сӑвӑра тутарсем ҫинчен ҫырни те тутар халӑхне тиркесе ҫырнине пӗлтермест, пачах урӑхла: унта, чӑннипе илсен, тутар ӗҫҫыннисемпе чӑваш ӗҫҫыннисен тӑшманӗсем ҫинчен каланӑ.

XIX ӗмӗрӗн иккӗмӗш пайӗнче тутар буржуазийӗ экономика тӗлӗшпе чылаях тӗрекленнӗ. Тутар буржуазийӗ ытти тӗрӗк халӑхӗсен буржуазийӗсем хушшинче нумай вӑйлӑрах, агрессиллӗрех пулнӑ. Вӑл тутар ӗҫҫыннийӗсене пусмӑрланипех ҫырлахман, Атӑл тӑрӑхӗнчи ытти халӑхсене хӗсӗрлеме те ӗмӗтленнӗ. Анчах Российӑра тутар буржуазийӗн вӑйлӑ конкурент пулнӑ: ӑна вырӑс буржуазийӗ рынокра ирӗк паман. Рынок вырӑс буржуазийӗшӗн ҫеҫ мар, тутар буржуазийӗшӗн те национализм шкулӗ пулнӑ (чӑваш национализмӗ те ниҫта мар, шӑпах рынокра ҫуралнӑ). Тутар реакционерӗсем тутар халӑхӗ Христос тӗнне куҫса, вырӑса тухса каясран хӑранӑ, ҫавӑнпа вӗсем пантюркизм идеологине сарма тытӑннӑ, тутар халӑхне Российӑран уйӑрса тӗрӗк султанӗн империйӗпе ҫыхӑнтарма, унӑн хӳрешки тума ӗмӗтленнӗ. Вӗсен пропагандисчӗсем (джадидистсем) хӑшпӗр ҫӗрте чӑвашсене те мусульман тӗнне йышӑнтарма, Турцие астарса кайма хӑтланса пӑхнӑ.

Вӗсен агитацийӗ чӑваш хушшинче хӑшпӗр таран ӑнӑҫлӑ пулнӑ. Патша тарҫи-тӗрҫисем Христос тӗнне чӑваш хушшине ирӗксӗрлесе сарнӑ пулсан, пупсем чӑвашсене, хӗрес чуптутарнӑ чухне, ҫав хӗреспе чӑваш ҫамкисене те час-часах шӑтарнӑ пулсан, тепӗр чухне чӑвашсене тӗне кӗменшӗн хурӑн хулӑсемпе те вӗтнӗ пулсан (патша вырӑс мар халӑхсене рая чукмарпа хӑваласа кӗртме хӑтланнӑ!), исламистсем урӑхла ӗҫленӗ: вӗсем чӑваш халӑхӗ хушшине ҫепӗҫ сӑмахпа, чӗкеҫ пек чӗвӗлти чӗлхепе, халап-юмахпа, сӑмах ҫаптарса пырса кӗнӗ, вӗсене тата тутарпа чӑваш чӗлхисем пӗр пекрех пулни те пулӑшнӑ.

Пантюркистсен агитацийĕ 1905—1907 çулсенчи революци хыççăн, реакци тапхăрĕнче, пушшех те вăйланнă. Çакна В. И. Ленин çийĕнчех асăрханă. Вăл, наци ыйтăвне тĕпчесе вĕреннĕ май, панисламистла юхăм «вотяксене, черемиссене тата чăвашсене çавăрса илнине» асăрхаттарнă[1]. Çак реакцилле юхăма хирĕç тутарсен поэчĕ-революционерĕ Габдулла Тукай хĕрӳллĕ сăвăсем çырнă. Сăмахран, вăл пантюркистсен сутăнчăк ĕçĕсене «Каймастпăр!» ятлă сăвăра (1907 ç.) хаяр питленĕ, султансен Турцийĕ «пусмăрпа куççуль çĕршывĕ» пулнине кăтартса панă.

Çапла К. В. Иванов «Хальхи самана» сăвăра икĕ йывăр ыйту хускатнă: унта вăл патша правительствин сахал йышлă халăхсене ирĕксĕр «вырăслатас» политики çинчен тата тутар реакционерĕсен пантюркистла пропаганди çинчен çырнă. Паллах, яр-уççăн çырайман, çапах та вăл çырнисене урăхла ăнланма май çук: поэт-демократ шухăшĕсем ун чухнехи историллĕ событисемпе çыхăнса тăнă, вĕсем çав событисенчен килнĕ, вĕсен витĕмĕпе йĕркеленнĕ.

К. В. Иванов «ырă чăваш» тесе И. Я. Яковлева калать. Çапла вара, «Хальхи самана» сăвăра, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ хĕрĕх çул тултарнă тĕле çырнăскерĕнче, И. Я. Яковлевăн чăваш халăхĕшĕн тунă усăллă ĕçĕсене пысăк хак панă. Поэт тата унăн ырă ĕçĕсем çинчен тăван халăха каласа пама кирлине те асăрхаттарнă:

Çав ĕçсене кам турĕ,
Çак таранччен тăрăшрĕ?
Çак таранччен тарăхса,
Чăвашсемшĕн тăрăшса
Кун-çулĕнче курнине,
Шухăшпала шурнине
Кам каласа парĕ-ши?
Кам ырă ят сарĕ-ши?

* * *

«Хальхи самана» сăвăра К. В. Иванов çĕр ыйтăвне тепĕр хут хускатнă (малтан ăна вăл «Вăранăр, тапранăр!» юрăра хускатнăччĕ). Ачине Чĕмпĕр çинчен каласа паракан чăваш акă мĕнле сăмах çаптарать:

Ĕлĕкчĕ вăл, ĕлĕкчĕ,
Урăх тĕслĕ ĕмĕрччĕ.
Тырă-пулă пит пулнă,
Тырă акма çĕр пулнă.

---

[1] «Ленинский сборник», XXVIII, стр. 309.

Çак «ĕлĕк» чăвашĕ, măк сухал, пĕр-пĕр кĕтесре, таçтан куçса пынă çĕрте, пуăннă пулмалла. Тепĕр тесен, ун пек «ĕлĕк» çыннисем тĕнчере яланах пулнă, халĕ те ун пек экземплярсене хăшпĕр ялта тĕл пулма пулать-ха. Анчах К. В. Иванов хăйĕн сăввинче «ĕлĕк» чăвашĕсен шухăшне мар, 1905—1907 çулсенче çĕршĕн кĕрешĕве çĕкленнĕ хресченсен шухăшĕсене каласа панă:

Çитменнине çын çипе
Çитмен пурнăç çитрĕ çав.
Йывăр кунсем килчĕçĕ,
Выçлăх çулсем çитрĕçĕ.
Çĕрĕ тăвăр, тыр ӳсмест,
Тăранма та çитеймест,

«Хальхи самана» сăвва çыриччен пĕр çул малтанрах (1907 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче) «Выçă аптранăскерсем» юмахра выçă пурнăç çинчен Константин Иванов çакăн пек каласа панă:

Пурăнаттăн пит аван,
Курайманччĕ выç куна,
Анчах, тăванăм, паян
Апат лекни çăварна?
Ларса хырăм тăранмасть,
Мĕнле шухăш шухăшлан?
Ĕç шырарăн— тупăнмасть,
Аçта каяс тен паян?
— Илĕп çĕçĕ, пурттăма,
Чĕнĕп пĕрер юлташа,
Кайăп юта, вăрлама...
Ан асăнăр чăваша.

Çак икĕ произведенирен илнĕ тĕслĕхсенче автор çĕр хĕсĕкки, тырă пулманни, халăх выçă ларни çинчен кăна мар, чăваш çĕршывне капитализм пырса кĕни çинчен çырни те курăнать. Выçă çын ĕç шыраса çӳрет, анчах тупаймасть,— юлашкинчен вара, ним тăваймасăр, юта кайма ĕмĕтленет... Калама канас: юта кайма!.. Çакă вăл пур-çук çĕре, кил-çурта, ялйыша, тăвансене, пĕлĕшсене пăрахса кайнине, ютра хырăма тăрантарас, çĕтĕк-çатăк тумтире саплас тесе хура тар юхтарса, лăш канмасăр ĕçленине пĕлтернĕ. Ку тата çакна та пĕлтернĕ: ял шăплăхĕнчен тухса, хула шавне, капиталистла эксплуатаци майкăчне лекнĕ, хапрăк-савăт çыннисем хушшине пырса кĕнĕ çын урăхла пурăнма тытăннă, пур йышши пусмăра хирĕç те кĕрешес çул çине тухнă.

Патша правительстви 1861 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче хресченсене мĕн тери хытă улталанине, вĕсен çĕрĕсене чĕрçилам касса илнине К. В. Иванов тĕрĕс ăнланнă, терĕмĕр. Анчах Константин Иванов ку тĕлĕшпе пĕччен пулман: çĕр ыйтăвĕ вăл тапхăрта ытти чăваш поэчĕсен чĕрисене те хытă хумхантарнă. Чăваш халăхĕ çĕрсĕр аптрани çинчен М. Ф. Федоров «Арçури» халапра 1879 çултах çырнă, ун хыççăн, 1906—1907 çулсенче, хыпарçăсем — Тайăр Тимкки, Г. А. Кореньков, Ф. Аникин, М. Ф. Акимов тата ыттисем те çырнă. Ун чухне Атăл тăрăхне, çав шутра — Чăваш çĕршывне те выçлăх çулсем килсех тăнă. Выçлăх çулсене эпир революцичченхи кашни поэт сăввисенче тенĕпе пĕрех куратпăр. Анчах çĕр ыйтăвне нихăш поэт та Константин Ивановпа Тайăр Тимкки пек хăюллă лартман, вĕсем иккĕшĕ те выçă халăха тăшмансене хирĕç вăрçма чĕннĕ:

Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
(К. Иванов).

Тĕрлĕ харам пырсене
Ёнсе çинчен пăрахар.
(Тайăр Тимкки).

* *
*

Константин Иванов поэт-демократ пулнă; вăл, чăваш литературин революцийлĕ юхăмĕн пуçĕнче тăман пулин те, çав юхăмпа тачă çыхăнса тăнă. Чăвашсен 1905—1907 çулсенчи демократиллĕ писателĕсемпе революциллĕ писателĕсем пурте «Хыпар» хаçат ĕçне хутшăнса ĕçленĕ, ун тавра пĕрлешсе тăнă. Хыпарçăсем хушшинче эпир кама кăна курмастпăр-ши! Вĕсем хушшинче хастар Т. С. Семенов (Тайăр Тимкки), Н. И. Полоруссов(Шелепи), М. Ф. Акимов, Г. А. Кореньков, С. С. Сорокин (Тăван ялсем Çеркей), Т. А. Абрамов, Д. А. Демидов (юлташ), А. В. Васильева (Ваçça Аниççи), Ф. Н. Николаев (Сергеев) тата ыттисем те.

Константин Иванов ятне эпир «Хыпарта» тĕл пулмастпăр. Мĕншĕн? Вăл «Хыпар» çул-йĕрĕпе, шухăшĕпе килĕшмен-ши? Е мĕнле те пулин урăх сăлтавпа хăйĕн произведенийĕсене хаçата ярса паман-ши? Анчах çакă паллă: К. В. Иванов «Хыпар» тухса тăнă тапхăрта революциллĕ шухăш-кăмăлпа пурăннă, çакна унăн «Вăранăр, тапранăр!» сăвви те лайăх кăтартса парать. Хăшпĕр юлташсем: Ива-

нов вăл сăвва пичетлемен, çавăнпа та унăн шухăш-кăмăлĕ çинчен каланă чухне «Вăранăр, тапранăр!» сăвва асăнни вырăнсăр, теççĕ. Кун пек калакансемпе пачах та килĕшме çук, мĕншĕн тесен çав сăвă Константин Иванов ун чухне тăван халăхран аякра тăманнине, халăх шухăш-кăмăлĕпе, ĕмĕчĕпе пурăннине кăтартса парать. К. В. Иванов хресченсене мĕн кирлине ăнланса илнĕ: **хресченсем çĕрсĕр аптранă, вĕсене çĕр кирлĕ пулнă!**

1905—1907 çулсенчи революциллĕ событисем чăваш халăхĕн массисене çĕклентерсе янă вăхăтрах, унăн интеллигенцийĕн малта пыракан çыннисене те, çав шутра вĕренекен çамрăксене те хавхалантарса янă. Хусанти, Чĕмпĕрти тата ытти хуласенчи чăваш вĕренекенĕсем, патша правительствин халăха вĕрентес ĕçри киревсĕр политикине хирĕç пырса, пĕтĕм Российăри студентсен юхăмне хутшăннă. Ку юхăма Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем те тĕрлĕ требованисемпе тухнă. Вĕсем хушшинче Константин Ивановпа Николай Шупуççынни те пулнă. Çапла Константин Иванован сăмахĕпе ĕçĕ уйрăлса тăман: сăввинче выçă халăха тапранма, вăрçма чĕннĕ пулсан, вĕренекенсем пăлханма тытăнсан — поэт вĕсемпе пĕрле çĕкленет, кайран вара вĕсемпе пĕрлех шкултан тухса ÿкет.

Çакă вăл 1907 çулта пулнă.

* *
*

Константин Васильевич Иванов нумай вуланă, нумай пĕлекен çын пулнă. Вăл пуринчен ытла илемлĕ литературăна лайăх пĕлнĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче унпа пĕрле вĕреннĕ çынсем хăйсен асаилĕвĕсенче К. В. Иванов вырăссен çак писателĕсен произведенийĕсене юратса вуланине асăнаççĕ: А. С. Пушкин, А. В. Кольцов, М. Ю. Лермонтов, Н. В. Гоголь, А. К. Толстой, А. Н. Майков, Н. П. Огарев, Н. А. Некрасов, И. С. Тургенев, С. Т. Аксаков, Л. Н. Толстой, А. П. Чехов, А. С. Серафимович тата ытте. Чăвашсен паллă писательници М. Д. Трубина Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем, çав шутра К. В. Иванов та, Н. Г. Чернышевскин «Мĕн тумалла?» романне вуланине асăнать.

К. В. Иванов хăй кăмăлланă, юратнă вырăс поэчĕсен произведенисене чăвашла куçарнă. М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Н. П. Огарев, Н. А. Некрасов, А. Н. Майков,— акă камсене ытларах кăмăлланă пирĕн поэт! Пĕрисен

тарăн шухăшĕ, ăсĕ, философийĕ килĕшнĕ ăна, теприсен ăсталăхĕ, пултарулăхĕ тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтернĕ. Аслă поэтсенчен вăл çыру ăсталăхне вĕреннĕ, вĕсен кĕнекисене вуласа ăс-пуçне аталантарнă.

Константин Иванов ытти çĕршыв писателĕсен произведенийĕсене те тăрăшса вуланă (вĕсем шутĕнче—И.-В. Гете, Г. Гейне, В. Гюго, Жюль Верн, Майн Рид тата ыт. те).

Тĕнчери прогрессивлă литературăран, вырăссен классикла литературинчен чăваш классикĕ прогрессивлă шухăшсене вĕренсе ăса илнĕ, этем çине гуманистла пăхма вĕреннĕ.

Этеме мухтас чаплă шухăш авалхи Греци литературинчех пулнă. Сăмахран, хальхи ĕмĕр пуçланиччен авалхи Грецире пурăннă аслă драматургăн Софоклăн «Антигона» ятлă трагедийĕнче Фив хулинчи хор этеме çакăн пек мухтаса юрлать:

В мире много сил великих,
Но сильнее человека
Нет в природе ничего.
Мчится он, непобедимый,
По волнам седого моря,
Сквозь ревущий ураган[1].

Пирĕн аслă поэт К. В. Иванов Софокл произведенийĕсене вуласа курнă-и — курман-и, анчах пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă литературăн гуманистла шухăшне тĕрĕс ăнланса чăваш литературине кĕртнĕ.

Тата çакă та паллă: вырăссен К. В. Иванов юратнă поэчĕсенчен пĕри — Алексей Васильевич Кольцов та этеме пысăка хурса мухтанă. Сăмахран, «Человек» ятлă сăвăра вăл акă мĕн çырнă:

Все творенья в божьем мире
Так прекрасны, хороши!
Но прекрасней человека
Ничего нет на земли![2]

А. В. Кольцовăн сăввисене вуланă чухне Константин Иванов «Этем» сăввăн çак йĕркисене асăрхамасăр иртме пултарайман. Вырăс поэчĕ каланă тăрăх, этем пек илемли çĕр çинче урăх ним те çук.

---

[1] «Хрестоматия по античной литературе. Греческая литература», том 1, изд. 6-е, Учпедгиз, 1958 г., стр. 233.

[2] А. В. Кольцов. Сочинения в двух томах, том первый, Изд. «Советская Россия», 1958 г., стр. 132.

XIX ĕмĕрĕн 70—80-мĕш çулĕсенче ĕçлесе пуранна С. Я. Надсон поэтăн (1862—1887) «Идеал» ятлă сăввинче (1878 ç.) этеме çакăн пек мухтаса çырнă:

Не говори, что жизнь — игрушка
В руках бессмысленной судьбы,
Беспечной глупости пирушка
И яд сомнений и борьбы.

Нет, жизнь — разумное стремленье
Туда, где вечный свет горит,
Где человек, венец творенья,
Над миром высоко царит. [1]

С. Я. Надсон «По следам Диогена» [2] ятлă сăввинче: «Эпĕ пур çĕрте те этеме шырарăм» («Я повсюду искал человека»), тесе çырнă.

Халĕ ĕнтĕ Ивановăн «Нарспи» поэмăра çырса хăварнă, унăн хăватне мухтакан пуриншĕн те паллă сăмахĕсене аса илер, вĕсене кĕскен тепĕр хут пăхса тухар:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çер çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

Тĕнче литературипе вырăс литературинчен эпир илсе кăтартнă тĕслĕхсем К. В. Ивановăн пултарулăхне, унăн аслăлăхне, литература историйĕнчи пĕлтерĕшне ним чухлĕ те чакармаççĕ, пачах урăхла — вĕсем пирĕн аслă поэт хăй вăхăтĕнче прогрессивлă идейăсен çўлĕшĕнче тăма тăрăшнине, гуманизм идейисене ăса илсе тĕрĕс ăнланнине кăтартса параççĕ. Çав чаплă идейăсене вăл чăваш халăхĕ хушшине сарнă.

Паллах, Константин Иванов гуманизмĕ абстрактлăрах гуманизм, вăл этем çинчен пĕтĕмĕшлерех калать, çапах та этеме, унăн тивĕçне, ырă шухăшне, çутă ĕмĕтне мухтани чаплă гуманизм пулнă.

Кун пек гуманизм Ивановчченех пулнă. Пирĕн поэт çав чăн-чăн гуманизма чи çывăх, чи тăван шухăш вырăнне хурса йышăннă. Гуманизм ăна хавхалантаракан вăй пулнă: вăл поэта çунат панă, çĕкленĕ, çўлелле вĕçтернĕ, малалла чĕннĕ.

---

[1] С. Я. Надсон. Стихотворения. Библиотека поэта. Малая серия, изд. третье, 1957. стр. 50.
[2] Çавăнтах, 74 стр.

Елӗк-авал, ватам ӗмӗрсенче, гуманизм хӑйӗн ялавне турӑ вӗрентӗвне, теологие хирӗç çӗкленӗ, анчах ун чухнехи гуманизм халӑхран инçетре тӑнӑ. Ватам ӗмӗрти гуманизм чиркӳ авторитетне хавшатнипех çырлахасшӑн пулнӑ, унтан малалла каяйман. Буржуалла гуманистсем, хӑйсен вӑхӑтӗнчи буржуалла «ирӗклӗх», «танлӑх», «тӑванлӑх» лозунгсене çӗклесе, феодализм йӗркисене, пуп-таврашсене хирӗç тухнӑ пулин те, вӗçне çити çирӗп пырайман: вӗсен тӗллевӗсене, шухӑшӗсене, ӗмӗчӗсене буржуалла класлӑх картласа, хӗссе тӑнӑ.[1]

Константин Ивановӑн «Нарспи» поэмӑри тӗп шухӑшӗ çакӑн пек пулнӑ: турӑ мар, этем тӗнчере чи вӑйли. Поэт хӑйӗн тӗллевӗсене халӑх кӗрешӗвӗпе çыхӑнтарнӑ. Çав кӗрешӳре вӑл этем вӑйне, халӑх вӑйне курнӑ. Ку вӑл — 1905—1907 çулсенчи революци пулнӑ. Çакна пирӗн хӑшпӗр критиксем çаплах ӑнланса илеймеççӗ, çавӑнпа та Иванов идеологийӗ, гуманизмӗ пирки тем те пӗр каласа тултараççӗ, элек урапи çине ларса чупасси патнех çитеççӗ.

Кунта тата çакна асӑрхаттарас килет: Константин Ивановӑн «çакӑ çутӑ тӗнчере вӑйли çук та этемрен» тенӗ сӑмахӗсене, Этеме мухтакан шухӑшне пирӗн чӑваш литературинче вунӑ хут çеç мар, çӗр хут та каланӑ пулӗ, халӗ те калаççӗ. Анчах кашни хутра тенӗпе пӗрех Этем вӑйӗ пирки каланипех чарӑнаççӗ, поэт малалла мӗн каланине пачах та шута илмеççӗ. Чӑнах та, поэтӑмӑр малалла мӗн каланӑ-ха? Вӑл, çут тӗнчере Этем чи вӑйли пулни çинчен каланипе пӗрлех, акӑ мӗн çырнӑ:

Анчах вӑйлӑ этем те
Хӑй тӗнчине пӑхӑнать.

[1] Сӑмахран, буржуаллӑ «ирӗклӗх» историре мӗнле улшӑнса пыни çинчен Франципи паллӑ марксист-коммунист Роже Гароди çакӑн пек çырать:

«Буржуазная свобода, которая была в XVIII веке оружием борьбы против феодальных сервитутов, стала в XIX веке оружием борьбы против пролетариата.

Во имя «свободы» буржуазия в 1841 году выступает против закона о детском труде на заводах; во имя «свободы» после июня 1848 года реакция ликвидировала ограничение рабочего дня; любой закон, регламентирующий или ограничивающий произвол предпринимателей, рассматривается буржуазией как посягательство на «свободу». Свобода, гарантированная буржуазным государством, есть свобода сильного (то есть того, кто владеет средствами производства) эксплуатировать и подавлять слабого (то есть того, кто ничего не может продать, кроме рабочей силы)». (Роже Гароди. Марксистский гуманизм. Изд-во иностранной литературы. Москва, 1959 г. 209—210 стр.)

Мĕн-ха вăл этем тĕнчи, «хăй тĕнчи»? Мĕнле «пăхăнатьха» ăна этем? Пирĕн шутпа «хăй тĕнчи» — вăл **этем пуранакан тĕнче, общество.** Этем, темле вăйлă пулсан та, çав тĕнчерен, обществăран иртсе каяймасть, обществăран тухаймасть: общество этеме хăйне пăхăнтарать, хăйне кирлĕ пек тыткалать, «тăна кĕртет». К. Иванов вăхăтĕнчи этемĕн «хăй тĕнчи» — вăл класлă общество, мул хуçисен, улпутсемпе капиталистсен обществи. К. Иванов çакна лайăх ăнланнă, лайăх пĕлнĕ: «Нарспи» поэмăн геройĕсем (ыррисем те, усаллисем те) хăйсен тĕнчине пăхăнса пурăнаççĕ, Нарспипе Сетнер, хăйсен тĕнчинчен таçта вĕçсе кайма ĕмĕтленеççĕ пулин те, ниçта та каяймаççĕ. Нарспипе Сетнер пĕтме те çав «тĕнче» йĕркине пулах пĕтеççĕ.

«Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен», «анчах вăйлă этем те хăй тĕнчине пăхăнать» тенĕ сăмахсенче, пирĕн шутпа, К. Ивановăн хăватлă ăсĕ, философилле шухăшĕ палăрса тăрать. Çапла ĕнтĕ, Константин Иванов поэт-гуманист çеç мар, философ-гуманист та пулнă. Унăн философилле шухăшĕ материалистла философи çулĕпе пынă. Çакă вара ăна, унăн ăс-тăнне вăй панă, иртнĕ вăхăтри ытти нумай гуманистсенчен мала тухма май панă. (Паллах, эпир кунта марксистла гуманизм çинчен каламастпăр: марксистла гуманизм — вăл пролетариат кĕрешĕвĕ пултарнă, çав кĕрешӳпе çыхăнса тăракан гуманизм).

Константин Иванов хăйĕн этеме мухтакан сăмахĕсене каланă вăхăтра Максим Горький сăмахĕсене те, Россйăри пĕрремĕш революци юррисене те илтнĕ,— илтнĕ çеç мар, хăйĕн шухăш-кăмăлне революци саманине пăхăнтарнă. Унăн гуманизмĕ революциллĕ кĕрешӳ çулĕ çине тухнă гуманизм пулнă. Анчах вăл социализмла гуманизм патне çитеймен.

Социализмла гуманизм — пролетариат кĕрешĕвĕнче çуралнă гуманизм. Вăл — пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕпе тачăран та тачă çыхăнса тăрать, çĕнĕ обществăшăн, çынна çын эксплуатацилессине пĕтерекен обществăшăн, ĕçлеве çын чысĕ, чапĕ тăвакан юлташлăхпа туслăха, пĕр-пĕрне тăванла пулăшассине тĕпе хурса пурăнакан обществăшăн кĕрешекен гуманизм. Вăл — марксистла, социализмла гуманизм.

Ирĕке тухнă совет çынни çут тĕнчене хăйне пăхăнтарать: вăл вăйлă юханшывсене пĕвелет, юхăмĕсен çулĕсене улăштарать, тепĕр майлă çавăрса ярать, çулсем хывать, пĕлĕте çĕкленет, уйăх çине çитет, шывсем çинче, çĕр çинче улăпла электростанцисем тăвать, çеçенхирсене шăварать, симĕс

тум тăхăнтартса эшĕл илем кӳрет... Совет литератури, вырăссен классикла литературин, пĕтĕм тĕнчери классикла литературăн ырă традицийĕсене аталантарса, пуянлатса, марксистла гуманизма тĕпе хурса, социализмла, коммунизмла гуманизма пултаруллăн аталантарать, коммунизм тăвакан этеме, пĕтĕм тĕнчери мире, демократие, пуласлăха хӳтĕлекен этеме мухтать.[1]

Советла, социализмла гуманизм принципĕсем совет халăхĕсен туслăхĕнче, кулленхи ĕçĕнче пурнăça кĕрсе пыраççĕ. Совет çыннисем халăхсен туслăхĕнче мĕн тери пысăк вăй пулнине лайăх ăнланаççĕ, çавăнпа та ăна куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ.

* * *

К. В. Ивановăн истори тĕлĕшĕнчи шухăшĕсене пĕр-ик сăмахпа хаклас пулсан, çакăн пек калас пулать: Константин Иванов — чи малтан поэт, художник, анчах вăл истори ыйтăвĕсемпе те пайтах интересленнĕ, хăшпĕрисене хайĕн произведенийĕсенче хускатнă; паллах, К. В. Иванов историк пулман, çапах та вăл çакăн пек пысăк ыйтусене: Иван Грозный самани, Грозный патшан историри вырăнĕ, 1861 çулхи реформа, 1905—1907 çулсенчи халăх кĕрешĕвĕ тата ыттисене те тĕрĕс ăнкарма пуçланă.

Чи пахи тата çакă: Константин Ивановăн пĕтĕм творчествине халăх шухăш-кăмăлĕ витĕр витнĕ; унăн гуманизмĕ — халăха çывăх гуманизм, вăл чăваш халăхне хавхалантарнă, малалла чĕннĕ, хăйĕн тивĕçне ăнланса илме вĕрентнĕ.

Константин Иванов таланчĕпе ăсĕ вăл истори ыйтăвĕсене мĕнле лартса ăнланнинче те яр уççăн курăнса тăрать, патша саманинчи тĕттĕм каçсене çиçĕм пек çурать.

Аслă поэтăн пултарулăхĕ кивелмест, халĕ те халăхра, унăн чĕринче, ăсĕнче пурăнать, малашне те пурăнĕ, ылтăнăн-кĕмĕлĕн ялкăшса тăрĕ!

1960

---

[1] Çак статьяна çырса пĕтернĕ кун пĕтĕм тĕнчипе чаплă хыпар сарăлчĕ: тăватă совет воинĕ — этемлĕх салтакĕсем—Асхат Зиганшин, Филипп Поплавский, Анатолий Крючковский, Иван Федотов хĕрĕх тăхăр талăк океан хăватне хирĕç кĕрешсе ăна çĕнтернĕ. Çав хыпара илтсен, Константин Ивановăн этеме мухтакан сăмахĕсене тепĕр хут калас килсе кайрĕ.

К. В. ИВАНОВ ШУХĂШĔСЕМ ПИРКИ КАЛАÇНĂ МАЙ [1]

1

Чăваш халăх поэчĕ, кăвар чĕреллĕ, çутă ĕмĕтлĕ Константин Васильевич Иванов хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕнче, литературăри пултарулăхĕнче мĕнле шухăшсем тытса пынине, халăхăн мĕнле сийĕсене кăмăлланине чăваш литератури вĕрентĕвĕпе литература критики çителĕклех каласа панă теме пулать. Демократилле поэт пулса тăракан К. В. Ивановăн шухăшĕсемпе ăнланăвĕсем вырăссен 1905—1907 çулсенчи пĕрремĕш революцийĕн тапхăрĕнче чăваш халăх пултарулăхĕн никĕсĕ çинче, вырăссен классикла литературин прогрессивлă идейисен витĕмĕпе (влиянийĕпе) йĕркеленсе çирĕпленнĕ. К. В. Иванов поэзийĕ хăйĕн ăшчикĕпе те, формипе те халăх поэзийĕпе тачă çыхăнса тăрать. Вăл пусмăр тĕнчине тĕп тăвассишĕн кĕрешекен халăхăн иксĕлми вăй-халне, çутă ĕмĕтне, пысăк шанчăкне кăтартса парать, халăхăн ырă туйăмĕсене, шухăшĕсене вăратса, малалла чĕнет. К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине, юмахĕсене, сăвви-юррисене вуласан, чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕ куç умне тухса тăрать, тĕкĕр çинчи пек курăнать. Вулакансем К. В. Иванов кĕнекисем тăрăх кам халăх тусĕ пулнине, кам халăхшăн тăнине, кĕрешнине ăнланса илеççĕ, ырра усалран уйăрса илме вĕренеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш халăхĕ хăйĕн чаплă юрăçине яланах ăшă сăмахпа, ырă кăмăлпа асăнать, унăн паха кĕнекисене ытти тăванла халăхсен çыннисене вулама сĕнет.

---

[1] Ку статья «К. В. Ивановпа «чаплă французсем» çинчен» ятпа пичетленнĕ («Ялав», 9-мĕш №, 1959).

К. В. Иванов 1905—1907 çулсенчи халăх революцине чун-чĕререн кăмăлланă, мухтаса юрланă, вăй çитнĕ таран çав вăхăтри революцилле событисене те хутшăннă. Халăха кĕрешĕве чĕнес кăмăлпа халăх юрăçи ахальтен мар ĕнтĕ çакăн пек çырнă:

> Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
> Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
> Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
> Малалла, малалла, малалла!

К. В. Ивановăн творчестви, ĕçĕ-хĕлĕ, ĕмĕчĕ-шухăшĕ, ăсĕ-туйăмĕ: вăл — халăх юрăçи, поэт-демократ, хăйĕн творчествине революцилле-демократилле литературăпа çыхăнтарнă поэт, тесе каланине çирĕплетсе параççĕ. Вăл ĕççыннисемшĕн тăнă. Çакна ĕнтĕ пурте йышăннă хак темелле.

Анчах мĕнле те пулин событие май К. В. Иванов творчестви пирки сăмах хускатмалла пулсан, пĕр-пĕр «критик» сиксе тухать те кĕтмен çĕртен тенĕ пек «çĕнĕ» сăмах каласа хурать. Пăхатăн та — тĕлĕнсех каятăн: çав сăмах — пачах та «çĕнĕ» сăмах мар, кивĕрен те кивĕ сăмах! Шел пулин те, кун пеккисем пирĕн литературăра час-часах пулса иртеççĕ-ха. Каллех вара тытăнаççĕ «явма», «сӳтме»,— пĕрре сӳтсе явнă ыйтăва йăлтах сӳтсе пăрахаççĕ...

Сăмах пушă ан пултăр тесе, пĕр тĕслĕх илсе кăтартăпăр.

1958 çулти кĕркунне чăваш ĕççыннисем тăван литературăн малтанхи антологийĕ — «Чăваш халлапĕсем» ятлă кĕнеке Чĕмпĕрте тухнăранпа аллă çул çитнине палăртрĕç. Çакна май пирĕн хаçатсемпе журналсенче тĕрлĕ статьясем пичетленсе тухрĕç. Кун пек статьясенчен пĕри — «Чăваш литературин антологийĕ тухнăранпа 50 çул тултарчĕ» ятлăскер — «Ялавăн» 1959 çулхи январь уйăхĕнче кăларнă 1-мĕш №-че çапăннă. Статьи чылаях пысăк. Анчах тĕп шухăшĕ, пирĕн шутпа, тĕрĕсех мар: унта чăваш халăх юрăçине, поэт-демократа, революцичченхи чăваш литературин классикне (ăнлансах-и е ăнланмасăр-и?) буржуалла либерал картне лартнă. Çав вăхăтрах тата Н. В. Шупуççыннине те буржуалла либералсен шутне кĕртсе янă.

Асăннă статьяна Ф. Федотов çырнă [1]. Вăл К. В. Ивановăн шухăш-кăмăлне, унăн революцилĕхне палăртма Фран-

---

[1] Ку статьян авторĕ «Ф. Федотов» мар, «М. Федотов». Редакци йăнăшĕпе «М.» вырăнне «Ф.» пичетленнĕ. Анчах редакци çав йăнăша тӳрлетмерĕ. Çавăнпа та эпир ăна тӳрлетес терĕмĕр, уншăн Максим Федотович Федотов кӳренмĕ терĕмĕр. Сăлтавĕ кӳренмелĕх çук!

цире XVIII ĕмĕр вĕçĕнче пулса иртнĕ буржуалла революцин лозунгĕсене илет.

Акă Ф. Федотов çырнисем: «1905—1907 çулхи революци К. В. Ивановпа Н. В. Шупуççыннин куçне уçнă.»— Ку тĕрĕс, тейĕпĕр: çав çулсенчи революци чăннипех те вĕсен куçĕсене, ăс-пуçне уçнă, ĕмĕчĕсене çунат пană. Анчах пире малалла çырнисем тĕлĕнтереççĕ: «Чаплă французсенчен юлнă «тăванлăх», «танлăх», «ирĕклĕх» çап-çамрăк ачасен чун хавалне çĕклентернĕ, ăс-пуçне çулăмпа хĕртнĕ. Ашкăнса ахăракан арçури — патша самани — халăхсене тек пусмăрта тытса тăраймасси уççăн курăннă».

«Чăваш халăхĕ те хăюллăн ирĕке туртăннă, танлăх, тăванлăх, ирĕклĕх шыранă. Тĕттĕм, чухăн, выçă пурнăç çук сынна хуласене хăвалань. Чăваш ачи вырăс халăх пролетариачĕпе паллашать, унтан вĕренет, çак асаплă пурнăçшăн кам айăплине ăнланса илет. Çапла вара çырма-çатраллă чăваш ялĕсене те революци хумĕ пырса çапать», тет автор.

Мĕн кăна çук-ши кунта? «Арçури», «чаплă французсем» (XVIII ĕмĕр вĕçĕнчи буржуалла революционерсем!), «çапçамрăк» чăваш ачисем (кусем — К. В. Ивановпа Н. В. Шупуççынни!), «чăваш ачи (?) вырăс халăх (??) пролетариачĕпе паллашни...» тата ыт. те (тӳрех каласа хăварас пулать: ку пуплевĕн чĕлхи те, шухăшĕ те армак-чармак туратлă йывăç пек!),— пурне те кутăн-пуçăн, айĕн-çийĕн çаврăса лартнă, пăтраштарса янă... çапла вара — пĕлсех-и е пĕлмесĕр — Ивановăн шухăшĕсене, класлă позицине ку таранччен мĕнле ăнланнă пек мар, урăхла ăнланмалла пек çырнă.

Анчах мĕнпе мĕне пăтраштарнă-ха? Историлле ĕмĕрсене, саманасене, ăнланусене, вĕрентӳсене пăтраштарнă. Калас пулать, ун пек «пăтраштаракансем» 1905—1907 çулсенчи революци тапхăрĕнче те, кайранхи тапхăрсенче те сахал пулман. Анчах вĕсене халĕ, Российăри пĕрремĕш революци пулнăранпа 50 çул иртнĕ хыççăн, пăтраштарни вара пачах та килĕшмест.

1905 çулта Российăра революци çĕкленсе кайсан, буржуалла либералсем (вĕсемпе пĕрле меньшевиксем те): пирĕн революци — буржуалла революци, тенĕ. Апла пулсан, ăна буржуази ертсе пымалла, вăл политикăлла влаçа хăйĕн аллине илмелле, тенĕ. Тĕслĕх вырăнне вĕсем Францири буржуалла революцие илнĕ, ун çине тĕллесе кăтартнă. Вĕсем: куратăр-и, вăл — мĕнле хăватлă революци! Классикла революци!— тесе мăнаçлăн каланă. Либералсем «ирĕклĕх», «тăванлăх», «танлăх» тенĕ лозунгсен виçипех

çырлахма шутланă, вĕсен буржуалла содержанине ырласа савăннă. (Ку лозунгсем мĕне пĕлтернине эпир кайрантарах каласа парăпăр).

Большевиксем, чăн-чăн революционерсем, çакăн пек вĕрентнĕ: вырăс революцийĕ — буржуалла-демократилле революци, анчах унăн тĕп вăйĕсем — пролетариатпа хресченсем, ертсе пыраканĕ (гегемонĕ)— пролетариат, тенĕ.

XVIII ĕмĕр вĕçĕнче Францире пулса иртнĕ буржуалла революципе XX ĕмĕр пуçламăшĕнче (1905—1907 çулсенче) Российăра пулса иртнĕ буржуалла-демократилле революци хушшинче пысăк уйрăмлăх пур (саманасене, тапхăрсене пăтраштаракан çынсем çеç çав уйрăмлăха курмасăр иртме пултараççĕ!).

Российăри класс кĕрешĕвĕ аталанăвĕн уйрăмлăхĕ çакăнта пулнă: XIX ĕмĕр вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшĕнче унта икĕ йышши кĕрешӳ, икĕ йышши вăрçă ӳссе пынă. Пĕр вăрçи крепăсла йĕрке юлашкисене хирĕç çĕкленнĕ, çĕршывăн производительнăй вăйĕсене аталанма чарса тăракан тăлăсене сирсе пăрахассишĕн, демократилле революци туса хурассишĕн пынă: тепĕр вăрçи — пролетарилле революцишĕн, пролетариат диктатуришĕн, обществăна социализм çулĕпе ярассишĕн пынă. Вĕсем, пĕр-пĕринчен хăйсен характерĕпе, тĕллевĕпе, малалла илсе пыракан сăлтавĕсемпе уйрăлса тăнă пулин те, пĕр-пĕринпе пĕрлешсе, çыхăнса, пĕтĕм кĕрешĕве патша йĕркине хирĕç пыракан кĕрешӳ туса, пĕр юхăма пĕрлештерсе янă, буржуалла-демократилле революцин тата пролетарилле революцин задачисене пĕр-пĕринпе çывхартса пынă.

Российăн революци умĕнхи тапхăрти историлле условийĕсем Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенче буржуалла революци пулса иртнĕ тапхăрти условисенчен тĕпренех урăхла пулнă. Хĕвеланăçĕнчи революцисенче, сăмахран, XVIII ĕмĕр вĕçĕнче Францире пулса иртнĕ революцире, буржуази пуçпулса, ертсе пынă, вăл революци гегемонĕ пулнă. Пролетариата илес пулсан, вăл унта тин кăна çуралакан вăйсăр класс çеç пулнă-ха, унăн политикăлла, революцилле парти пулман. Хресченсем буржуази резервĕ пулнă. Российăра ун пек пулман: унта пролетариат ӳссе çитĕнсе пыракан хăватлă революцилле класс пулса тăнă, хăйĕн революцилле партине организациленĕ, хăйĕн класлă задачисемпе, тĕллевĕсемпе кĕрешĕве тухнă. Россия пролетариачĕ патша йĕркине (царизма) тата капитализма хирĕç кĕрешнĕ. Буржуази, капитализма анлăрах çул уçса пама ĕмĕтленнĕскер, пролетариат

кĕрешĕвĕнчен хăранă, çавăнпа та вăл революци вăхăтĕнче патша йĕрки ытамне кĕрсе ӳкнĕ. Вырăс буржуазийĕ «хăйĕн» революцийĕ «классикла» буржуалла революцин виçисенчен (рамкисенчен) тухса каясран, пролетарилле революци пулса тăрасран хăранă, буржуалла революцин задачисене, лозунгĕсене вăраххăн пурнăçланипех çырлахасшăн пулнă (тĕрĕссипе каласан, çакăн чухне вăл хăйĕн хăравçăлăхне тата та ытларах кăтартнă). Буржуазипе пĕрле унăн «юррине» меньшевиксем юрланă: вĕсем халăх ыйтнисене ăнланайман, пролетариат ури айĕнче çапкаланса пынă, ĕççыннисене кансĕрленĕ, буржуазие пулăшнă.

Российăри буржуалла-демократилле революци империализм саманинче, çĕрсе, пăнтăхса, вилсе пыракан капитализм саманниче пуçланнă. Франциăри буржуалла революци капитализм пуçламăшĕнче, капитализм алăкĕ уçăлнă вăхăтра пулса иртнĕ, çав алăка яриех уçса янă. Российăри буржуалла революци капитализм пĕтес вăхăт çитсе пынă вăхăтра, унăн алăкне хупса социализм алăкне уçас вăхăт çитсе пынă вăхăтра пуçланнă.

Российăри 1905—1907 çулсенчи буржуалла-демократилле революципе Франциăри буржуалла революци хушшинче мĕнле уйрăмлăхсем пулнине парти çулпуçĕ тата генилле учителĕ В. И. Ленин питех те уççăн кăтартса панă.

1905 çулти революци çинчен тунă докладра вăл акă мĕн каланă:

> «...Своеобразие русской революции заключается именно в том, что она была по своему социальному содержанию *буржуазно-демократической*, но по средствам борьбы была *пролетарской*. Она была буржуазно-демократической, так как целью, к которой она непосредственно стремилась и которой она могла достигнуть непосредственно своими собственными силами, была демократическая республика, 8-часовой рабочий день, конфискация колоссального крупного дворянского землевладения,— все меры, которые почти в полном объеме осуществила буржуазная революция во Франции в 1792 и 1793 гг.
>
> Русская революция была вместе с тем и пролетарской, не только в том смысле, что пролетариат был руководящей силой, авангардом движения, но и в том смысле, что специфически пролетарское средство борьбы, именно стачка, представляло главное средство

раскачивания масс и наиболее характерное явление в волнообразном нарастании решающих событий» [1].

Аслă революционер И. В. Сталин хăйĕн «Вăхăтлăх революцилле правительствăпа социал-демократи» ятлă статьинче 1905 çулта çакăн пек çырнă:

«...Во Франции во главе революции стояла буржуазия, в России же стоит пролетариат. *Там* первая управляла судьбой революции, *тут* — последний. И разве не ясно, что при такой перестановке руководящих революционных сил не могут получиться тождественные результаты для того и другого класса? Если во Франции буржуазия, стоя во главе революции, воспользовалась ее плодами, то неужели и в России она также должна воспользоваться ими, несмотря на то, что во главе революции стоит пролетариат? Да, говорят наши меньшевики, что произошло *там*, во Франции, то и *здесь*, в России, должно случиться. Эти господа, подобно гробовщику, берут мерку с давно усопшего и этой меркой мерят живых».

И. В. Сталин, Францири буржуалла революци туса хунă республикăна асра тытса, либералсенчен, меньшевиксенчен кулса, малалла çапла калать:

«И неужели, господа, перед такой республикой преклоняете вы свои «высокочтимые» головы? Таков ваш идеал? Доброго пути! Но помните, почтенные, что преклонение перед такой республикой ничего общего не имеет с социал-демократией и ее программой — это демократизм худшего порядка. А вы все это проводите контрабандой, прикрываясь именем социал-демократии» [2].

Çапла, К. В. Ивановăн чун хавалне французсенчен юлнă «тăванлăх», «танлăх», «ирĕклĕх» лозунгсем çĕклентернĕ тени, унăн «ăс-пуçне», шухăш-кăмăлне çав лозунгсен содержанийĕпе çыхăнтарса ăнлантарма тăрăшни пирĕн аслă поэта хăй вăхăтĕнчи революцилле саманаран уйăрса 100—120 çул каялла илсе кайнипе пĕрех. Ку вăл Ивановăн мировоззренийĕ буржуалла революци идейисен шайĕнчен çӳле çĕкленеймен тенине, вăл, нумайран та, буржуалла либерал пек çеç пулнă тенине пĕлтерет. Çапла вара, Ф. Федотов, шел пулин те, К. В. Иванова, поэт-демократа, 1905—1907

---

[1] В. И. Ленин. Сочинения, 4 изд., 23 том. стр. 231.
[2] И. В. Сталин. Сочинения, 1 том, стр. 150—151.

çулсенчи революци вăй-халĕпе, паттăрлăхĕпе хавхаланса, хĕрӳлленсе ĕçленĕ хастар сăвăçа Францири буржуалла революцие пуççапакан çын пек туса кăтартать,—«критик» сăмахĕсене урăхла ăнланма çук, урăхла ăнлансан, К. В. Иванова буржуалла либерал туса хунипе килĕшесси çеç юлать!

Чăнах та, чăваш литература критикин историйĕнче К. В. Иванова буржуалла демократ, буржуалла либерал тесе хаклакансем пулман мар, вĕсем пайтах пулнă, пайтах вулакансене пăтраштарнă (эпир, паллах, Федотов çинчен вăл çак ыйтăва юриех пăтраштарать тесе каласшăн мар; эпир унăн тезисĕ К. В. Иванов — вăл буржуалла либерал текен шухăш патне илсе пырать тесшĕн кăна).

Тĕслĕх илер-ха эппин,— ик-виç тĕслĕх [1].

Чăвашсен паллă критикĕ Г. И. Кузнецов (Кели) ҫăй вăхăтĕнче К. В. Ивановăн «Нарспи» поэмине çакăн пек хак панă:

«Ку поэма — чи малтан реакциллĕ. Поэма геройĕсем пĕри те пирĕншĕн юрăхлă мар, мĕншĕн тесен, унта хăйĕн класлă вырăнне ăнланса илес текен ĕççыннисене «геройласа» кăтартман. Ку чăн малтан кулакла произведени: кулаксене те, чухăнсене (те) пĕр-пĕринпе, капиталистла патшалăх условийĕсенче, ăна тивмесĕр килĕшме вĕрентет» [2].

Паллах, çакă вăл йăнăш та юрăхсăр хак.

Чăвашсен тепĕр паллă критикĕ А. И. Золотов 1935 çулта, К. В. Иванов вилнĕренпе 20 çул тултарнине асăнса иртгернĕ пухура, каланă сăмахĕнче аслă поэта çакăн пек хакланă:

...«Нарспие» эпир пĕтĕмпех, сăмахсăрах йышăнмастпăр. Эпир «Нарспие» шăпах ăна кулакла, националистла элементсем хисеплекен енĕсене тишкерсе йышăнатпăр.

Мĕнле енсем-ха вĕсем, мĕн туртăнтарса тăрать-ха хăй еннелле националистсене «Нарспи» поэмăра?

Пĕрремĕшĕнче, «Нарспи» поэмăра класс кĕрешӳне кăтартса паманни, вăл ялти класлă уйрăмлăхсене шăлса лартни. Силпи ялĕнче пурте килĕшӳллĕ пурнаççĕ, нимĕнле класс хирĕçлĕхĕсем те çук.

---

[1] К. В. Иванов çинчен çырнă статьясене вулакансенчен хăшĕ-пĕрисем пире çакăн пек айăплама пăхрĕç: «К. В. Иванова никам та, нихçан та буржуалла либералсен шутне кĕртме шутламан. Эсир çав сăмахсене хăвăр шухăшласа кăларнă...» терĕç. Çавăнпа кунта тĕслĕхсемсĕр иртме çук. Тĕслĕхсем вара мĕн каламаллине хăйсемех калаççĕ.

[2] Г. Кузнецов. Олимпи сăвăçĕ. «Сунтал», 9-мĕш №, 1930, 23 стр.

Иккĕмĕшĕнче, поэмăна мистикăллă, пессимистла шухăшсем çĕнсе илни. Поэмăра ĕçсем турă çырнă тăрăх, юмăçсем каланисем пурнăçа кĕнĕ тăрăх пулса пыраççĕ, поэма малашнехине курманнипе, шухăш-кăмăл хуçăлнипе тулса ларнă. Сетнерĕн — чухăнăн — кĕрешӳ çулĕ çук, вăл кулаксемпе кĕрешес вырăнне вилессе те кулаксемшĕн кĕрешсе вилет...

...Çак енчен «Нарспи» поэмăн авторĕ К. В. Иванов революциллĕ писатель пулманнине, вăл пĕтĕмпе те буржуалла демократ çеç пулнине уççăнах кăтартса паратпăр» [1].

Ку хак та йăнăш, «Нарспи» поэмăн тĕп шухăшне ăнланмасăр панă хак.

«Нарспи» поэмăн 1935 çулхи кăларăмĕ валли çырнă умсăмахра Д. Данилов критик К. В. Иванов мировоззренийĕ пирки акă тата мĕн каланă:

«Нарспие» 1905—1907 çулхи революци хыççăнхи тĕттĕм реакци пуçланнă вăхăтра çырнине пĕрех те манма юрамасть. Çав реакци пуçланнă вăхăтра çырнăран та пулĕ, К. Ивановăн поэминче... реакциллĕ хура шухăшсем вырăн тупнă. Ытах «Нарспие» революциллĕ шухăшлакан поэт çырнă пулсан, вăл поэт, реакци вăхăтĕнче те, реакциллĕ шухăшсен айне пулман пулĕччĕ... Вĕсен (М. Федоровпа К. Иванов!—*В. Д.)* произведенийĕсем тăрăх, вĕсене иккĕшне те пулса, сарăлса çитеймен буржуалла демократсем темелле. Вĕсем иккĕшĕ те чăваш либералĕсенчен, чăваш пупĕсенчен уйрăлса каяйман» [2].

Иртнĕ вăхăтра «Нарспие» виçĕ критик панă хак мĕн тери тĕрĕс мар, мĕн тери йăнăш пулни халĕ каламасăрах паллă.

«Нарспи» поэма, ун çинчен иртнĕ вăхăтра çавăн пек йăнăш та килĕшӳсĕр шухăш сарнă пулин те, халăх кăмăлĕнчен каймарĕ. Тĕрĕс калать çамрăк поэт Альберт Канаш:

Нарспие — сывлăма,
Сетнере — çулăма
Хăш чăваш, хăш чăваш ан пĕлейтĕр?
Хăш ăс-хал, хăш чĕре
(Эй, Элекçĕ, чĕтре!)
Вĕсене юп курса ан илентĕр?

Ф. Федотов юлташ «Нарспи» поэмăна тиркемест, унăн тиркес шухăш çук, пачах урăхла: вăл ăна ырлать, ун çинчен

[1] А. Золотов. Мĕншĕн хисеплетпĕр эпир «Нарспи» поэмăна. «Сунтал», 4-мĕш №-р, 1935, 19—20 стр.

[2] К. В. Иванов. «Нарспи», Чăвашгосиздат, 1935. ««Нарспи» поэма» ятлă статьяна пăхăр, 13—14 стр.

саванса, хавасланса çырать, анчах поэтăн ăс-пуçне, шухăшĕсене ăнлантарса пама, палăртма юрăхсăр «тезис» илет; ăна, çав тезиса, таçта инçетре, ют çĕршывра, тахçанхи Францире шырать. Çапла вара, «ирĕклĕх», «танлăх», «тăванлăх» текеленĕ çĕртех вăтăрмĕш çулсенче К. В. Иванов çинчен хăштĕр критиксем сарнă йăнăш шухăша тӳрре кăларасси патне пырса тухать.

К. В. Иванов буржуалла демократ пулман, вăл буржуалла либерал пулман, анчах К. В. Иванов пролетарилле революционер та пулман. К. В. Иванов, хальхи литература критики хакланă тăрăх, акă мĕнле поэт пулнă: К. В. Иванăн общество тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем, ĕмĕчĕсем халăх пурнăçĕпе, ĕççыннисен кĕрешĕвĕпе тачă çыхăнса тăрас çулпа аталанса пынă. К. В. Иванов — халăх поэчĕ. Вăл хăйĕн пултаруллăхĕнче халăх интересне, ĕççыннисен йышлă массин интересне палăртнă, çав интерессем ăна çĕклентернĕ, çунат панă, талантне аталантарнă, чĕрине хавхалантарнă.

Чăваш либералĕсем чăваш наци буржуазине аталанма кирлĕ ирĕклĕхсенчен иртеймен, буржуалла реформăсем кĕтсе илес ĕмĕтпе йăпанса пурăннă, патша йĕркипе, пусмăрпа кĕрешме мар, патша умĕнче чуралла упаленме хатĕр пулнă. К. В. Иванов буржуалла либерал пулма мар, хăйĕн сассине либералсене хирĕç çĕкленĕ:

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ».

2

Халĕ каллех «чаплă французсем» çинчен пĕр-ик сăмах калар-ха.

«Ирĕклĕх», «танлăх», «тăванлăх» тенĕ буржуалла лозунгсем мĕне пĕлтернĕ-ха? Мĕнле ăнланмалла-ха вĕсене?

«Ирĕклĕх!» Буржуалла обществăра капиталиста пуйма, ĕççыннисене эксплуатацилеме, вĕсене выçăллă-тутăллă усрама, вĕсен вăй-халне, юнне тумламăн-тумламăн ĕмсе илме, юлашкинчен, вĕсене урама кăларса ывăтма май паракан ирĕклĕх, рабочисене ĕç шыраса çӳреме, хăйĕн ĕç вăйне капиталиста сутма, мул хуçисене услам илме, капитал пухма май паракан ирĕклĕх,— акă мĕне пĕлтерет вăл!

«Танлӑх»! Ку тата мӗне пӗлтернӗ-ши? Закон умӗнче ҫынсем пурте пӗр тан пулмаллине пӗлтернӗ, ҫав вӑхӑтрах класлӑ танмарлӑха пӗтересси ҫинчен пӗр сӑмах та шарламан. Капиталист — пуян, рабочий — чухӑн пулсан, пӗри — тутӑ, тепри — выҫӑ пулсан, пӗри — эксплуататор, тепри — эксплуатаци тӳсекен ҫын пулсан, вӗсем хушшинче мӗнле танлӑх пултӑр-ха? Марксизм-ленинизм танлӑх тесе эксплуататорла классене пӗтермеллине, ҫынна ҫын эксплуатацилессине тӗп тумаллине ӑнланать.

«Тӑванлӑх». Мӗн тери паха ку сӑмах! Анчах унта (буржуалла обществӑра!) буржуапа пролетари хушшинчи «тӑванлӑх» ҫинчен, нихҫан та пулма пултарайман, суя тӑванлӑх ҫинчен сӑмах пырать-ҫке! Капиталистсем тата вӗсен парапланне ҫапакан этемсем «тӑванлӑх» тенӗ чаплӑ сӑмахпа вӗҫкӗнленсе ҫӳренӗ, анчах ҫав капиталистсем, пролетарисен тарӗпе юнӗнчен, шӑммисенчен пин-пин меслетпе укҫа-тенкӗ пӑчӑртаса кӑларса, ылтӑн-кӗмӗл сассипе илӗрсе, савӑнса пурӑннӑ.

Капитализм вӑхӑтӗнче «ирӗклӗх», «танлӑх», «тӑванлӑх» лозунгсене илсе, вӗсен буржуалла тупсӑмне ӑнланмасӑр, е пӗлмӗш пулса, е юриех пытарса, сӑмах ҫаптаракан вӗҫкӗнчӗк сӳпӗлтисене хирӗҫ В. И. Ленин ҫакӑн пек ҫырнӑ:

«Свобода, нечего говорить, для всякой революции, социалистической ли или демократической, это есть лозунг, который очень и очень существенен. А наша программа заявляет: свобода, если она противоречит освобождению труда от гнета капитала, есть обман» [1].

«Все равны, независимо от сословий, все равны, в том числе миллионер и голяк,— так говорили, так думали, так искренне считали величайшие революционеры того периода, который в историю вошел, как период великой французской революции. Революция шла против помещиков под лозунгом равенства, и называли равенством то, что миллионер и рабочий должны иметь равные права. Революция пошла дальше. Она говорит, что «равенство»... это так же ясно, как то, что мы сказали про свободу,—равенство есть обман, если оно противоречит освобождению труда от гнета капитала. Это мы говорим, и это совершенная правда».

«...Равенство есть пустая фраза, если под равенством не понимать уничтожение классов» [2].

---

[1] В. И. Ленин. Сочинения, т. 29, стр. 323.
[2] Ҫавӑнтах. 328, 329.

Çавăн пек вăл капитализм тĕнчинчи, капитализм çăтмахĕнчи «ирĕклĕх», «танлăх», «тăванлăх»!

Çавăн пек!!!

* *
*

Хăшĕ-пĕрисем: «К. В. Ивановпа «чаплă французсем» çинчен статьян авторĕ «ирĕклĕх», «танлăх», «тăванлăх» лозунгсене ним вырăнне те хумасть, тесе калама пултараççĕ. «Ирĕклĕхшĕн», «танлăхшăн», «тăванлăхшăн» ĕççыннисем кĕрешмен-и-мĕн? Юн тăкман-и? Нумай-нумай кĕрешӳ паттăрĕсем пуçĕсене ирĕклĕхшĕн хуман-и?.. теме пултараççĕ.

Статьян малтанхи пайĕнче, Российăри класс кĕрешĕвĕ аталанăвĕн уйрăмлăхĕ çинчен çырнă май, XIX ĕмĕр вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшĕнче икĕ йышши кĕрешӳ, икĕ йышши вăрçă ӳссе пынă, тенĕччĕ. Çав кĕрешӳре, çав вăрçăра буржуази, патша йĕркине хирĕç тухса, шăпах ĕнтĕ «чаплă французсен» лозунгĕсене тытса пынă, çав лозунгсене пурнăçа кĕртсе капитал çулне яриех уçса ярасшăн пулнă. Ĕççыннисем, рабочисемпе чухăн хресченсем, патша йĕркине революци урлă сирпĕтсе антарса, улпут-хуçасене, чиновниксене тапса сиктерсе, капитала та çăварлăхласшăн, капиталистла эксплуатацие те тĕп тăвасшăн пулнă. Çакă вăл чăн-чăн ирĕклĕхшĕн, чăн-чăн танлăхшăн кĕрешнине пĕлтернĕ. Анчах ку ирĕклĕхпе танлăх «чаплă французсен» буржуалла «ирĕклĕхĕпе» «танлăхĕ» мар, пролетарилле ирĕклĕх, пролетарилле танлăх пулнă, буржуалла либералсем хăйсен ялавĕ çине çырса хунă «ирĕклĕхпе» «танлăх» мар, пролетарилле революционерсен ялавĕ çине çырса хунă чăн-чăн ирĕклĕхпе танлăх пулнă.

«Ирĕклĕх», «танлăх», «тăванлăх» лозунгсем,— буржуалла революцисем кăларса тăратнăскерсем,— капиталистла обществăшăн прогрессивлă лозунгсем пулнă. Çав революци обществăна, общество шухăшне нумай малалла кайма пулăшнă, литературăпа искусствăна, наукăпа техникăна çул уçса панă. Марксистсем çакна лайăх пĕлнĕ, ăнланнă, анчах вĕсем, чи малтан Маркспа Энгельс çапла каланă: «ирĕклĕх» ку вăхăтчен пуянсене, капиталистсене çеç усă панă; ĕççыннисене, рабочисене ним те паман; рабочисем, ĕççыннисем, халăх пусмăра пĕтерсен, капиталистла эксплуатацие пĕтерсен çеç ирĕклĕ пулма пултараççĕ. Маркспа Энгельс çапла вĕрентнĕ: танлăх тесе классене пĕтернине ăнланмалла, классене пĕтерсен çеç çынсем хушшинче танлăх пулма пултарать.

Танлăха урăхла ăнланни — вăл пушă сăмах, пĕр-пĕр буржуалла либерал, буржуалла писатель шухăшласа кăларнă япала çеç.

Октябрьти революци эксплуататорла классене пĕтерчĕ, мĕнпур ĕççыннисене ирĕке кăларчĕ. Çапла вара, пирĕн çĕршывра ирĕклĕх революци панă вăй пулса тăчĕ.

Совет Союзĕнче ĕççыннисем пур тĕлĕшпе те тан правасемпе усă кураççĕ. Ирĕклĕ совет халăхĕсем пурте тан правасемпе усă кураççĕ, пурте коммунизм çуртне туса лартассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Октябрь революцине пула пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинче чăн-чăн тăванла туслăх пулса тăчĕ, çирĕпленчĕ. Вĕсем çав туслăха, тăванлăха куç шăрçине упранă пек упраççĕ.

Эпир коммунизм тăватпăр. Коммунизм — вăл ирĕклĕх, танлăх, тăванлăх лозунгсене чăнласах пурнăçа кĕртни. Вăл обществăн производительнăй вăйĕсене малалла тата та хăватлăн аталантарса ярĕ, аслă принципа — кашнинчен пултарулăхне кура, кашнине кирлине кура текен принципа пурнăçлама май парĕ. Коммунизм иртнĕ саманасенче ĕмĕрсем хушши пухса пынă, малашнехишĕн юрăхлă чаплă пуянлăха, культурăна, ăслăлăха, пĕлӳсене, наукăна тишкерсе илет, вĕсемпе усă курать.

Çакăн пек ăнланатпăр эпир чăн-чăн ирĕклĕхе, чăн-чăн танлăха, чăн-чăн тăванлăха!

Çакăн пек!

3

Ф. Федотов статьинче патша саманине, патша йĕркине «ашкăнса ахăракан арçури», тенĕ. Çакна вăл М. Ф. Федорован «Арçури» халапĕнчи арçурие асра тытса каланă.

Акă вăл «халăхсене пусмăрта» тытакан патша самани пек арçури:

Те арçури, те шуйттан,
Те ыр-усал, те вăр-хурах
Те çул маяк, те амак?
Чун шикленет, ăш варкать,
Пуç тӳпинчен сĕрĕм тухать.
Шĕвик! Шăхăрать çын пекех,
Мăкăл-мăкăл юмахлать;
Шăтăр-шатăр тутарать;
Путь ухмаххи тапранать:
Юмах ярать, юптарать,
Йăнăш çулпа чуптарать,

Чике тăршшĕ ларттарать.
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Çавраçил пек çаврăнса,
Çĕмĕртсене çĕмĕрсе,
Сикрĕ тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хуçрĕ çурмаран,—
Ват çын пекех — шур сухаллă,
Качака пек мăйракаллă,
Ури вăрăм, куçĕ чармак,
Урхас Кушкă вăрманĕнче
Урлă-пирлĕ уткалать;
Урнă йыт пек туллашать,
Кăтăкласа вĕлерет.
Лаша кӳлсе ларать те
Çĕр çĕмĕрсе чуптарать,
Çĕр чĕтретсе кăшкăрать...
... Арман патне çитсессĕн,
Аран юлчĕ арçури,
Тарăн вара çитсессĕн,
Таркăн салтак пулчĕ кайрĕ,
Виснер хĕрне çитсессĕн,
Вилнĕ карчăк пулчĕ выртрĕ,
Çурма çула çитсессĕн,
Çурхи сурăх пулчĕ кайрĕ.
Хайхи-майхи арçури
Кайран кая юлчĕ те,
Анчăк çури пулчĕ те,
Арман патне çитсессĕн,
Арман айне кĕрех кайрĕ.

Чăннипе каласан, кунта чăваш поэчĕ авалхи саманара чăваш халăхĕ хушшинче сарăлнă паллă юмах-халаппа усă курса, питех те ăста сăнласа кăтартнă. Çав арçурине Хĕветĕр, чухăн хресчен, вăрмана хăрăк турат пуçтарма кайнăскер, курнă имĕш. Арçури тем те хăтланать, такам та пулать, хăратать,— анчăк çури пулсан тин «хайхи-майхи арçури» арман айне кĕрсе юлать. (Патша самани çавăн пек хăтланнине кам курнă-ши?)

Ф. Федотов критик Хĕветĕрпе арçури çинчен çапла калать:

«Шикленсе пурăнакан, выçăллă-тутăллă Хĕветĕре «хĕвел ансан» та пурнăç çук. Шĕвик! шăхăрсан та ун «пуç тӳпинчен сĕрĕм тухнă». Мĕн кирлĕ пулнă-ши çак Хĕветĕре? Ирĕклĕх, танлăх, тăванлăх? Çук, вăл ун çинчен иртнĕ ĕмĕрĕн 60—70-мĕш çулĕсенче илтмен-ха. Мĕнле те пулсан, Урхас Кушкă вăрманĕнче хăрăк турат пуçтарасчĕ, вара сенĕк тума пилĕк юплĕ пилеше, турта тума туратсăр хурама касасчĕ,— ĕмĕтленнĕ вăл. Анчах çакна тума та Хĕветĕршĕн ирĕк-

лĕх пулман. Танлăх, тăванлăх?! Кам-ха унпа тан пулнă? Микул турра пуççапма кайнă карчăк Микули, Кириле, «салтак ачи пама кайнă» Лавраç пичче, суккăр Энтри. Вĕсем пурте тертлĕ пурнăç, çитмен пурнăç пирки тăраниччен çăкăр çиеймесĕрех асапланса пурăннă-пурăннă та «йыт вилĕмĕпе вилнĕ».

Çапла «философиленĕ» хыççăн «критик» акă мĕнле пĕтĕмлетсе калать: «Камран хăраса пурăннă Хĕветĕр пеккисем? *Арçурирен — патша саманинчен,* мĕншĕн тесен *вăл «çĕр чĕтретсе кăшкăрать, хура халăха хăратать»* (курсив пирĕн.— *В. Д.).*

Çакă вăл — ытла та çăмăлттайла пĕтĕмлетӳ (вывод). Арçурие «патша самани» туса хума нимле сăлтав та çук. «Арçури — патша самани» тени — вăл наукăпа, литература вĕрентĕвĕпе çыхăнса тăман япала. Тĕрĕссипе каласан, вăл — пăсăк та ниме юрăхсăр вульгарлă социологизм. Патша самани арçури пек çеç пулнă пулсан—унпа кĕрешме йывăрах пулман пулĕччĕ, ăна хирĕç кĕрешнĕ чухне юн та тăкăнман пулĕччĕ.

Паллах, «Арçури» поэмăра сăнласа панă пурнăç — патша вăхăтĕнчи пурнăç. «Патша самани», патша йĕрки чăвашсене мĕнле хĕсĕрленине поэт, арçури çинчен çырнă çĕртен систермесĕрех пăрăнса, акă мĕнле кăтартса парать:

Çитмен пурнăç пирки-çке
Çын кусĕнчен пăхатпăр,
Çиме çăкăр çитмесен,
Пăтавкка йатса каятпăр.
Хырăç-марăç памашкăн
Хушпу саклат хыватпăр,
Ана тара паратпăр,
Ыраш калчи сутатпăр;
Кайран юра еретпĕр,
Хутаç çакса каятпăр,
Ыйткаласа çӳретпĕр.

Çитмен пурнăçа хирĕç кĕрешесси, çитмен пурнăçа юсаса лайăх пурнăç тăвасси çăмăл ĕç пулман, чăннипе каласан, çитмен пурнăçа тулăх пурнăç тума революци çеç пултарнă. Анчах ку ыйту вăл вăхăтра (70—80-мĕш çулсенче) чăваш хушшинче тăман-ха. Тăнă пулсан та, ăна Хĕветĕрсем тума пултарайман. Чăваш ĕнтĕ арçурине «улталама» та пултарнă, чăваш ăсĕ тĕрлĕ тĕшмĕшрен хăтăлса арçурирен те хăтăлма пултарнă. Тĕшмĕшсенчен хăтăласси те çăмăл ĕç пулман, çапах та вĕсенчен хăтăлма патша саманинче те пулнă.

М. Ф. Федоров арçурие пĕтерес çула пĕлнĕ, курнă, вăл — халăх культурине ӳстерес çул, просветительсем кăтартакан çул. Анчах халăх культурине чăннипех те вăйлăн ӳстерме патша йĕрки чарнă. Патша йĕркине мĕнле пĕтерес çула Федоров курман, ун пирки шухăшламан та. К. В. Иванова илес пулсан, вăл патша йĕркине пĕтерме кирлине ăнланнă, çавăнпа та выçă халăха тапранма, çĕкленме чĕннĕ. М. Ф. Федоров хăйĕн «Арçурине» 1879 çулта çырнă, вăл Ивановчченхи саманара пурăннă; К. В. Иванов, пĕтĕмĕшпе илсен, 1905—1907 çулсенчи революци саманинче вĕреннĕ, ĕçленĕ, çырнă. Ăна, революци саманинче пурăннăскере, халăх революцийĕ мĕн ыйтнине ăнланма йывăрах пулман.

Ф. Федотов «чаплă французсемпе» «çап-çамрăк ачасем» (К. В. Ивановпа Н. В. Шупуççынни) çинчен каланă чухне те «вульгарлă социологизм» меслечĕпех усă курнă. Урăхла пулсан, вăл çавăн пек йăнăш çул çине тăман пулĕччĕ. «Чаплă французсем»— вĕсем никамсем те мар, шăпах буржуаллă деятельсем, XVIII ĕмĕр вĕçĕнче «ирĕклĕхшĕн», «танлăхшăн», «тăванлăхшăн» кĕрешнĕ буржуаллă революционерсем. Критик вĕрентнине ĕненес пулсан, çав буржуаллă революционерсем К. В. Ивановпа Н. В. Шупуççыннин «чун хавалне çĕклентернĕ, ăс-пуçне çулăмпа хĕртнĕ» пулать, урăхла каласан, мировоззренине, идеологине йĕркеленĕ.

Ф. Федотов статьинчен тата çакă курăнать: ун чухне чăваш рабочийĕсен, чăваш халăхĕн кĕрешĕвĕ те буржуаллă революци шайĕнчен, буржуаллă «ирĕклĕхпе» «танлăх» тата «тăванлăх» виçинчен çӳлерех çĕкленеймен. Кун пек каланипе историк-марксистсем нихçан та килĕшмен, килĕшме шутламаççĕ. Критик-марксистсем те çавах: килĕшме шутламаççĕ!

Çапла ĕнтĕ, Ф. Федотовăн «Чăваш литературин антологийĕ тухнăранпа 50 çул тултарчĕ» ятлă статьине: вăл — йăнăш статья, вулакансене пăтраштаракан, литература вĕрентĕвне каялла туртакан статья, тесе хаклас пулать. Çавăн пек йăнăш статьясем урăх ан пулччăр тесен, пирĕн литературăпа критика, историпе политика, социологипе философи ыйтăвĕсене лайăхрах та тĕплĕрех вĕренсе пырас пулать.

Критиксен аллинче яланах марксизм-ленинизм компасĕ пулмалла. Çавăн пек компас пулсан, эпир истори, философи, литература ыйтăвĕсен чăтлăхĕсенче те çул тупăпăр, ăçта çурçĕрпе кăнтăр, ăçта хĕвелтухăçĕпе хĕвеланăç пулнине яланах пĕлсе утăпăр, тĕрĕс çул-йĕртен пăрăнмăпăр.

1959

4

Юлашкинчен К. В. Иванов ăс-хакăлĕ, шухăш-кăмăлĕ пирки хамăр мĕн-мĕн çырнисене пĕтĕçтерсе кĕскен калас килет. Пирĕн пĕтĕçтерӳсем çакăн пек.

П ĕ р р е м ĕ ш ĕ. К. В. Иванов пултарулăхĕнче философилле шухăшсем те палăраççĕ. Паллах, вĕсем сарăлса, аталанса çитеймен, çапах та уççăнах курăннă. Ивановăн философилле шухăшĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, материализмла философи еннелле сулăнса, материализм енĕпе пынă. Унăн гуманизмĕ те çав çул çине пырса çитнĕ. Анчах Ивановăн философилле шухăшĕсем кирлĕ таран тарăнланса, анлăланса çитеймен. Поэт, 1905—1908 çулсенче ĕçлеме тытăннăскер, пĕрремĕш революци панă шухăшсемпе хавхаланнă вăхăтрах реакци тапхăрне те тӳссе курнă. Çав тапхăрта пурăнма тивмен пулсан, Ивановăн шухăшĕсем вăйлăрах, уççăнрах палăрса аталаннă пулĕччĕç.

И к к ĕ м ĕ ш ĕ. К. В. Иванов, халăх юрăçи, поэт-демократ пулса, 1905—1907 çулсенчи революцин задачисене халăх ăнланнă пек ăнланнă («халăх» тенĕ ăнланăва эпир ĕççыннисен чи йышлă массине асра тытса калатпăр). Чăваш халăхĕ патша Российинче — «халăхсен тĕрминче»—асапланса пурăннă. Ытти халăхсем пекех ирĕке тухма ĕмĕтленнĕ. Çав ĕмĕтпе вăл Российăра империализм саманинче пулса иртнĕ пĕрремĕш революцие (халăх революцине) хутшăннă. К. В. Иванов произведенийĕсенче революци хатĕрленнĕ, пулса пынă тапхăрти халăх шухăш-кăмăлĕ хăшпĕр таран палăрнă. 1906 çулта вăл «Вăранăр, тапранăр» сăвă çырса хăйĕн революциллĕ шухăшне каласа парать, 1907 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсемпе пĕрле хăй те кĕрешĕве хутшăнать. (Паллах, К. В. Иванов, урама тухса, çĕкленнĕ халăх йышĕпе пырса, революцилле çапăçусенче пулман. Çапах та вăл кĕрешĕве хутшăннă, хăйĕн шухăш-кăмăлĕ кам енче пулнине кăтартнă. Çапла, классем, ушкăнсем, çынсем 1905—1907 çулсенчи революцие тĕрлĕ майпа, тĕрлĕ сăлтавпа хутшăннă. К. В. Иванова илес пулсан, вăл ĕçхалăх интересĕсемшĕн тăрса хутшăннă).

1908 çулта К. В. Иванов «Хальхи самана» ятлă сăвă çырать. Анчах унăн ку сăвăри позицийĕ — мирлĕрех позици: кунта вăл ырă та ăслă çынсен ĕçĕ пурнăçа лайăхлатасса шанни сисĕнет («ăслă çынсен ĕçĕ» çинчен çырнă чухне поэт, паллах, Яковлев пек çынсене асра тытать пулмалла). Çав вăхăтрах Иванов, тискер реакци ахăрса кайнине курса, самана пирки калать:

Эй, самана, самана!
Мĕн кăтартăн малалла?
Хальхи кунсем капла-ха,
Килес кунсем мĕнле-ши?

К. В. Иванов шухăшĕпе кăмăлне «Вăранăр, тапранăр» сăвва çырнă чухне те, «Хальхи самана» сăвва çырнă чухне те *самана ыйтăвĕ* хумхантарнă. Анчах революци хумĕ чакса кайсан, тискер реакци пуçне çĕклесен,— поэтăн политикăлла шухăшĕсем йăвашланнă. Кайрантарахпа, поэтăн сывлăхĕ хавшаса пынă май, вăл çĕнĕ произведенисем çырайман, теççĕ пирĕн литература тĕпчевçисем (çырнă пулсан та вĕсем упранса юлман, тейĕпĕр эпир) [1].

Виççĕмĕшĕ. К. В. Иванов пултарулăхĕ — чăваш халăхĕн ăс-тăнĕн, илемлĕ пултарулăхĕн аталанăвĕнче чăнласах пысăк утăм пулса тăрать. Унăн произведенийĕсем пирĕн халăхăн илемлĕх туйăмĕсене, чĕре сисĕмĕсене малалла аталантарнă, усалпа ырра, тĕрĕслĕхпе суяна уйăрса илме вĕрентнĕ. Ивановăн илемлĕ литературăри ĕçĕ-хĕлĕ чăваш поэзине шанчăклă çул çине тухма пулăшнă, хăюлăх панă, чăваш чĕлхин вăйне, çивĕчлĕхне кăтартса панă. Поэт чăваш чĕлхин илемне, янравлăхне никамран та лайăх туйнă, мĕн тери пиçĕ, мĕн тери кĕрнеклĕ, кĕвĕллĕ пулнине ĕçре кăтартнă. Вăл сăввăн силлабика тенĕ виçипе ăнăçлă усă курнă, ăна чи çӳлĕ шая çитернĕ (кайран чăвашсен пĕр поэчĕ те ку сăвва Иванов шайне çитереймен). Иванов силлабикăран тоникăна куçма тытăннă (ку вăл унăн куçарăвĕсенче ытларах сисĕнет; сăмахран, «Парăс» сăвăра).

К. В. Иванов эстетики халăхăн ырă туйăмĕсенчен вăй илсе тăнă, поэт халăхăн эстетикăлла туйăмĕсене лайăх туйнă, ăнланнă. Вăл тăван чĕлхен пуянлăхĕпе усă курса, халăх кăмăлне кăтартса пама пĕлнĕ. Акă ĕçри халăх кăмăлĕ:

Чăваш кĕпи улача,
Хир варринче кăн-кăвак,
Ĕçчен чăваш вăкăр пек,
Юрла-юрла ĕç тăвать.

---

[1] К. В. Ивановăн алçырăвĕсем нумай пулнă, анчах вĕсем çухалса пĕтнĕ. Поэтăн алçырăвĕсем пирки М. Р. Рублев хăйĕн «Годы великих свершений» ятлă кĕнекинче (Чăвашгиз, 1959 ç.) çапла çырать: «В Сызране в Политотдел поступили сведения, что три-четыре офицера белой армии (возможно, это были люди, переодетые в офицерскую форму) на двух подводах увезли рукописи законченных и незаконченных произведений известного чувашского поэта К. В. Иванова, автора поэмы «Нарспи»... О похищении рукописей К. В. Иванова решил упомянуть потому, что мне неизвестно их дальнейшая судьба» (75 стр.).

Т ă в а т т ă м ĕ ш ĕ. К. В. Иванов — чăваш халăх юрăçи, чăвашсен малтанхи нацилле поэчĕ. Вăл уйрăм çынсен пурнăçне кăна мар, пĕтĕм халăх пурнăçне кăтартса панă; хăйĕн пултарулăхĕнче уйрăм çынсен шухăш-кăмăлне çеç мар, халăх шухăш-кăмăлне палăртнă; çырма уйрăм вырăнти чĕлхепе кăна мар, чăваш халăхĕн пур çĕрти калаçăвĕпе усă курса çырнă, чĕлхе пуянлăхне хăйĕн произведенийĕсенче пĕр çĕре пĕтĕçтерме вăй çитернĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ăна пĕтĕм чăваш халăхĕ ăнланнă, килĕштернĕ, тăван поэт тесе йышăннă.

К. В. Иванов литературăра ĕçленĕ, унăн произведенийĕсем халăх хушшине сарăлнă тапхăрта чăвашсен нацилле литератури вăй илме тытăннă, чăн-чăн литература чĕлхи аталанса кайнă. Çапла вара поэтăмăр хăйĕн çиçсе тăракан талантне, ăс-тăн вăйне, чун хавалне ним хĕрхенмесĕр тăван халăхне панă, çамрăк чăваш литературине çĕнĕ тапхăра кĕме, малалла утма шанчăк панă, тĕрĕслĕхе юратма, уншăн кĕрешме чĕннĕ.

К. В. Иванов пурнăçĕ тăван халăхшăн çунса пĕтнĕ, анчах унăн ырă традицийĕ пĕтмен. Чăваш совет литератури, ăна тытса пырса, çĕнĕ саманара пуянланса, социализмла реализм литературин тӳпине хăпарса пырать, халăхшăн ĕçлет, халăха коммунизм тума пулăшать.

1960

КĔНЕКЕРЕ ТĔЛ ПУЛАКАН ЯТСЕМ

Абрамов Т. А. 120.
Акимов М. Ф. 7, 120.
Аксаков С. Т. 16, 121.
Андерсен Х. К. 16.
Аникин Ф. 120.
Антокольский М. М. 4.
Ашмарин Н. И. 92, 99.
Белинский В. Г. 4, 15, 35—36, 47, 72, 76—79, 100, 107, 109.
Васильева А. В. 122.
Васильев-Шупуççынни Н. В. 7, 10, 121, 128—129, 141.
Верн Жюль 121.
Гароди Роже 124.
Гейне Генрих 15, 122.
Герцен А. И. 94, 100.
Гете И.-В. 15, 121.
Гоголь Н. В. 8, 9, 72, 121.
Горький А. М. 48, 125.
Грозный (Иван IV Васильевич Грозный) 16, 99—107, 110—111, 126.
Гюго Виктор 121.
Демидов Д. А. 120.
Денисов П. В. 11.
Добролюбов Н. А. 72, 100.
Золотов А. И. 133.
Иванов И. И. 7.
Ильин Г. И. 112.
Иринин Б. С. 8.
Канаш Альберт 134.
Карамзин Н. М. 100.
Кириллов Т. К. 70.
Ключевский В. О. 100, 110—111.
Кольцов А. В. 7, 17, 65, 69, 76, 78—79, 84—86, 91, 97, 116, 121—122.
Кузнецов (Кели) Г. И. 133.
Кузнецов И. Д. 11.
Кореньков Г. А. 120.
Костылев В. И. 101.
Крылов И. А. 72.
Курбский А. М. 106, 107.
Лавров П. Л. 114.
Ленин В. И. 9, 97, 105, 118, 131—132, 136.
Лермонтов М. Ю. 7, 13, 15, 16, 17, 33, 35—36, 38, 48, 56, 64, 69, 72, 76—91, 97, 99—103, 108—110, 121.
Лютер Мартин 104.
Маркс Карл 54, 77, 106, 137.
Майков А. Н. 69, 95—96, 121.
Навои Алишер 75.
Надсон С. Я. 123.
Некрасов Н. А. 13, 15, 17, 24, 48, 64, 69, 76, 84, 91—93, 97, 121.
Низами Г. 75.
Николай — он (Даниельсон Н. Ф.) 77.
Николаев (Сергеев) Ф. Н. 120
Огарев Н. П. 69, 91, 93—95 97, 121.
Павлов Ф. П. 34.
Петр Первый 100, 106.
Покровский М. Н. 101.

Пугачев Е. И. 111—112.
Пушкин А. С. 8, 13, 15, 33, 48, 56, 63, 72, 76—77, 84, 91, 99—100, 121.
Репин И. Е. 105.
Рид Майн 121.
Рублев М. Р. 143.
Руставели Шота 75.
Серафимович А. С. 121.
Скуратов Малюта 107.
Сорокин С. С. 120.
Софокл 121.
Сталин И. В. 62, 132.
Тайӑр Тимкки 35, 67—68, 120.
Твардовский А. Т. 8.
Тимофеев Г. Т. 15.
Титов Г. М. 11.
Толстой А. К. 101, 121.
Толстой А. Н. 101.
Толстой Л. Н. 7, 15, 16, 91, 110, 121.
Трубина М. Д. 121.
Тукай Габдулла 68, 118.
Тургенев И. С. 121.
Ульянов И. Н. 66.
Ушаков Д. Н. 90
Ухсай Я. Г. 5, 75, 91, 112.
Фадеев А. А. 8.
Федотов М. Ф. 128—129, 132, 134—141.
Федоров М. Ф. 7, 13, 15, 34, 40, 120, 134, 138—141.
Хусанкай П. П. 75.
Чехов А. П. 121.
Чернышевский Н. Г. 91, 97, 121.
Чуковский К. И. 77.
Шевченко Т. Г. 75.
Шекспир В. 15.
Шелепи Н. И. 7, 74, 120.
Шиллер И. Ф. 97.
Эльгер С. В. 38, 74.
Энгельс Фридрих 54, 106, 137.
Эсхель А. А. 12.
Яковлев И. Я. 8, 10, 17, 36—37, 66, 110, 115, 118.

КĔНЕКЕРЕ ПУРРИ

К. В. Иванов пултарулăхĕн хăшпĕр ыйтăвĕсем тавра 3
К. В. Иванов пурнăçĕпе творчестви 12
Константин Иванов юмахĕсем 27
Кивелле пĕлми произведени 34
Константин Иванов сăввисем 64
Константин Иванов — куçару ăсти 76
Константин Иванован истори тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем пирки пĕр-ик сăмах 98
К. В. Иванов шухăшĕсем пирки калаçнă май 127
Кĕнекере тĕл пулакан ятсем 145

ВАСИЛИЙ АРХИПОВИЧ ДОЛГОВ

ЧУВАШСКИЙ НАРОДНЫЙ ПОЭТ
К. В. ИВАНОВ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1961

Редактор Н. Г. Григорьев. Технический редактор Н. С. Степанов.
Худож. редактор Н. С. Кириллов. Корректор И. Р. Остроумов.

НТ 01842. Сдано в производство 1/XI-1960 г. Подписано к печати 15/III-1961 г.
Объем 7,69 печ. л., уч.-изд. л. 7,113. Формат 84×108/32. Тираж 1000 экз.
Заказ № 1591. Изд. № 121. Цена 49 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
г. Чебоксары, ул Володарского, 5.

1, 50